989
2618

ЯКОВ УХСАЙ



# КĔЛПУК МУЧИ

2632

*Яков Ухсай*

# КĔЛПУК МУЧИ

*Поэма*



ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1958

с (чув)

ПРОВЕРЕНО
2007

2618 чув.

ЧУВ[illegible]СКАЯ
РЕ[illegible]АНСКАЯ
БИБЛИОТ[illegible]КА
им. Горьк[illegible]



*Пĕрремĕш сыпăк*

## АЧА ЧУХНЕ

Пушă уйăх вĕçĕнче
Каç сĕм тĕттĕм пулнă,
Шыв çурхи шырлансенче
Шăнкăр-шăнкăр юхнă.

Хăйчикки чӳречерен
Ылтăн çутă янă.
Ун çути кӳлленчĕкре
Çăлтăр пек вылянă.

Путексем сике-сике
Тăраслатнă майăн
Ернĕ пулнă чĕтренке
Кив хăма урайĕ.

Кăмака таврашĕнче
Шăрчăк та юрланă.
Çав пӳртре сăхман çинче
Пĕр ача çуралнă.

— Мах ан пар пуянсене,
Çĕнĕ кăвакарчăн!—
Тенĕ те кăвапине
Каснă эпи-карчăк.

— Енчĕкре укçу пин-пин
Янрĕ, чунăм, санăн.
Муллă пул!— тесе эпи
Тăпăртăк ташланă.

Чăн сăмахăн суйи çук,
Чи пĕрремĕш ывăл
Пĕчĕкçĕ хура Кĕлпук
Нар пек хĕрлĕ, сывă.

Ашшĕ-амăш телейне
Сыхлама вăл, паллă,
Килнĕ çутă тĕнчене
Кĕпепе, тухъяллă.

Ĕçлеме вăл килĕнче
Пăлатна çуралнă.

Турпалли чавси ҫинче
Ĕҫ палли пек ларнă.

Малтанхи тĕпренчĕкне
Амăш хытă савнă.
«Паппине те пянине»—
Тенĕ вăл, юрланă.

Ытлашши юратнипе
Ним тума аптранă,
Тӳсеймесĕр кисĕппе
Вăл тӳме пултарнă.*

Малтанхи ача паха,—
Ачине ачашшăн
Куҫĕнчен пăха-пăха
Хĕпĕртенĕ ашшĕ.

Юмантан ӳтне-тирне
Тунă евĕр, паттăр,
Ылтăн ывăл ашшĕне
Ĕмĕр савăнтартăр!

Кĕпепе ҫуралнă чун
Ăрăскаллă пулĕ.
Ĕмĕр тăршшĕ юхмĕ ун
Тарăхса куҫҫулĕ.

Амăш ун кăвапине
Ҫав тери типтерлĕ

* Хĕрарăм ытла юратакан ачине килле хурса кисĕппе тӳме пултарĕ, теҫҫĕ *(Халăх сăмахĕ)*.

Типӗтсе ҫӳпҫе тӗпне
Пытарса хӗстернӗ.

Шӗкӗпе ытти инкек
Тивесрен шикленнӗ,
Укҫана чӗркенӗ пек,
Тутӑрпа чӗркенӗ.

Ашшӗ пек маттур, хура,
Ҫӗмӗрт куҫлӑ ывӑл
Кулленхи ачашлӑхра
Ӳснӗ чирсӗр, сывӑ.

Шӑкӑл-шӑкӑл пуплеме
Иккӗре вӗреннӗ,
Урампа чупса иртме
Пулнӑ ун йӗвенӗ.

Вӑл хулла лаша туса
Утланса ҫӳренӗ,
Чупнӑ чух хура тусан
Ҫул ҫинче ҫӗкленӗ.

Пӑхнӑ вӑл ҫынсем ҫине
Тем пек пархатарлӑ,
Ашшӗпе пӗрле ҫиме
Юнтармасӑр ларнӑ.

Тирӗк урлӑ кармашса
Тытнӑ пысӑк кашӑк.

Сикнӗ-тухнӑ тамаша
Килӗнче сасартӑк.

Тыр вырма пĕрре çулла
Вăхăт çитнĕ пулнă,
Халăх аллинче çурла
Кăчăрт-кăчăрт тунă.

Ашшĕ-амăш — иккĕш те—
Пусăра ĕçленĕ.
Пĕчĕкçĕ Кĕлпук хирте
Савăнса çӳренĕ.

Шăрчăксем умра вĕçсе
Юрласа хăпарнă.
Килĕнче хайхи çӳпçе
Пĕр хуралсăр ларнă.

Вăрă кĕнĕ кил-çурта,
Пĕтĕмпе ухтарнă,
Çӳпçене çаратнă та
Тӳнтерсе хăварнă.

Савнă ывăл аллинчен
Ырлăх тарнă майлă,
Ăпăр-тапăр хушшинче
Кăвапа та кайнă.

Ашшĕ-амăш каçхине
Килнĕ те хурланнă.
Ку хыпар чĕрисене
Вут-кăвар хыптарнă.

Ним тума пĕлмен пирки
Арçынни шăп ларнă.

Макăрса кăна инки
Хăй чунне кантарнă.

Çухалсассăн кăвапа
Тем инкек те килĕ.
Юхнă ĕнтĕ çавăнпа
Амăшĕн куççулĕ.

Мур-инкек килессинчен
Хăрамасăр, ывăл
Лăнкăр-лăнкăр сак çинче
Сикнĕ паттăр, сывă.

Сак çинче тăна кĕми
Кушака хӳтернĕ.
Чалăшса пĕр сак хăми
Урайне ӳкернĕ.

Амăшне хăратнă-çке,
Урайне шаплатнă.
— Ак, инкек!— тесе инке
Пĕççине шарт çапнă.

Ăншăрт чирĕ ачине
Ӳкесрен хăранă,
Кив урай хăмисене
Кусарпа такканă.

— Чир-чĕр, кай хурах килне!—
Лач сурса каланă,
Кивĕ ăвăс кăмпине
Тĕтĕре пуçланă.

Ку çитмен, çӳлтен тата
Кĕрĕкпе хупланă,
Урăм-сурăм ăншăрта
Хытă хăваланă.

Сывлама пĕртте паман,
Тĕтĕмпе тултарнă,
Çавăнпа Кĕлпук аран
Антăхса çеç ларнă.

Пулнă тепĕр кун ирпе
Ун çамки миталлă—
Ларнă сурăх куçĕ пек
Кăвакрах пĕр паллă.

Кунсерен пыра-киле
Ун çинчен те маннă.
Çитнĕ кĕр, унтан хĕлле
Сивĕ çил пуçланнă.

Ашшĕ пĕчĕк ывăлне
Ытарми юратнă,
Ярăнма хур йăвине*
Шыв сапса пăрлатнă.

Ылтăн ывăл сăрт çинчен
Аннă çил пек вирлĕ,
Тĕс вылянă питĕнчен
Киккирик пек хĕрлĕ.

* Елĕк хур йăвин тĕпне пăрлатнă та ачасене ярăнмалли туса панă.

Ялěпе килтен-киле
Пуп кěрсе çӳренě,
Раштавра, хаяр хěлле,
Тем те ӳкěтленě.

Вăл «çветуй вода шывне»
Сыхлама калать,
Йӳçě ладан тěтěмне
Килсерен кăларнă.

Кěнě пуп, анчах кунта
Курăнман ниçта та
Ни хайхи çветтуй вода,
Ни иккун хăма та.

Ярханах кăкри çинче
Пěр пилеш пěтевě*
Пулнă пěчěк ачинче,—
Ку инкек пěтерě...

— Эх, тěне кěртместěн-çке,
Шуйттанпа туслашнă!—
Тенě пуп, патша çынни,
Çиленсе тулашнă.

Кěлпука тěне кěртме
Чăркăш пуп калатать,
Астуса тăма, пěлме
Пӳрнипе юнанă.

* Тěне кěмен чăвашсем инкек-синкекрен, чир-чěртен сыхланса майне пилеш татăкě çакнă, ăна пěтев, тенě.

— Ҫăвапи çухалнипе
Тухрĕ арăш-пирĕш,—
Тенĕ савнă ашшĕпе
амăш пупа хирĕç.

Ик хресне те тепĕр кун
Хăнари пек ларнă.
Хресне ашшĕ пĕр саккун,
Пĕр сăлтав кăларнă.

Леш ăнман хаяр пуппа
Ҫалаçасчĕ ырă.
Паллă ĕнтĕ, çавăнпа
Ярăнать-çке пырĕ.

— Сыпсанах, хăюллă-çке,—
Тенĕ çакă ватă.
Сыпнă малтан пĕр черкке,
Ҫаярах тăваттă.

Хайхисем вара каçпа
Тин кайма пултарнă,
Ҫĕлпука çăпатапа
Чиркĕве уттарнă.

Ылтăн ывăл шăннăран
Макăрма та маннă,
Такăнса, аран-аран,
Урампа танкканă.

Чăркăш пуп çарапакка
Тăратса хăварнă,

Сивĕ шывлă касмăка
Кĕлпука чăмтарнă.

Пĕр «Анне!» тесе ача
Кăшкăрма шутланă,
— А!— тесе юлни анчах
Чиркӳре янранă.

Ӳсĕр куçлă пуп пĕрре:
— Раба божий,— тенĕ,
Касмăкран йĕпескере
Уринчен çĕкленĕ.

Хресне ашшĕ мĕскĕне
Чаппанпа чĕркенĕ,
Сивĕре инçе килне
Çĕклесе çитернĕ.

«Раба божий» урине
Тăм илсе пĕтернĕ.
Ывăл хăйĕн амăшне
Паллайми чирленĕ.

Сехрине хăпартнипе
Мĕскĕн амăш йĕрнĕ,
Ачине хур çăвĕпе
Эмелленĕ, сĕрнĕ.

Ашшĕ пăлтăр каштинчен
Метрӳшке антарнă,
Кĕтесри пукан çинче
Тунката пек ларнă.

Ҫирлĕ чей, анчах пĕрре
Вут ҫурма та халĕ
Юлайман кĕрвен ӳтре
Ашшĕн вăйĕ-халĕ.

Сывлаймасть, анчах вĕри,
Пĕчĕкҫĕ чăвашăн
Ҫарăнса тапать чĕри,
Тем пек пурăнасшăн.

Харсăрсен ăратнинче
Ҫак ача ҫуралнă.
Унăн пĕчĕк ӳтĕнче
Пысăк вăй амалнă.

Ун аслашшĕ вăйĕпе
Тем тума пултарнă,
Тавлашсан, сухалĕпе
Пичĕке кустарнă.

Пулнă ҫавă пичĕке
Хĕрĕх пĕр витреллĕ.
Паттăр чунлă старике
Ҫул килмен телейлĕ.

Выҫлăх ҫул нумай хресчен
Пăлхансан,
тискеррĕн
Килнĕ-тулнă уесрен
Салтаксен эшкерĕ.

Çирӗм ик салтакӑнне
Ӗмӗрне вӑл татнӑ.
Туртапа çапса — хӑйне
Çӗпӗре ӑсатнӑ.

Каттӑршнай ӑратнинче
Çак ача çуралнӑ.
Пулмӗ-ши çамки çинче
Аслашшин пек паллӑ?..

Пурӑнсан, чипер ачан
Пулмалла хастарӗ,
Халӑх ӗçӗшӗн анчах
Тертленме пултарӗ.

Ашшӗ-амӑш килӗнче,
Пӗр хӗлхем çимесӗр,
Савнӑ ывӑль умӗнче,
Ларнӑ куç илмесӗр.

Эрнерен Кӗлпук вара
Ик куçне те уçнӑ.
Пӑхнӑ вӑл йӗри-тавра
Пӑшатан пек куçлӑ.

Çав самант килкартине
Ашшӗ сикнӗ-тухнӑ,
Виçӗ сурӑхран пӗрне
Пархатаршӑн пуснӑ.

Кӳршӗрен, ӑратнинчен
Хӑнасем пуçтарнӑ.

Ҫерекен чи варринче
Ылтăн ывăл ларнă.

Пĕтĕм халăх умĕнче
Хурарах кукарлă
Сурăх пуç măйракинчен
Вăл тытма пултарнă.

Вăл çуралнă кунтанпа
Чылай вăхăт иртнĕ.
Чĕринчи хăватлăхпа
Çĕр çула вăл çитнĕ.

Вăл тĕне кĕни çинчен
Этемсем пăртакçă
Шÿтлесе хăй ялĕнче
Ҫаласа параççĕ.

Хăй Ҫĕлпук та, хушăран
Чĕлĕмне туртас-тăк,
Ÿсĕрсе илет паян
Юриех сасартăк.

— Çав хресне атте шăнтни
Ÿпкере кăшт юлнă.
Пулнă вăл, Тукас çынни,
Сыпнă чух хăюллă.

Мĕн вăрçас... Ÿтне тăпри
Хур тĕкки пек виттĕр!—
Тет Ҫĕлпук мучи юри
Ырă кулă витĕр.

Хӑй пӑхать масар енне—
Йывӑҫлӑ масарӗ
Халӗ вирлӗ ҫил чухне
Ӳхӗрсе кашларӗ.

Хӑйӗн йӑх-ӑратнинчи
Этемсем хастарлӑ
Пулнипе Ҫӗлпук мучи
Юмансем ларттарнӑ.

Ашшӗн вил тӑпри паян
Питӗ пысӑк пӳллӗ.
Ун ҫинче ларать юман
Хурчӑка йӑвиллӗ.

Улӑп пек аслашшӗне
Хӑй Ҫӗлпук курман та,
Асӑнче тытать ятне
Халӗ те, паян та.

Ҫӗпӗр ҫӗрӗнче таҫта
Пӗтнӗ кунӗ-ҫулӗ,
Ҫутамас юман унта
Шӑтса тухнӑ пулӗ.

Ҫӗпӗре ӑсатнӑ чух
Хӑй ҫинче ӳсмелӗх
Илнӗ вӑл, хӑватлӑ чун,
Пӗр юман икелӗ.



*Иккĕмĕш сыпăк*

## АСАМЛĂ ÇĔРĔ

Парăн шурлăх хĕрринчи
Хирĕн ансăр çулĕпе
Пĕр пĕччен Кĕлпук мучи
Ерипен утать ирпе.

Аслă улăхри кӳлле
Кантăр хутнă,—
ик эрне
Иртнĕ хыççăн пĕлмелле
Пулнипе пулманнине.

2618



ЧУВАШСКАЯ
РЕСПУБЛИКАНСКАЯ
БИБЛИОТЕКА

Урайне шăлкалама
Çирĕп нăкăт хуллинчен
Шăпăрсем касса çыхма
Ќирлĕ халь кĕркуннеччен.

Хĕвеле çăра турат
Чатăр пек хупланипе
Сывлăш нӳрленсе тăрать
Вăрманта кун тăршшĕпе.

Ќĕмĕл сапнă пек паха
Çуттипе хĕвел хутран
Кĕркелет çатралăха
Хĕсĕнсе аран-аран.

Вăрманта пĕр çухрăм çур
Утсанах, унта иккен
Такăр мар, тумхахлă çул
Юпленсе каять икке.

Вăрăм ĕмĕр тăршшĕнче
Ќу çулпа Ќĕлпук сахал
Çӳремен, анчах тĕнче
Ќу тĕлте ылмашнă халь.

Нумаях пулмасть Ќĕлпук
Ќилнĕ çакă вăрмана,
Аллинчи пурти тук-тук
Янăранă кăшт кăна.

Вăл хăйне хура çĕрле
Хуралсем сисессинчен

Хăраса чĕтренмелле
Йывăç каснă пĕр пĕччен.

Ҫирлĕ пулнă нӳхреппин
Ҫаштине хума юман.
Ун чухне çак çул юппи
Пуррине Ҫĕлпук курман.

Нӳрлĕ çул юпленнинчен
Тĕлĕнсе каять,— унта
Ларнă çул юпписенче
Икĕ шур юпа тата.

Пĕр пукку та халиччен
Тĕшмĕрте пĕлмен Ҫĕлпук
Ҫырнине юпа çинче
Вуласа илет тăрук.

«Ытарми чипер хĕрпе
Туслă пулăн çул çинче».
Пысăк саспаллисемпе
Ҫырнă сылтăм юппинче.

— Ман пек ватă сăрная
Ҫирлĕ имĕш чиперук,—
Ҫаçăхса кая-кая
Ахăрса кулать Ҫĕлпук.

Хĕр тени аван, анчах
Пирĕн ватăлнă мучин
Ҫаччă ĕнтĕ тахçанах
Ҫĕçĕн ывăлĕн ачи.

Астуса илет Кĕлпук
Арăмĕ ăна хăйне
Тахçанах яш каччă чух
Юратса чуптунине.

Вăл чуптунă кунтанпа
Иртнĕ ĕнтĕ хĕрĕх çул.
Хĕр тупма яка çулпа
Каймалли сăлтавĕ çук.

Сиплĕх шывĕ ĕçнипе
Çамрăк ĕмĕр таврăнсан,
Тĕнчери хитре хĕрпе
Çӳрĕ-ши Кĕлпук паян?..

— Хирĕç мар!— тесе хавас
Шухăшларĕ ăшĕнче,
Курчĕ тепĕр çырăва
Сулахай юпа çинче.

«Ку çулпа кайсан, сире
Пулĕ пысăк ăраскал»,—
Тенине пăхма хитре,
Вуласан кĕрет вăй-хал.

Ăрăскал тенин тĕнчи
Мĕнлине курас майпа
Уттарать Кĕлпук мучи
Сулахай енчи çулпа.

Пĕр эрне те ытларах,
Хушăран хăйне вăрçса,

Вăхăт иртрĕ пуль, анчах
Курăнмасть телей куçа.

Çăпати лăстанкăна
Тухса пĕтрĕ те, салтça
Хăварать мучи ăна
Пĕр турат çине çакса.

Шĕшкĕрен касса тытать
Шанчăклă туя алла,
Çаруран вара утать
Малалла та малалла.

Тем пек хытă çиесси
Килнĕ вăрăм çул çинче.
Выççипе Кĕлпук ĕнси
Пулнă путăк та çинçе.

Ĕшенсен, Кĕлпук мучи
Çывăрнă харлаттарса
Хӳтĕ йывăç айĕнчи
Сулхăна кĕрсе выртса.

Танккаса кайсан-кайсан,
Çитнĕ вăл пĕр ирхине
Çӳлĕ пĕлĕтпе пĕр тан
Чăнкă тăвăн хĕррине.

Пысăк шурă чул выртать.
Сарлака чул айĕнчен
Тăрă çăл юхса тухать,
Ялтăрать хĕвел çинче.

Тарават ҫӑл куҫӗнчен
Ӗҫӗр-ха, тутанӑр-ха,—
Тенӗ евӗр шыв ҫинче
Ярӑнса ҫӳрет курка.

Ӗҫсенех Кӗлпук мучин
Шӑнӑрсем тулли хӑват
Кӗркунне калча ҫинчи
Тихалла сиксе вылять.

Хӑй сисмен те, ӑнсӑртран—
Те ырра, те инкеке—
Вӑл курать умра тӑран
Шур сухаллӑ старике.

Шупӑр тӑхӑннӑ этем
Кӗлпука калать ҫапла:
— Йывӑр пурнӑҫлӑ ҫӗртен
Эсӗ килнӗ пулмалла.

— Йӗппе пусӑ алтнӑ пек,
Ӗҫлесен те ӑнӑҫ ҫук.
Вӑрӑм ӗмӗр тӑршшӗпе
Тертленетпӗр,— тет Кӗлпук.

— Юрӗ,— тет йӑваш старик,—
Мӗн тени йӑлт пулӗ сан,
Каласа пӗрре шӗвик
Ҫӗрӗ витӗр шӑхӑрсан.

— Ме!— тесе старик ӑна
Тыттарать ҫӗрре, анчах

Те шыва, те ҫырана
Пытанать хӑй ҫавӑнтах.

Ӗмӗтри телей тӗнчи
Пулӗ халӗ ҫӗр ҫинче!
Ялтраса выртать мучин
Кӗмӗл ҫӗрӗ аллинче.

— Мӗн пулас-ха?— шухӑша
Кайнӑ та Кӗлпук ларать.
Ҫӗр ҫинче пӗрре патша
Пуласси килсе каять.

Кӑххӑм-кӑххӑм кӑхлатса
Тасатать малтан пырне,
Ҫӗрӗ витӗр шӑхӑрса
Янратать вӑрмансене.

Чӑннипех, Кӗлпук мучи
Тинкерсе пӑхать ҫӗре
Ҫуртӑн ҫӳлӗ хутӗнчи
Сарлака чӳречерен.

Ҫухрӑм яхӑн сарлака
Шыв урлах каҫма чипер
Карӑнса выртать яка,
Ылтӑн карлӑклӑ кӗпер.

Хӑмӑр тӗслӗ гранитран
Тунӑ ҫурт-йӗр кармашса
Ларнине йӗри-тавра
Асӑрхать Кӗлпук патша.

Ҫывӑхри тиреклӗхре
Чул ҫыранлӑ кӳлӗ пур.
Ярӑнаҫҫӗ кӳлӗре
Акӑшсем те ушкӑн хур.

Хӑйӗн пӗвӗ ҫийӗнчи
Ытарма та ҫук хитре
Тумтирне Ҫӗлпук мучи
Пӑхкалать ҫутран-ситрен.

Халӗ тумӗ пӗтӗмпе
Ҫутӑ пурҫӑн ун ҫинче.
Умлӑн-хыҫлӑн йӗркипе
Лартнӑ тӳмисем мерчен.

Урайне янратакан
Аттинче Ҫӗлпук патшан
Ҫавракa ҫап-ҫут такан
Чӑн-чӑн хаклӑ ылтӑнтан.

Тӑрӑхла сӗтел ҫинче
Хупкӑҫне яри уҫса
Хунӑ пысӑк арчинче
Ялтраса выртать укҫа.

Ҫилкартне тухать мучи
Хӳхӗм картлӑ пусмапа.
Хатӗрленӗ-ҫке тарҫи
Сиктӗрмеллӗ урапа.

Виҫӗ мӑшӑр мӑнтӑр ут
Ҫукалет килкартинче.

Ҫирпӗнет хӗлхемлӗ вут
Чаклатан такансенчен.

Хӗрлӗ пиҫиххи ҫыхса
Ларнӑ лавҫӑ туртнипе
Явӑнать-ҫке карӑнса
Сарӑ пурҫӑн тилхепе.

Урапа сике-сике
Чул ҫулпа кустарнӑ май,
Ик енче пыраҫҫӗ-ҫке
Салтаксем нумай-нумай.

Йӗнерсем ҫинче пурте
Юплӗ саламатсемпе
Утсене ҫапаҫҫӗ те
Чуптараҫҫӗ сиккипе.

Ылтӑн урапа ҫинче
Питӗ тарӑн шухӑша
Кайнӑ та пырать пӗччен
Чаплӑ ҫын, Ҫӗлпук патша.

Шӑрӑх кун. Хирте суха
Сухалаҫҫӗ хресченсем.
Унталла пӑха-пӑха
Пырасси ытла кичем.

Пӗтӗм халӑхпа пӗрле
Шӑхӑрса ӗҫлесчӗ ун!
Хӑй ҫӗрне, тӑван киле,
Таврӑнма чӗнет-ҫке чун.

— Эй, патша, сыхла пире!—
Теççĕ те чылай хресчен
Чĕркуççи таран хитре
Пуç таяççĕ çул çинче.

Чухăн халăх умĕнче
Кăмăлĕ çемçелнипе,
Ылтăн илчĕ арчинчен
Патша йĕкĕр ывçипе.

Сарлака патшалăхри
Ырă кăмăллă хуçа
Хăварать сапса юри
Сарă сĕлĕ пек укçа.

Улпутсем те çул çине
Тухкалаççĕ те, анчах
Харамсем калаçнине
Итлесси килмест пачах.

Ун пек йĕксĕк умĕнче
Урăм-сурăм тулашса
Çĕлĕкне те пуç çинчен
Хускатмасть Кĕлпук патша.

Пĕчĕк мар патшалăхне
Каллĕ-маллĕ çаврăнсан,
Хăйĕн хўхĕм кил-çуртне
Таврăнма тивет патшан.

Салтаксем тăрса ик рет
Пăхакан яка çулпа

Сиктерсе килне ҫитет
Чаплă ылтăн урапа.

Килĕнчен Кĕлпук патша
Тапранмасть пĕр-икĕ кун,
Тем пек хытă тăрăшса
Хатĕрлет Кĕлпук саккун.

Пур ҫĕре хресченсене
Памалла, тесе хушса
Чи малтан хутсем ҫине
Аллине пусать патша.

Пĕр эрне-и, е ытла
Пурăнать хитре ҫуртра—
Кун пек пурнăҫ ухмахла
Туйăнса каять вара.

Туйăнмасăр! Халь кунта
Кунсерен тăвата хут
Ҫитереҫҫĕ пăчăр та,
Путене те, самăр хур.

Вата ҫыннăн сăн-питне
Хĕретме пулас, ирех
Кухарки сĕтел ҫине
Хăварать нумай эрех.

Ĕҫлемесĕр пуш-пушах
Ларнă хыҫҫăн ҫи те ҫи!..
Ҫавăнпа Кĕлпук патшан
Сарăлса пырать ĕнси.

Патшара ларса кичем
Иртӗ-ши Ҫӗлпук ӗмри?..
Мӑнтӑрланнӑ пӳрнинчен
Тухаймасть хайхи ҫӗрри.

Ҫӗрринчи вӑта пӳрни
Сурнипе, ыратнипе
Вӑл ҫӳрет ларма пӗлми
Вӑрӑм талӑк тӑршшӗпе.

Ҫӗрӗ витӗр пӗр шӗвик
Шӑхӑрсан, каллех хресчен
Пулӗччӗ Ҫӗлпук старик
Хӑй ҫуралнӑ ҫӗр ҫинче.

Сулахай енчи ҫулпа
Ӑмсанса утман пулсан,
Кун пек пысӑк асапа
Тӳсмӗччӗ Ҫӗлпук паян!

Ӗҫлесе аран-аран
Тупнӑ ҫӑкӑр, ылтӑн пек,
Умӗнчи кулачӑран
Тутлӑ та ҫемҫе, сипек.

Кунӗн-ҫӗрӗн какӑрма
Питӗ йывӑр карланка.
Тепӗр хут хресчен пулма
Вӑхӑт ҫитнӗ Ҫӗлпука!

Ирхине, пӗррехинче,
Ҫаллӗ-маллӗ вӑл утать,

Умӗнчи сӗтел ҫинче
Пӑсланать вӗри апат.

Чӗринчи усал ҫилли
Капланса ҫӗкленнипе,
Пичӗ те ури-алли,
Ӳчӗ-тирӗ йӗп-йӗпе.

Урнӑ пек Кӗлпук патша
Акӑш-макӑш ӗрӗхет,
Сӑтӑрса тӑкать аша,
Икерче те эрехе.

Урипе тапа-тапа
Сирпӗтет айккинелле
Тӗрлӗ савӑт-сапапа
Тулнӑ пысӑк сӗтеле.

Ватӑ ҫын юлашкинчен
Ҫӗклесе илет умне
Йывӑр кӗмӗл укҫасен
Кӑшӑл тытнӑ арчине.

Акӑ ӗнтӗ кантӑкран
Вӑркӑтать килкартине.
— Эй-эй-эй!— тесе кайран
Кӑшкӑрать тарҫисене.

Картаран чи-чи ҫерҫи
Тухнӑ евӗр, сехрине
Хӑпартса тарҫи-тӗрҫи
Пухӑнать патша умне.

— Эй, патша, каçар пире,
Ан çилен пура-çука!—
Теççĕ те йĕре-йĕре
Пуç таяççĕ Кĕлпука.

Куç-пуçне асар-писер
Вылятать те малалла
Тӳсейми çиленнĕскер
Кăшкăрса калать çапла:

— Путене ашне ёмме
Эпĕ шăлсăр карчăк-и?
Кирлĕ мар ун пек мемме
Парăр-ха çăмах яшки!

Эпĕ хам пек ерипен
Çинĕ хыççăн, тăрансан,
Пăрлă сивĕ нӳхрепрен
Памалла мана уйран.

Патшара ларса мана
Йăлăхтарчĕ—
малалла
Эпĕ кайăп вăрмана,
Парăр пуртă ман алла!

Эпĕ тепĕр хут кунта
Йыхăрмăп сире, анчах
Пултăр пĕчĕк хуранта
Эп калана пек çăмах!

Ахалех ёнсе хыçса
Лариччен—ăнлантăр-и—

Чикĕр манăн хутаççа
Шăрттанпа ыраш çăкри!

Вĕçсĕр-хĕрсĕр ӳркевре
Ҫăнтăрла та, ир те каç
Ҫывăрса выртма сире
Ҫитĕ ĕнтĕ, юрамасть.

Таврари уй-хирсенче
Вăхăт çитнĕ çумлама.
Ҫăпăк пек аллăрсене
Йывăр пулĕ тарлатма.

Лешĕ, куçкутан текен,
Ҫурăк паллă-и сире?
Ун пек хытă чикекен
Ҫурăк çук-тăр тĕнчере...

— Ан кăтарт пире инкек!—
Терĕ сасă пĕр-пĕччен,
Сикрĕ тухрĕ хĕр-пике
Тарçă-тĕрçĕ хушшинчен.

— Эх, патшам, мана юрат,
Ан кайсам-ха аякка!—
Хĕр тытать те чуптăвать
Пирĕн ватă Ҫĕлпука.

Чуптăвать пĕрре, тепре
Ҫăвак куçлă чиперук.
Ҫак илемлĕ сехетре
Вăранса каять Ҫĕлпук.

Тăлăллă çӳрен лаша
Тунсăхланă хуçине,
Çавăнпа, ăшĕ пăшсан,
Килнĕ-тăнă ун умне.

Курăнмасть нимле пике,—
Чиперук пекки те мар.
Питĕнчен çуллать иккен
Хăйĕн учĕ, янавар.

Улача кĕпи йăли
Шăтăкне вăта пӳрне
Кĕнĕ те Кĕлпук валли
Пулнă çĕрĕ вырăнне.

Пусăри йăран çине
Выртнă та вăл канлĕхре
Патшара хăй ларнине
Курнă вăрăм тĕлĕкре.

Сулхăн çил кĕрет хĕве,
Типĕтет ӳт-тир тарне.
Пырса çитнĕ сар хĕвел
Энтрĕкри апат тĕлне.

Тĕлĕкрен вăтаннипе
Ват Кĕлпук сиксе тăрать,
Лашине пур çиллипе
Васкаса кӳлсе ярать.

Лашине хистес тесе
Шăхăрса илет пĕрре.

Лăнкăр-лăнкăр силленсе
Хыçалта пырать сӳре.

...Кун çинчен, Кĕлпук телей
Тĕлĕкре тупни çинчен
Илтнĕ тусĕ Уртемей
Ĕлĕкех, Октябрьччен.

Қалаçма питех хавас
Уртемейĕ малалла
Хăй те хушнă, сарнă сас
Қилĕрен киле, яла.

Тĕлĕкре Қĕлпук пĕрре
Патшара ларни çинчен
Тĕрлĕрен сăмах çӳрет
Халь те халăх хушшинче.

———



*Виççĕмĕш сыпăк*

## СУХАЛ

Элмикас урамĕнче
Терентейĕн пурччĕ
Шыв çыранĕ хĕрринче
Тайлăк-тайлăк пӳрчĕ.

Шĕтĕрнек тытман çумне,
Нимĕн те. Çараччĕ.
Эп сӳре ачи чухне
Пĕр-пĕччен ларатчĕ.

Юпапа тĕренĕрен
Вăл ларма пултарнă.
Ларнă та хăй сăнĕпе
Сехрене хăпартнă.

Старăста çав пӳрт умне
Халăха пуçтарнă,
Тăрăсăр тăпрас çине
Хăпарса хăй ларнă.

Курăнса тăма унта
Вăл юри хăпарнă,
Халăха юнанă та
Макăртма пултарнă.

Пухусем пулман чухне
Ашкăрса тискеррĕн
Шăтнă çав тăпрас çине
Вĕлтĕрен те эрĕм.

Куланай укçи тата
Тĕрлĕ хырăç-марăç
Сăптăрса пухма кунта
Кантуртан пĕр харăс
Пунеттей çыннисемпе
Тиексем те килнĕ.

Лавĕпе, çĕклемĕпе
Чĕрĕ хулă кирлĕ!..

Куланай хӳрисене
Тӳлесе таттарнӑ,
Тӳлеймен хресченсене
Ҫӗр ҫине вырттарнӑ.

Ҫурнӑ ҫӗтӗк тумтирне,
Вӑтӑрса антарнӑ,
Апӑрша этемсене
Ҫарамас хӑварнӑ.

Чӗрӗ хулӑ вӗҫҫӗпе
Чашкӑртса ислетнӗ,
Мӗскӗн халӑх юнӗпе
Тӑпрана хӗретнӗ.

Теҫетник тени тата
Шутласа кӑларнӑ,
Нӳхрепе пӗр вӑхӑта
Хупнӑ та хӑварнӑ.

— Куланай!— тесе кайран
Ҫурт-йӗре тустарнӑ,
Ҫӳпҫене те хӑварман,
Тӳшеке суттарнӑ.

Питӗрти хаяр патша
Алӑ пуснӑ тӑрӑх,
Темӗн тӗрлӗ тамаша
Тӳссе курнӑ халӑх.

— Савнӑ тус!— тесе инкек
Хресчене каланӑ,

Пĕтĕм ĕмĕр тăршшĕпех
Ĕнсине кăшланă.

А телей тени вара
Аташса çӳренĕ,
Тимĕр витнĕ кантура
Кайнă та иленнĕ.

Халăхăн ĕнси çинчен
Татăлман хĕн-хурĕ.
Кантурти хурансенче
Ишнĕ самăр хурĕ.

Тиексем хур шăмминчен
Перосем тутарнă,
Çырнă шурă хут çинче,
Саккунсем кăларнă.

Куланай пухма саккун
Тухсанах,
типтерлĕ
Халăха хăрушă кун
Тӳлеме чĕнтернĕ.

Хресченсен чĕрисене
Çунтаран хыпарлă
Хут килсен,
тăпрас çине
Старăста хăпарнă.

Элмикас урамĕнчи
Чухăн Терентейĕн

Хăйĕн те ачи-пăчин
Тупăнман телейĕ.

Кĕлĕмçе ерсе пурте
Çулсерен пуçтарнă,
Хĕллеччен хура пӳрте
Хупнă та хăварнă.

Ларнă пӳрт ял хĕрринче
Тĕмеске пек пĕчĕк.
Пулнă пĕр çеç чӳрече,
Вăл та чалăш, çĕрĕк.

Сасă-чĕвсĕр çу хута
Тĕпсакай пек пушă
Ларнă пӳрт,
анчах ялта
Туйăннă хăрушă.

Ун патне чĕнес пулсан,
Пур этем чĕтренĕ,
Лĕпкинчен ури таран
Сăрлатса çӳçеннĕ.

Элмикас урамĕнче
Терентейĕн пӳрчĕ
Курчĕ юн ĕмĕрĕнче,
Куççуле те курчĕ.

Хырăç-марăç тĕлĕшпе
Пуçтарман та, халĕ
Кассипе, урамĕпе
Кĕшĕлтетнĕ халăх.

Старăста суйламалли
Вăхăт килсе çитнĕ.
Пуянсем кунта тулли
Чакăр тумлă килнĕ.

Куланай хӳрисене
Хĕстерсе таттарнă
Вăхăтра куштансене
Чĕнтермен, хăварнă.

Ма чĕнес? Вĕсем пурте
Вăл енчен хӳресĕр,
Пурăнаççĕ ĕмĕрте
Чĕр хулла пĕлмесĕр.

Килнĕ халь, вĕсен ĕнси
Кĕр улми пек тутă,
Пичĕсем кĕсйисенчи
Ылтăн пек çап-çутă.

Аякра йĕри-тавра
Юрлă халăх ларнă,
Пичĕсем асаплăхра
Пăхăр пек хуралнă.

Мĕскĕнсем уй-хирсенче
Ахлатса ĕçленĕ,
Çĕтĕк-çурăк тĕлĕнче
Ӳчĕсем хĕрелнĕ.

Тар юхать, анчах ялан
Пурнăç питĕ йывăр,

Сухапуç те йывăçран,
Тӳмесем те йывăç.

Выçлăхра ёнсе çитсен,
Авăртса сӳслетнĕ
Çӳçесен хупписенчен
Çăкăр та пĕçернĕ.

Хальхинче тăпрас çинче
Самăр страшник ларнă,
Хĕвелпе йăл-ял çиçсе
Хĕçĕ ялтăранă.

Кăн-кăвак пиншак çинчи
Тӳмисем йĕс мар-и,—
Кĕрленай вăрманĕнчи
Сăвăслан пек сарă.

Çывăх ларнă ун çумне
Ял çĕрме пуянĕ,
Кĕмĕл вăчăрисене
Кăкăр урлă янă.

Ларнă çав тăпрас çине
Пĕр арман хуçи те,
Кăчкă çăм шĕлепкине
Çăнăхлатнă питĕ,

— Старăста суйлас!— Эй-эй!
Эй, тухса калаçăр!—
Тенĕ хыççăн Уртемей
Сикнĕ-тăнă харсăр.

Виçĕ аршăнтан ытла
Çӳлĕскер каланă,
Пур этем те курмалла
Аллине сулланă:

— Авалхи йăла ялта
Ваттисемшĕн паллă.
Пулмалла вăл старăста
Кĕреçе сухаллă!

Питĕ ăслă та ĕçчен
Ман Кĕлпук юлташăн
Акрамат сухалĕнче
Путене аташĕ.

Унни пек çăра сухал
Ӳстерсен, пĕр мурĕ
Старăста пулни сахал,
Улпутра та çӳрĕ.

Питĕре пырса тухса
Тем пек тĕлĕнтерĕ,
Патшапа пĕрле тăрса
Хăй сăнне ӳкерĕ.

Кам Кĕлпук çинчен кунта
Урлă-пирлĕ калĕ?
Çитĕ чаплă вырăнта
Ăсĕ те сухалĕ.

Айтăр, Кĕлпука суйлар,
Ырă халăх!— тенĕ.

— Ҫилӗшетпӗр! Хирӗҫ мар!—
Ҫырмара кӗрленӗ.

— Ҫӗлпука!— тени вара,
Пăр хускалнă майлă,
Халăхра янра-янра
Урăм-сурăм кайнă.

— Ҫӗлпука суйлас!— тесе
Пӗчӗк шур вăрманӗ
Халăх сассине илсе
Вăрăммăн янранă.

Самăр страшник ҫынсене
Тарăхса анранă,
Пусарас тесе хӗҫне
Хытă сулкаланă.

— Ҫӗлпукран, тур, хӳтӗле.—
Тенӗ пек хăравҫă
Тăнă пуп.
Унпа пӗрле
Тăнă пур харамҫă.

Аптăранă кăвакал
Ҫутăн чăмнă, тенӗ.
Шиклӗ пуп та ҫакнашкал
Хӗресне ҫӗкленӗ.

Чăрсăр халăха ҫапла
Вăл чарма шутланă,
Анчах халăх малалла
Хытăрах шавланă.

Пуç çинчи картуссене
Харăс вăркăнтарнă.
Пуянсен хăлхисене
Шăхăрса кастарнă.

Халăхра Кĕлпук мучи
Шарламасăр ларнă,
Пăхăрпуç чĕлĕмĕнчи
Тĕтĕме кăларнă.

Уртемей каларĕшле,
Чăннипех, сухалĕ
Пĕтĕм ял тĕлĕнмелле
Вăрăм пулнă халĕ.

Ĕлĕк те имшер ӳсмен,
Чăн та икĕ шитлĕ
Кăтрашка сухал çинчен
Уезда чап çитнĕ.

Кăвапи таран умне
Сухалне кăларнă,
Питĕрех ытлашшине
Хăй хĕвне пытарнă.

Пурнăçри тирпейсĕре
Вăл ялан хурланă,
Хăй тура тытса хитре
Сухалне туранă.

— Кĕлпука суйлас!— тесе
Аслати пек халĕ

Акăш-макăш кĕрлесе
Тăнă пĕтĕм халăх.

— Суçмете!— тесе тата
Кăшкăран сас пулнă,—
Халăхра пута-пута
Илтĕнмесĕр юлнă.

Ёлĕк те старăстана
Ялĕнче суйланă,
Сухала пăхса кăна
Чаплă вырăн панă.

Ватă çын тăватă çын,—
Ăслă ĕнтĕ, паллă.
Пулмалла пичет илнин
Янаххи сухаллă!

Пулмалла сухал иккен
Çăп-çăра, анчах та
Ялĕнче ӳстереймен
Пĕр çĕрме пуян та.

Леш Суçмет текен хуçан
Пысăк шĕпĕн пулнă.
Ун çинче сухал аран
Виçĕ пĕрчĕ тухнă.

Иксĕлми нумай мулпа
Мухтанма пуянăн
Улăхри шарлак шывпа
Аварнă арманĕ.

Çу хута тарçа-тĕрçе
Сухана кăларнă,
Супиччен ĕçлеттерсе
Пӳлмесем тултарнă.

Выльăх-чĕрлĕх картана
Тулнă та — сахал-и?
Старăста пулма кăна
Ашкăрман сухалĕ.

— Пурсăр та старăстана
Суçмете суйларăр.
Малашне эсир ăна
Пăхăнма пуç тайăр!—

Тенĕ страшник хăтăрса
Халăха сасартăк.
Тăнă унăн курăнса
Çаврака кокарда.

— Тĕрĕс мар!— тесе пĕрле
Ушкăн сас сĕрленĕ.
Çырмара кĕрле-кĕрле
Çавă сас çӳренĕ.

Мар!— тесе вăрман çӳлте
Сăрт çинче кашланă,
Ялăн хуп кĕперĕ те
Илтнĕ те шавланă.

Виçĕ аршăнтан ытла
Çӳлĕ Уртемейĕн

Кӳçĕсем апла-капла
Урса кайнă, тейĕн.

Вăл карма çăварсене
Хытă тăхăнтарнă.
Суçмете! текеннине
Çапнă, йăвантарнă.

Старике пĕр мур-калта
Ăнсăртран лектернĕ,
Урипе тăллана та
Тĕшĕрсе ӳкернĕ.

Ырă чунлă çын çине
Иккĕн-виççĕн ларнă,
Пăчăр тĕкĕ пек çӳçне
Шелсĕр тăпăлтарнă.

Уртемейĕн сассине
Илтсенех, сасартăк
Кĕлпук çитнĕ ун патне—
Вăйлă та, хаяр та.

Виç пăта кача пӳрни
Çĕклеме пултарнă.
Кĕлпукран куштан тени
Тĕпĕр-тепĕр тарнă.

Тимĕре те алăпа
Çăмăл авкаланă.
Пăхаттир пек Кĕлпукпа
Тытăçма хăранă.

Уртемей ури çинче
Тайкаланнă, унăн
Çамкипе тăнлавĕнчен
Шĕлпĕр юхнă юнĕ.

Куштансем ун кĕпине
Çурнă та антарнă,
Çăпата кантрисене
Вăтăрса кăларнă.

Уртемей çăпатине
Тытнă та юнанă,
Çиленсе тăпрас çине
Вăркăтса хăварнă.

Ӳкнĕ пысăк çăпата,
Кантрипе çунатлă
Тăсăлса пупа унта
Питĕнчен çатлатнă.

Кĕрлекен пуху енне
Пăхасси килмесĕр,
Хăвăрт утнă вăл килне
Çаруран, кĕпесĕр.

Кĕлпукпа пĕрле вĕсем
Урамра хурланнă,
Çухрăм тăршшĕ мĕлкисем
Ту çине йăванна.

Уртемей хура мĕлки
Ту урлах та каçнă.

Утнă та пуху пирки
Иккĕш те калаçнă.

— Килĕ-ши телей пĕрре
Çĕр çине, тăванăм?—
Уртемей йĕре-йĕре
Кĕлпука каланă.

— Пирĕн кун та пирĕн çул
Тертлĕ, тусăм, тертлĕ,—
Тенĕ вăл, юнне куççуль
Хутшăнса шĕветнĕ.

Унăн юнлă куççульне
Ăшă çил хускатнă,
Лутрарах Кĕлпук çине
Хушăран тумлатнă.



*Тăваттăмĕш сыпăк*

## ХĂЛА ĔНЕ САККУНĔ

*Кĕлпук мучи каласа пани*

Çĕр çăтман çынсем пăртакçă
Юлкаланă ку чухне,
Ķаçăхса кайса мухтаççĕ
Ĕлĕкхи ĕне сĕтне.

Ун пек çын чĕлхи çĕленĕн
Çавранать çăварĕнче,
Ма тесен, хăй шеп çӳренĕ,
Тутлă çинĕ килĕнче.

Пулнă ун яшки хăймаллă,
Çатминче те ишнĕ çу,
Çавăнпа та унăн паллă
Халь те ырă калаçу.

Чăннипе, патша ўстернĕ
Ёлĕкхи хăла ĕне
Чăмласа çисе пĕтернĕ
Саккунсен кĕнекине.

Халăха çара хăварнă,
Хăямат ĕне вара
Урипе çырса кăларнă
Саккунне патшалăхра.

Телее ĕне саккунĕ
Аçтаха пекех çăтсан,
Ырлăхпа хаваслăх кунĕ
Тĕнчене çутăтайман.

Çав саккунăн саламачĕ
Хам çуралнă килĕмрен
Уйăрса мана уттарчĕ
Каторгăна çитиччен.

Урасем таптарĕç манăн
Çухрăмсем нумай, пин-пин.
Пĕлессў килсен, тăванăм,
Каласа парам эппин.

...Ырă саслă Çимĕк кунĕ
Ĕмĕрех чăваш-ĕçчен

Мунчана хаваслă кĕнĕ,
Çапăннă лапка çинче.

Çимĕк курăкпа хыртарнă,
Шăлнă ырнă ӳт-тире.
Ваттисем хушса хăварнă
Авалтан çапла пире.

— Вĕтлĕхре ирпе эп иртрĕм
Çамрăк хурăн туратне,
Улача кĕпе те илтĕм,
Хутăм милĕк хул айне.

Эп улпут пекех телейлĕ,
Қаçăр пуçлă, пĕр пĕччен
Иртсе кайрăм Уртемейĕн
Қилĕ-çурчĕ умĕнчен.

— Пултăр пурнăç пархатарĕ,
Пултăр ку çулта телей!—
Çĕлĕкне хывса каларĕ
Савнă тусăм Уртемей.

— Мунча чулĕ пултăр тутлă,
Çунтăр чĕлĕмре тапак!—
Терĕ тусăм йăш-йăш вутлă
Чĕлĕмне хыпса татах.

— Уртемей, хаваслăх килĕ
Аслă Çимĕк эрнинче!—
Тетĕп эпĕ, мăшăр милĕк
Çавăрап пуç тăрринче.

Çырмара çăра йăмралăх.
Пыл пек тутлă мунчана
Кĕрсенех, ытла та лайăх
Туйăнса каять мана.

Тĕнчене паян çеç курнă,
Тин кăна çуралнă пек,
Сисĕнмест нимле хĕн-хурлăх,
Туйăнмасть инкек-синкек.

Çĕр çинче ĕне саккунĕ
Пуррине, хăрушшине
Мантăм эпĕ Çимĕк кунĕ,
Выртрăм эп лапка çине.

Шыв сапатăп. Чулĕ тутлă.
Мăшăр милĕк аллăмра...
Çурăм тăрăх, пилĕк урлă
Çатлатать вĕри пăсра.

Киленсе канса выртатăп,
Пĕтĕм чунăма уçса,
Эх, çапатăп, эх, шăлатăп
Çурăма, пĕççе-каççа!

Вĕрире ман пуç, мăнтарăн
Анрасан, хутран-ситрен
Куркашарăн-куркашарăн
Сив шывпа ухни хитре.

Çамрăк чух хĕре чуптунă
Самантри пекех, ўтре

Сӑрлатса илет ман юнӑм,
Ҫӳҫенсе тӑрать чӗре.

Хӗр тути пек ҫепӗҫ ҫулҫӑ
Ӗмнӗ пек иртет питре.
Эх, канать-ҫке вата пуҫӑм
Мунчари ӗрехетре!

Питӗрех те канлӗ вырӑн
Тӑрӑхла лапка ҫинче.
Вилесси те, тетӗп, ырӑ
Ешӗл милӗк шӑршинче!

Тукасри Иван Ҫимунӗ
Хытӑ ҫапӑннӑ ҫӗрте
Пӗр сисмесӗр пӗлтӗр вилнӗ—
Вилме хатӗр эпӗ те.

Лӑшт канса выртма аванччӗ.
Сасӑ илтӗнчӗ тулта:
— Хӑвӑрт тух, Мунча Иванччӑ,
Ӑуланай кӗтет кунта!

Старӑста Ҫуҫмет шуйттанӑн
Сассине сисетӗп те,
Хӗл сивви пек ҫиллӗм манӑн
Чӗтренке ертет ӳте.

— Эпӗ халӗ, ҫук, тухмастӑп,
Ӑӗт-ха ҫимӗк иртиччен!—
Тетӗп те ҫаплах выртатӑп
Ӑиленсе лапка ҫинче.

Тух-ха, çитĕ Çимĕк кунĕ,
Парĕç йӳçĕ пыл курки.
Кăпăк мар патша саккунĕ;
Милĕк мар ун патакки.

Пунеттей тăсса пăрахĕ
Çĕр çине,
вара сана
Çапĕ вăл, кантур хурахĕ,
Чĕрĕ хулăпа кăна.

Чĕрӳне витмелĕх парĕç
Ăшшине унта сана.
Ислетни çитмест, антарĕç
Нӳхрепе пĕр-ик куна.

Хĕнесен, çан-çурăм тарлĕ,
Ӳт-тирте суран анчах.
Тутлă мар патша хуттарнă
Юнлă кăпăклă мунча.

Кирлĕ мар саккунлă йĕрĕх,
Кирлĕ мар мана патак!
Хамăн лайăх мăшăр милĕк,
Манăн хам мунча пылак.

Маччана тĕртсе ярас пек
Урапа тĕреленсе
Киленсе выртатăп эпĕ,
Хăмана лекет ĕнсе.

Мунчара мана пĕр ырлăх
Кантарать кантарнăçем.

Пуҫӑм урлӑ, пилӗк тӑрӑх
Ҫатлатаҫҫӗ милӗксем.

Куланай тӳлес хыпарсӑр
Ман выртас килет кунта.
Ӳсӗр те, ҫиллес те харсӑр
Килчӗ-кӗчӗ старӑста.

Алӑка хупмасть. Ҫӑра пӑс
Палкаса тӑрать тулта.
— Хӑвӑрт ан!— тесе пӗр намӑс
Пӗлейми калать тата.

— Ан!— тесе мана мур кайӑк
Ячӗ-тытрӗ пӗҫӗрен.
Тӑпӑл-тапӑл тунӑ майӑн
Чул лекет те пӗҫертет.

Пӗҫерни вара ӳт витӗр
Яшт та яшт кая-кая
Ыратать, татти-сыпписӗр
Хӑпартать ҫиллес вӑя.

— Эс апла эсрел-и!— терӗм,
Патӑм виҫ курка ӑшши.
Вӗрипе тулса кӗрлерӗ
Урайпа мачча хушши.

Мӑшӑр милӗке тытатӑп,
Акӑш-макӑш вӗрире
Хӑлхинчен пӗрре паратӑп,
Ҫамкинчен тата тепре.

Хамăр аслă Çимĕк кунĕ
Ячĕпе хăлха чикки
Тыттарать Кĕлпук саккунĕ,
Тав тăвать Кĕлпук курки.

Унăн тикĕт сĕрнĕ атă,
Тĕрĕленĕ шур кĕпе.
Эп мунча кĕртсе яратăп
Хамăн ырă çиллĕмпе.

— Ой, распуй!— теме пуçларĕ
Хăрăк чунлă старăста.
Кăмăлна санне каймар-и
Ху пуçланă туй кунта?

Тепĕр май сана, çут атă,
Пысăк çыннăм, старăста,
Милĕк тунипе çапма та,
Тыллама та эп ăста.

Кăмака çинчен илетĕп
Хĕрнĕ шурă чулсене,
Питĕнчен ăна перетĕп,
Шăйăратăп тăнлавне.

Ак сана, саккун шуйттанĕ,
Вĕрипе тĕне кĕртем!
Шăмшакку та санăн канĕ
Вĕлтĕренлĕ уй-хирте.

Пуçĕ урлă чашкăртатăп
Пĕр витре вĕри шыва.

Пĕтрĕн эсĕ, çутă ată!
Эпĕ чĕрĕ те сывах...

Мунчаран тухса чăматăп
Сив шыва, унта ансат
Месерле ишсе каятăп
Каллĕ-маллĕ ярăнса.

Хăвасем усса тăраççĕ
Çулçисен шерепине.
Пĕлĕтсем çӳлте шăваççĕ
Эп каяс Çĕпĕр енне.

Йĕпвăрри текен кăпшанкă
Вĕтĕ-вĕтĕ хум унки
Тунине те ĕнтĕ акă
Эпĕ курăп юлашки.

Илтĕнет татти-сыпписĕр
Кăвакал чĕппи сасси.
Питĕ йывăр, питĕ кансĕр
Çĕршывран ăсанасси.

Çиййĕме таса кĕпе-йĕм
Тăхăнсан, урамсенче
Утнăçемĕн, утнăçемĕн
Вăй пĕтет урасенче.

Тепĕр кун тытса тылларĕç,
Сăнчăрларĕç те мана
Пуççилле вара ăсатрĕç
Çĕпĕре, каторгăна.

Асаттем пек манăн пуçăм
Çухалмарĕ, каялла
Эпĕ революци хыççăн
Таврăнтăм тăван яла.

Кӳршĕ-аршăм, хурăнташăм
Хатĕрленĕ кĕреке,
Каттăрăшнай çынна сăйласшăн
Килсерен янрать черкке.

— Ĕлĕк эс, саккун патакĕ
Тӳснĕ паттăр çын!— тесе,
Килсерен автан тукмакĕ
Тыттараççĕ тимлесе,

Пулчĕ пĕтĕм ял хисепĕ
Манăн куçăм умĕнче.
Пур килте те лартăм эпĕ
Тĕпелти пукан çинче.

Пукансем çемçе минтерлĕ,
Хур тĕк-мамăк минтерте.
Тавăсье!— тесе ĕçтернĕ
Вăхăтсем асра халь те.

Унтанпа эп тем те курнă.
Шăвăнать çул хыççăн çул.
Тӳррипе калатăп: пурнăç,
Манăн пурнăç пыл та çу.

Шăпчăк ăшă çумăр çунă
Хыççăн сад-пахчисенче

Ҫĕвĕленĕ пек, ман чунăн
Пур хăйне кура тĕнче.

Тăрă шыв пек ватăлмасăр
Ҫулленхи хавас ĕҫре
Пурăнасшăн эпĕ харсăр.
Паттăр, сывă та хитре.

Ирхине ирех тăратăп,
Савăнса вара, юри,
Хирсенче яри утатăп—
Сухала лекет тырри.

Хир ем-ешĕл, тем сарлакăш.
Вĕҫ-хĕрне тупми ҫӳреп.
Халĕ, юрăра каларăш,
Ват ҫынна пирте хисеп.

Хам ҫуралнă хирĕм тăрăх
Ҫӳреме аван, анчах
Юлчĕ ĕмĕр асăнмалăх
Ҫимĕкри вĕри мунча.

Куртăн пуль, тăванăм, эсĕ
Ав лере — масар ҫинче—
Старăста шуйттан хĕресĕ
Ҫӳлĕрех ыттисенчен.

—



*Пиллӗкмӗш сыпӑк*

## СӐСАР ҪӖЛӖК

Уртемей пичче ҫӳренӗ
Хуп-хура шӗлепкепе,
Пулнӑ ун килте ҫӗленӗ
Икӗ кантӑр пир кӗпе.

Чӗлӗмӗ те пулнӑ унӑн,
Пӑхӑрпа тыттарнӑскер,
Ҫӗрпӳри ӑста ҫын тунӑ,—
Чӑпӑкӗ питех кӗске.

Вӑл малтан кӗске те марччӗ.
Туртмалли пулман чухне
Уртемей пичче туратчӗ
Вӗрене чӑпӑк вӗҫне.

Чӗлӗмне вара чӗртетчӗ,
Сӑвӑратчӗ пӑк та пак.
Ҫӑпата сутса илетчӗ
Хушӑран кӑна тапак.

Ҫиҫӗм пек пӗрре сасартӑк
Сарӑлчӗ хыпар ялта.
(Унсӑрӑн хитре сӑсар та
Пулмӗччӗ нихҫан унта).

Революци пулнӑ, теҫҫӗ,
Сирпӗннӗ иккен патша.
Калаҫса ялта кӗрлеҫҫӗ
Ҫамрӑкки, ватти, вӗт-шак.

Халӑх хыҫҫӑн акӑ ёнтӗ
Пирӗн ватӑ Уртемей,
Ӗмӗрӗ пайтах пулин те,
Шыраса ҫӳрет телей.

Пуртӑ тытнӑ, тытнӑ сенӗк,
Аллинче хӑшин чукмар.
Уртемей те тем ҫӗкленӗ,
Ун алли те пушӑ мар.

Анасен шутне картмалӑх
Аллинче иккен туя.

Пĕлĕт пек хăпса-мĕн халăх
Тухнă халь инçе уя.

Паллă ĕнтĕ, питĕ паллă
Пĕтĕм халăх умĕнчи—
Ҫĕреçе пекех сухаллă
Мишавай, Ҫĕлпук мучи.

Аллинче вылять хăлаçĕ.
Вăл касать улпут çĕрне.
Ҫамрăксем çырса пыраççĕ
Мишавай каланине.

* *
*

Пар лашаллă, питĕ меллĕ
Вăркăнса килет çулпа
Сиктĕрмеллĕ те кӳмеллĕ
Питĕ чаплă урапа.

Пысăк хум пек тимĕр хучĕ
Пĕр сикет те пĕр анать.
Эх, атьсемĕр, çĕр улпучĕ
Ун çинче лара парать!

Пуртă йăтăр! Сенĕк тытăр!
Пăхăр-ха, епле инкек!
Халăхран ыйтмасăр, йытă
Ҫилĕнчен тарать иккен.

Уртемей пырса ал-хапăл
Пар лаша тилхепинчен

Ярса тытрĕ, тăпăр-тапăр
Тытса чарчĕ пĕр пĕччен.

Господин ларать хăюсăр,
Пичĕ пур пекех шап-шур.
Хăть те хĕнĕр, хăть те пусăр,—
Сурăх пек шăпланнă мур.

Нумаях пулмасть, çӳретчĕ,
Хăпартатчĕ сехрене,
Тĕлпулсан, тытса хĕнетчĕ
Пирĕн ял çыннисене.

Уртемей унта кĕрлерĕ
Паранçи пек пулчĕ ал:
— Пиншакна хывсамччĕ,— терĕ,—
Ырă çыннăм генерал!

Генерал:— Тумланăр, мейĕр!—
Тесе хыврĕ пиншакне,
Тăхăнчĕ хăй Уртемейĕн
Çĕтĕк-çатăк сăхманне.

— Лента тытнă шалавар та
Кирлĕччĕ,— тет Уртемей.
Генерал хывать сасартăк,
Нимĕскер те ӳркенмест.

Тăхăнать хăй Уртемейĕн
Кивĕ шăлапир йĕмне.
Ку кĕтӳçĕ пулĕ, тейĕн,
Пăхсанах улпут çине.

Хăраса ытла айванчăк
Ларакан улпутăнне
Уртемей хывса туянчĕ
Сăсар тирлĕ çĕлĕкне.

Уртемей ăна витлерĕ,
Ирĕксĕр тыттарчĕ ал:
— Саману, сан иртнĕ,— терĕ,—
Халĕ эпĕ генерал.

Хресченсем кулса хăватлăн
Шăхăраççĕ ши! те ши!
Пирĕн графăн, генералăн,
Ĕрĕхет пĕр пар лаши.

Хырăмĕ тинех пушантăр!
Самăрччĕ-ха кӳлепи.
Çулсăр-йĕрсĕр шăлтăр-шалтăр
Шăлтăртатрĕ урапи.

Уртемей пиччемĕр пирĕн
Епле чаплă, пăхăр-ха:
Ун çинче улпут тумтирĕ,
Юмахри пекех, паха.

Микулай патша тăванĕ,
Темелле, ăна пăхсан.
Пагонсем епле? Куран-и?
Ылтăнран та укаран.

Шалаварĕ кăшт шалпар та,
Пĕлĕт тĕслĕ, кăн-кăвак,

Çĕлĕкĕ çинчи кокардă
Йăлтăр-ялтăр çунчĕ ак.

Пур çынсем те лăхăл-лахăл
Ăш тытса кулаççĕ-çке:
Пур енчен те генерал вăл,
Чăпăкĕ анчах кĕске.

Пилĕк-ултă орден халĕ
Уртемей кăкри çинче.
Кĕскерех сайра сухалĕ
Килĕшмерĕ хальхинче.

Çăрарах ӳсесчĕ мурĕ,
Ик енче кĕççеленсе,
Кирлĕччĕ тата шит çурă
Хулăмрах ĕнсе!

Аттине хывса илмесĕр
Юлнă Уртемей пичче!
Генерал пулма илемсĕр,—
Çăпата урисенче.

Пилешрен сан чăпăк пултăр,
Уртемей, хăвна кура!
Аллуна тыт çивĕч пуртă,
Пахчара тапак тура!

Ĕмĕрӳ хăватлă пултăр!
Енчĕкне тултар тапак.
Ункă-ункă тĕтĕм тухтăр,
Чĕлĕм çунтăр пăк та пак!

Туянатăн сарă атă,
Ӳстеретĕн мăк сухал,
Тин вара, пичче, пулатăн
Эс те ватă генерал.

Пирĕн халăх урлă-пирлĕ
Уртемей пирки шӳтлет,
Сăмахсем юмах пек юплĕ,
Ахăрса кулас килет.

* *
*

Пирĕн ватă Уртемейĕн
Çак кунтан хайхи каять
Пуçланса тумтир телейĕ,—
Пĕтĕм ял ăна паллать.

Хамăр кӳршĕри ялта та
Калаçаççĕ ун çинчен.
Уртемей туянчĕ атă
Белебей пасарĕнче.

Уртемей таса тытатчĕ
Пиншакпе шалаварне,
Якататчĕ, тăхăнатчĕ
Хăнана каяс чухне.

Мухтанса пырса ларатчĕ
Уявра кĕрекене,
Пуçĕнчен вара хывмастчĕ
Сăсар тирлĕ çĕлĕкне.

Ĕçлесе те, калаççă та
Вăхăт иртрĕ ерипен.
Çĕтĕлчĕ чылай кăçатă,
Çĕтĕлчĕ чылай кĕпе.

Астăвар-ха пĕчĕкçеççĕ
Ĕлĕкхи ачасене,—
Халь вĕсем те сиктереççĕ
Ачисен сăпкисене.

Сайрарах сухалĕ ĕнтĕ
Ӳртемейĕн шап-шурах.
Ĕмĕрĕ пайтах пулин те,
Леш тумтир хитре çаплах.

Килĕре юри тӳтернĕ
Вĕт тапак сапса ăна
Аслă кинĕ пит типтерлĕ
Хунă пулнă арчана.

* *
*

Сисĕнмесĕр вăхăт шунă.
Çул çинчи мулкачă пек
Ăнсăртран çеç сикнĕ-тухнă
Акăш-макăш пĕр инкек.

Пĕр пăрçа ани колхозăн
Пурччĕ шурлăх патĕнче.
Çав ана пулман пулсассăн,—
Пирĕн Уртемей пичче

Çĕлĕкне паян та халĕ
Мухтĕччĕ илемлĕрен,
Кӳршĕ-аршă, пĕтĕм ялĕ
Кулмĕччĕ Уртемейрен.

Тăрнасем çĕрле лараççĕ
Çавăнта пăрçа сăхма.
Колхозра хайхи хушаççĕ
Пиччене хурал тăма.

Пĕлĕтсем хуллен çеç шунă.
Пулнă шутсăр сивĕ кун.
Шăннипе çĕрле ват юнĕ
Пăсăлма пултарнă ун.

Уртемей питех шеллерĕ
Çĕлĕкне, анчах хире
Тăхăнса каяс-ха, терĕ,
Упранас-ха сивĕре...

Çĕрĕпе вăл хăвалана
Çăтă пыр тăрнасене.
Шуçăм килнĕ. Кирлĕ канăç
Ывăннă урисене.

Уртемей мучи, хуралçă,
Путнă тутлă ыйхине.
Пуçĕнчен йытсем хываççĕ
Сăсар тирлĕ çĕлĕкне,

Кутăн-пуçăн тăлпалаççĕ,
Çăлкалаççĕ те çăмне,

Харкашаççĕ, чупкалаççĕ,
Пăрахаççĕ тыр ăшне.

Уртемей хăй ыйха янă,
Ним çинчен те шутламан.
— Мĕншĕн-ха каплах тарланă?—
Шухăшланă, вăрансан.

Тарламан, шăрçаллă сывлăм
Ӳкнĕ ун çамки çине,
Пĕлтĕрхи муртайнă улăм
Леккеленĕ сухалне.

Çĕлĕк çук та, пысăк хуйхă,
Вырăн илчĕ чĕрере.
Уртемей, халь хытă суй-ха,
Кăлтăксем тупса çӳре!

Уткаларĕ каллĕ-маллĕ,
Курчĕ çӳлĕ ту çине
Çĕлĕксĕр вăрăм кевтеллĕ
Выртнă хăйĕн мĕлкине.

Нимĕнле те лăпланмасăр
Тарăхать тăрнасене:
— Пурсăра тытсан, тăраймăр
Манăн çĕлĕкĕн хакне!

Вĕçĕмсĕр ĕмсе паккарĕ
Пăхăр пуçлă чĕлĕмне,
Тарăхса каллех ятларĕ
Çĕрлехи тăрнасене:

— Ҫĕркунне тархасшăн кайăр,
Ан та килĕр каялла!
Пĕҫерсен, чĕн пек какайăр
Яш шăла та ватмалла.

Кĕлпука та вăл тиркерĕ,
Астуса иртнисене:
— Пăрҫана актарчĕ,— терĕ,
Ҫакă шурлăх хĕррине.

Ватăла киле вăл лайăх
Пĕлмелле тăван хирне,
Ку тĕле паян та халăх
«Тăрна шурĕ» тенине.

Хамăн та пур айăп, ахăр:
Ҫуркунне пухусенче
Эх, каласчĕ ман, ухмахăн,
Тăрнасем пурри ҫинчен!

Ватăлсан та, ман ăс карчĕ
Ҫитеймерĕ-ҫке. Эй-эй!..
Калаҫса килне уттарчĕ
Пирĕн ватă Уртемей.

Килĕнче тӳшек-минтерĕ
Шăммине кантармалла.
— Ҫĕлĕкӳ ăҫта-ши?— терĕ
Карчăкки хăратмалла.

— Кĕперпе каҫса иртменччĕ,
Ҫил хускалчĕ вăр кăна,

Ҫӗлӗке пуҫран ӳкерчӗ,
Илчӗ-ҫапрӗ ҫырмана.

Карчӑкӑм, мӗскер тӑватӑн?
Чупрӑм-антӑм шыв хӗрне.
Манӑн, анкӑ-минкӗ ваттӑн,
Вӑй пулать-и ун чухне?..

Ҫапларах суйса паратчӗ
Уртемей чылай вара.
Тыр вырас вӑхӑт пуҫланчӗ,
Кӗр-кӗрлерӗ пусӑра.

* *
*

Каҫ пулса килет. Туртатчӗҫ
Лашасем пит йывӑррӑн.
Путене вӗҫсе хӑпарчӗ
Вӑрттӑн тунӑ йӑваран.

Ӑнсӑртран иккен хӗрарӑм
Тупнӑ унӑн йӑвине.
Ҫӗлӗкре чӑнах та тарӑн
Йӑва тунӑ путене.

Уртемей пичче, мӑнтарӑн,
Хыҫкалать ӗнсе хыҫне.
Ах, епле чӑтма пултарӑн
Сӑсар ҫӗлӗк мӑшкӑлне?..

Карчӑкки хайхи шӑмарчӗ
Ҫаврӑнчӗ мучи енне,

Хыттӑн-хыттӑн ҫутӑлтарчӗ
Виҫӗ хут Уртемейне:

— Ак сана, тет, ҫил хускалчӗ,
Акӑ каҫрӑн кӗпере,
Ҫӗрчӗ, тет, кил-йышӑн ячӗ,
Ҫавӑнпа, тет, ак тепре.

Яланах суя кӗперӗ
Тӑваканччӗ — ӳркенмен.
Пӗр сӑмах та чӗнеймерӗ
Пирӗн ватӑ Уртемей.

---



*Улттăмĕш сыпăк*

## СЕХРЕ ХĂППИ

*Кĕлпук мучи каласа пани*

Кашкăра та эпĕ курнă,
Упана та хушăран.
Хăш çулта йытсем те урнă.
Курнă та асра тытман.

Сар тĕнче патшин çĕленĕ
Çынсене çини çинчен
Эп, ачам, чылай итленĕ
Пĕчĕк чух юмахсенче.

Асаннен яка халапĕ
Юхнă чух сентре çинче
Пашкаса выртаттăм эпĕ
Ăшă кĕрĕк айĕнче.

Чĕрӳне тивмесĕр иртĕç
Юмахсем, анчах мана
Казаксем пĕрре кăтартрĕç
Чăн-чăн ахăр самана.

Халĕ те аса илетĕп,
Аса илнĕ самантра
Хăраса кайса ӳкетĕп
Пăчăр-пăчăр сив тара.

Çур енне хаяр çанталăк
Çемçелсен—
хăратмалла
Çитрĕç ăншăрт пек сасартăк
Шурă казаксем яла.

Лапсăркка çăра уссиллĕ
Йĕксĕксем çине пăхсан,
Тăвăлса килетчĕ çиллĕм,
Ăш-чикре йӳçетчĕ ман.

Халăха хăварнă ĕнтĕ
Казаксем выççа-çука.
Учĕсем вĕсен пурин те
Çăмарта пекех яка.

Казаксем чăнах та урнă,
Умлăн-хыçлăн урама

Кӗрсенех, пуҫланчӗ пурнӑҫ
Хуранти пек ҫаврӑнма.

Килӗнте ҫӳрет автан-и,
Какалать-и шурӑ хур,—
Ҫӗҫӗ вырӑнне нагане
Ҫумӗнче казакӑн пур.

Хӑй кӗртсе парать. Пӗҫерӗр!
Уншӑн хатӗрлӗр тукмак!
Пуҫ чиксе хресчен ҫӳретӗр!
Ҫавӑн пек иккен казак.

Урӑлмасӑр ҫӗрӗн-кунӗн
Хытӑ ӗҫнине кура
Казаксен канать-ҫке чунӗ
Ухмахла алхасура.

Ӗҫсӗр-хӗлсӗр аптӑраҫҫӗ,
Ҫавӑнпа кичем ӑша.
Кантарма ялан тупаҫҫӗ
Темӗнле те тамаша.

Пӗр ҫӗрме пуянӑн пурччӗ
Чаплӑ вӑкӑр ун чухне.
Тӗл пулсан, ҫынна ҫул ҫукчӗ,
Вырт та ҫыпҫӑн ҫӗр ҫумне.

Выртсанах, ҫилли канатчӗ,
Таракан пулсан, ӑна
Хӳтеретчӗ, кӑларатчӗ
Тусанпа тӑпра кӑна.

Вăкăра Хурал Макарĕ,
Чухăн çын, пĕррехинче
Инкеке тĕл пулнă мар-и
Хăйĕн пӳрчĕ умĕнче.

Тарасса тарса пытаннă
Хăй килне, анчах пӳртне
Вăйлă чун тĕртсе силленĕ
Каллĕ-маллĕ пур енне.

Кăпăк пек йӳçсе хăпарнă
Çиллине тӳсменнипе.
Никĕсне ишсе хăварнă
Çĕр çăтман măйракипе.

Казаксем çĕрме пуянăн
Вăкăрне юри пăхма
Витерен кăларнă-янă
Пирĕн аслă урама.

Пĕр казак, ухмах инкекĕ,
Лартса панă ирĕкре
Вăкăра ханша йӳçекĕн
Çĕприне тулли витре.

Лĕрккесе вăкăр тăраннă,
Мĕкĕрсе хайхи вара
Урипе чавма пуçланă
Хытă çул çинчи юра.

Хăй тавра тăман вĕçтернĕ,
Наймака сĕлехине

Юхтарса хаяр хӳтернӗ
Лӗкӗрти казаксене.

Ихӗл-ихӗл, лăкăр-лакăр
Кулакан пӗр казакне
Хӗстерет хăватлă вăкăр
Урамра çатан çумне.

Çӗклесе илет сасартăк
Икӗ майраки çине,
Пăтратать те татăк-татăк
Вăтăрать пыршисене.

Ыттисем сиксе тухаççӗ,
Вăкăра хӗçпе кассах
Ывăтаççӗ те кулаççӗ.
Çавăн пек иккен казак.

Ман патра ун чух тăратчӗ
Вӗсен пупӗ. Яштака.
Пӗр ларсан çисе яратчӗ,
Сахалтан та, çур така.

Ушапуç юпи пек çӳлӗ
Пуп утса çӳренӗ май
Хуçăлса анас пек вирлӗ
Силленетчӗ ман урай.

Каç енне хӗвел пăртакçă
Анайман — пӗррехинче
Шурă хут килсе параççӗ
Казаксен кантурӗнчен.

Ҫакӑ хут конвертлӑ, хупӑ.
Питӗ кирлӗ пулмалла.
Ҫаймалла иккен ҫак пупӑн
Ҫӗҫӗрех инҫе яла.

Пуп ҫуни ҫемҫе кӗҫҫеллӗ,
Шӑнкӑравӗ пӗкӗре,—
Ҫатаччи чупмашкӑн меллӗ,
Хӑнана кайма хитре.

Хушрӗҫ. Эпӗ пултӑм лавҫӑ.
Тем те курӑн леҫмесен.
Ҫӗленсем пек авӑнаҫҫӗ
Ӑтӑр пек хура утсем.

Вӑл ларсан, юлмарӗ вырӑн
Сарлака ҫуна ҫинче.
Шыҫмака ытла та ырӑ
Ӑшӑ кӗрӗк хӳттинче.

Таната пек лӗнчӗр-ленчӗр
Ҫив чаппанӑм ман ҫире.
Ирӗк сивӗ ҫил ун витӗр
Пӗр кӗрет, тухать тепре.

Тутарла хӑлхасӑр ҫӗлӗк
Хуплаймасть хӑлхасене.
Питӗ сивӗ пулнӑ ӗлӗк
Ман пек чухӑн ҫынсене.

Ларкӑч ман сӑран минтерлӗ,
Вӗтӗ явнӑ тилхепе.

Пар лаша чупать илемлĕ,
Ярăнать шыв юхнă пек.

Креслă сывлăш витĕр уйăх
Пăхкалать аран-аран.
Хыçала юлать ял уйĕ.
Малалла каять вăрман.

Вăрманта пĕчченçĕ ӳхĕ
Кăшкăрни тивет мана.
Хăраса кунта чун тухĕ.
Тем кăшлать, чĕрет чуна.

Вăрманти пĕр çутă хушăк.
Çывăрать тĕнче, анчах
Туйăнать мана хăрушă
Вăрăм çĕçĕллĕ хурах.

Эп укçаллă, эпĕ çавă,—
Тенĕ пек янрать хитре
Шăнкăр-шăнкăр шăнкăравĕ
Сăрлă хӳхĕм пĕкĕре.

Самăр пуп выртать, вĕреннĕ
Çывăрма çуна çинче,
Упа тирĕнчен çĕленĕ
Кăпăш тăлăп ăшшинче.

Каялла чакса сасартăк
Хартлатаççĕ лашасем.
Сывламасăр эпĕ лартăм.
Çӳç шăртланчĕ, хĕн килсен.

Ик енчен килсе хуплан̆
Вутпуççи пекех куçсем.
Вилĕм çитрĕ ĕнтĕ ман̆ан:
Пĕр кĕтӳ выç кашк̆арсем.

Ш̆ах̆арса к̆ана ярат̆ап.
Сас каять в̆арманĕпе.
Урт̆анса карт-карт туртат̆ап,—
Тат̆алминччĕ тилхепе!

Шилесе вылять чĕн пуш̆а.
Тапса сикрĕç лашасем.
Манса кайн̆а эп х̆аруш̆а
Иккене те, юн хĕрсен.

Куç уçма памас̆ар хирĕç
Çил шилет х̆алхасенче.
Иртрĕ йыв̆аç хыçç̆ан йыв̆аç.
Ял çĕкленчĕ с̆арт çинче.

Ч̆ар̆анат̆ап. Хуйх̆а тупр̆ам.
Ӳксе юлн̆а ман̆ан пуп.
Пĕр самант пĕр пилĕк çухр̆ам
Эпĕ кайн̆а. Кай та туп!

Çул çинче пĕр хур̆анташ̆ан
Килĕнче лашасене
Çитерсен,
киле каясш̆ан
Чун̆ам çунчĕ ирхине.

Каймалла, анчах та халĕ
Сивĕ тар т̆арать ӳтре,

Тилхепе тытма вӑй-халӑм
Пӗтнӗ пек чӗтрет чӗре.

Каймасан, казак хӗстерӗ,
Йӗксӗк пупшӑн тавӑрма
Пӗр юпа юлми пӗтерӗ
Манӑн килӗм-ҫуртӑма.

Уй-хирте пӗр ушкӑн кашкӑр
Ҫисе янӑ пуп пирки
Курӗҫ хурлӑх, курӗҫ мӑшкӑл
Манӑн виҫӗ савнӑ кин.

Эп тарсан, мана мӗн калӗ
Халӑх ӗмӗр тӑршшӗпе?..
Манӑн ял ҫунса ҫухалӗ
Хӗллехи хаяр ҫилпе.

Хам вилсен те... Эпӗ ватӑ.
Вӑрмана кӗрсе ҫитсен,
Ӗнерхи ҫӗрте куратӑп
Ҫӳҫ те тӑлӑп таткисем.

Кашкӑрсем иккен пӗтернӗ
Казаксен пупне кунта.
Ҫинӗ питӗ те типтерлӗ,
Хӑварман пӗр татӑк та.

Шӑмӑсем. Хӗрес. Юр юнлӑ.
Кашкӑр пулнӑ ҫӗр ҫинче
Мӑшӑр атӑ тӑрса юлнӑ,
Урисем — аттисенче.

Ҫашкӑрсем тулана тӑлӑп
Татӑк-кӗсӗкне — пурне
Лав ҫине пухса хуратӑп,
Юрттаратӑп утсене.

Ҫазаксен эсрел пек штабӗн
Ҫантурне ҫитетӗп те
Тамӑка кӗрес пек эпӗ
Ҫӗтӗм пӗр пуян пӳрте.

Эпӗ йӗркипе калатӑп
Пӗтнӗ пуп ҫинчен тата
Ылтӑн хӗресе паратӑп,
Ҫӑтартатӑп ик атта.

Ҫазаксем сана ӗненӗҫ...
Ӳкӗтлеймӗн калаҫса.
Пушӑпа вӗтсе хӗнерӗҫ,
Хупрӗҫ сивӗ чул лаҫҫа.

Иҫмасса пӗр тӑвӑр хушӑк
Тупӑнмасть тула пӑхма.
Ыратать суранлӑ ҫурӑм.
Ишнӗ шӑммӑм-шаккӑма.

Тем пулать? Ухлатрӗ тупӑ.
Ут таканӗ сассисем.
Ман умра выртаҫҫӗ пупӑн
Ҫӳҫӗсем те аттисем.

Ҫӑнтӑрла иртет-и? Ҫаҫ-и?
Вӑхӑт вӑрӑм туйӑнать.

Хайăрать пĕр çын чул лаçăн
Алăкне, тĕртет, ватать.

— Тух, Кĕлпук! Вилмен-и эсĕ?
Хĕрлисем ялта. Телей!—
Эпĕ тухасса кĕтмесĕр
Килчĕ-кĕчĕ Уртемей.

---



*Ҫ и ч ч ӗ м ӗ ш   с ы п ӑ к*

## ШИНЕЛЛӖ ҪЫН

*Кӗлпук мучи каласа пани*

Кӑрлачри ҫанталӑк, паллӑ,
Кӗрӗк витӗр те сивех.
Пӗлӗт витӗр виҫ хӑлхаллӑ
Ҫаранса пӑхать хӗвел.

Шартлама сивве курман-и?
Ҫайӑк та шӑнса ӳкет.
Чӑйлатать ҫуна тупанӗ,
Шӑлсене ҫӳҫентерет.

Çӳлĕ кĕрт хӳсе тултарнă,
Ланкашкаллă кансĕр çул.
Юр çине пăхсассăн, шарнă
Куçсенчен тухать куççуль.

Пас пулать сывланă сывлăш,
Пăрланать сухал çинче.
Çурăлать чăлт та чалт йывăç
Сивĕ кун хăватĕнче.

Ирхине тӳпе кăвакчĕ,
Тăмана кĕтсе çӳлте
Ярăм-ярăм капланманччĕ
Пĕр пăтранчăк пĕлĕт те.

Çавăнпа кӳлсе лартатăп
Эпĕ çăмăл çунана,
Именмесĕр юрттаратăп
Хамăр çывăх вăрмана.

Пирĕн ял вăрман улпучĕ
Таврашне юпа çинче
Кăнтсанах,
чăн ирĕк пулчĕ
Халăха вăрмансенче.

Вилнĕ пек вăрман ларатчĕ
Шăплăхра, такка-такка
Йывăç тăрăх чупкалатчĕ
Васкаса улатакка.

Пĕчĕк пуртăмпа кассассăн,
Туклатни инçе-инçе,

Ҫаллĕ-маллĕ уҫă саслă
Янтăрать ҫырансенче.

Эпĕ кукăр-макăр хăрăк
Йывăҫ каснă самантра
Пăшалсем пени сасартăк
Ҫĕмсĕртетрĕ сывлăшра.

Сехреметлĕ вăрҫă-харҫă
Ҫĕрлесе тăрсан, ӳтре
Шăнăрсем тăр-тăр тăваҫҫĕ,
Сӳлесе илет чĕре.

Ҫапăҫу тем чухлĕ пулнă
Пирĕн ял таврашĕнче.
Тимĕр те, тăхлан та тулнă
Ҫĕрĕн пур хăлаҫĕнче.

Шуррисем пĕрре тăраҫҫĕ
Темлика хысанинче.
Хĕрлисем, эх-эх, параҫҫĕ
Вĕсене ҫӳл ту ҫинчен!

Ҫапăҫу ҫапла ял урлă
Пынă чух хăранипе
Этемсем хĕн пурнăҫ курнă,
Тарнă-кĕнĕ нӳхрепе.

Паллă ĕнтĕ, эп те кĕнĕ
Нӳхрепе, анчах мана
Макăрса кăларчĕ кинĕм
Урама, тамашана.

Ҫапӑҫу ҫапла кӑварлӑ
Пынӑ чух, хӑруш чухне,
Қартаран-ҫке тухнӑ-тарнӑ
Урама айван ӗне.

Пульӑсем татти-сыпписӗр
Шӑхӑраҫҫӗ ши! те ши!
Қисренсе тӑрать таҫта ҫӗр,
Сисӗнет тӑхлан шӑрши.

Қӳршӗри Ехрем Анттунӗн
Арӑмне куратӑп та,
Хӑраса сикет ман чунӑм
Қӑкӑр тӗпӗнче, шалта.

Вӑл, пӑртак та пуҫ пӗкмесӗр,
Урампа утса пырать,
Пуҫӗнче уйран чӗресӗ
Туй сурпанӗ пек курнать.

— Қалаҫса ларма шутларӑм,—
Терӗ те вара кӳрше
Хӑрама пӗлмен хӗрарӑм
Ерипен каять кӗрсе.

Етресем ҫапса шӑтармӗҫ,
Пуля та тивмест, тесе,
Тӑхӑнма пултарнӑ имӗш
Ҫӑмӑл йывӑҫ чӗресе.

Ним тума та пӗлеймесӗр
Эпӗ тӑтӑм вӑрманта,

Леш камит уйран чĕресĕ
Асăма килет тата.

Кулмалла, анчах хăрушă
Туйăнса каять мана.
Кун пек чух выртасчĕ ăшă
Кăмака çинче кăна!

Виçĕ ывăл çапăçаççĕ
Хĕрлĕ Çар ĕретĕнче.
Килĕмри ĕçсем пыраççĕ
Манăн ват ĕнсе çинче.

Вăйпитти арçынсăр килĕн
Терчĕ те инкекĕ пур:
Кăмака хутма вут кирлĕ,
Вучаха кăвайтă хур!

Вăрманта каллех шăпран шăп.
Илтĕнмест хăрушă сас.
Вут касса пăртак хуратăп.
Васкатас, киле каяс!

Каç пулса килет, хура сăн
Таврара çĕкленнĕ-çке.
Кун çути хĕлле мулкачăн
Хÿрешки пекех кĕске.

Пĕлĕтсем кăвак та анлă
Тÿпере пĕрлешнĕ те
Хуралса килсе капланнă
Капансем пекех çÿлте.

Ĕлĕкрен ăна сăнанă,
Ҫун пекки пулмасть ахаль:
Ӳхĕрсе тăман пуҫланĕ
Ҫутсăр-пуҫсăр та усал.

Тапрансан, вара хăрушă
Тăсăлать тăман пирте,
Тухайми пĕр ĕҫсĕр, пушă
Эрнипе лартать килте.

Выльăха апат памашкăн,
Пӳртĕнчен карта таран
Ҫӳреме пĕр аллă аршăн
Сӳс пăяв вара каран.

Пăява алла тытатăн,
Юр кĕртне ашса-ишсе
Хирĕҫ ҫил ҫинче утатăн
Тăвăл витĕр картише.

Е ҫуран этем, е лавҫă
Аташать ун чух хирте.
Тĕттĕм витĕр курăнмаҫҫĕ
Маяксем те, нимĕн те.

Хулăм пĕлĕтсен чаршавĕ
Ҫарăнсан—пайти сахал.
Хускалать пирте ĕҫ шавĕ,
Тĕркĕшет пĕр харăс ял.

Хăшĕсем касаҫҫĕ вутă,
Шыв кӳреҫҫĕ теприсем.

Пулмалла-çке халăх тутă,
Çунмалла кăмакасем!

Йывăр пĕр эрне апатсăр,
Шывсăр, вутсăр ларасси.
Илтĕнет ялта канмасăр
Пуртăпа витре сасси.

Пур пекех шап-шур пасарнă
Лашана хисте-хисте,
Шăхăрса та васкаварлă
Пытăм эпĕ уй-хирте.

Кĕнчеле арланă евĕр
Çил туртать çемçе юра,
Çĕкленет, татти-сыпписĕр
Ахăрать тавралăхра.

Хартлатса тăрать сасартăк,
Малалла каймасть лаша.
Çул çинче сăр кашкăр мар-тăк,
Пур-тăр урăх тамаша.

Эп çуна çинчен ал-хапăл
Шикленсе анатăп та,
Виçĕ пĕчĕк мăкăль-мăкăль
Курăнса каять малта.

Лашана иккен хăратнă
Чĕрĕ юн шăршиллĕ çул.
Пĕчĕк те анчах хăватлă
Пулса иртнĕ çапăçу.

Ăнсăртран пуçланнă юнлă
Çапăçу кĕрлевĕнче
Виçĕ паттăр тăрса юлнă
Сивĕ юрлă çул çинче.

Мĕн пулса-ши кунта иртнĕ?
Пĕлтĕм эп ăна кайран:
Виçĕ паттăр йĕкĕт килнĕ
Инçетри разведкăран.

Пулнă — Ленин сывă пултăр! —
Тенĕ шухăш чĕрере.
Виççĕшин те хĕрлĕ çăлтăр
Çĕлĕксем çинче хитре.

Ĕмĕрне курса ирттернĕ
Яшсене пăхма пит шел.
Амăш витнĕ пек, пĕркенĕ
Кашнине юрпа шинель.

Тĕнчене тепре пăхасшăн
Хупăнман таса, матур
Куçĕсем çине ачашшăн
Ўкнĕ шурă хăрпăк юр,

Шуррисем хĕçпе туранă
Сывă вырăн юлмиччен.
Куртăм та, куççулĕм манăн
Шăпăртатрĕ куçсенчен.

Ашшĕ-амăшсем кĕтеççĕ
Килессе каçпа, ирпе.

Ачисен вĕçсе илеççĕ
Çӳçĕсем кунта çилпе.

Ӳхĕрет тăман, пытарĕ.
Иртĕ вăхăт. Йĕр юлмасть.
Ашшĕ-амăшĕ мăнтарăн
Кĕтĕ ир те, кĕтĕ каç.

Çуркунне шырланкă тăрăх
Шавласа шывсем иртсен,
Ашкăрса хăпарĕ курăк
Çамрăк шăмă хушшинчен.

«Эх, анне...»—тесе аташнă
Пĕр салтак сасси мана
Илтĕнсе каять ачашшăн,
Ыталать, тытать чуна.

Эх, ачам, суран хăвачĕ
Сан пӳне çĕнтернĕ те,
Хуплас çук аннӳ çуначĕ
Инçетри çеçенхирте.

Эпĕ, виçĕ ывăл ашшĕ,
Парăп пĕтĕм чĕреме,
Ырă çамрăк çыннăм, саншăн
Хатĕр халĕ хам вилме.

— Вилĕмрен çăласчĕ!— тетĕп,
Çил-тăман шăхăрнинче
Ик енне те сирпĕтетĕп
Вут-шанка çуна çинчен.

Вилӗмрен ҫӑлма телейӗм
Ҡилтӗр манӑн умӑма!
Салтака йӑтса тирпейлӗ
Хутӑм эпӗ ҫунама.

Витмелле, анчах та ирӗк
Тумланма ҫитменнипе
Ҫиййӗмре ҫухасӑр кӗрӗк,
Аялта пӗр хут кӗпе.

Тепӗр хут пырса пӑхатӑп
Тепӗр ик салтак ҫине,
Хӑлхана хурса тӑнлатӑп
Ӑнсӑртран сывлассине.

Мӗн тӑвас-ха? Пултӑр канӑҫ
Ҫамрӑк паттӑр ҫынсене!
Икӗ аллӑмпа пӗр харӑс
Туртрӑм эп тилхепене.

Ҫухрӑм-и, ун чухлӗ мар-и
Ҡайсанах, хайхи вара
Сӑлпӑран ура пуҫларӗ
Ҫап-ҫара тавралӑхра.

Ӳхӗрсе тӑрать ҫил-тӑвӑл,
Хупласа илет хире,
Ҡашкӑр пек улать пӗрре вӑл,
Ача пек йӗрет тепре.

Вӑл хӑлха панче ачашшӑн
Пӑшӑл-пӑшӑл калаҫать,

Çул çинчен ataштарасшăн
Чĕрене шари çурать.

Çитрĕ-и хăрушă вилĕм?
Курăнмасть умри лаша.
Нӳхрепри пек ĕнтĕ тĕттĕм,
Сивĕ çил витет ăша.

Çыншăн пурнăç хаклă мар-и?
Пурччĕ пурнăç курасси.
Хăлхана кĕме пуçларĕ
Тинкĕл-тинкĕл чан сасси.

Урăм-сурăм, арăш-пирĕш
Ахăрса тăман тухсан,
Чан çапас йăла пур пирĕн
Ĕлĕкрен те авалтан.

Çул çинче этем мăнтарăн
Янракан сасса илтсен,
Ялалла килме пултарĕ,
Тухĕ вилĕм ункинчен.

Пуяна-и хурлăх лекĕ
Хутнă ăшă пӳртĕнче?
Ман пек чухăна инкекĕ
Çӳретет тăмансенче.

Чун сӳлет, анчах та манăн
Пĕтĕм шанчăк лашара.
Хашкаса ашать мăнтарăн
Чĕркуççи таран юра.

Хӑрӑм пек хура хир тӑрӑх
Утнӑ чух шикленнипе,
Ӑслӑ та чӗлхесӗр выльӑх
Ҫукалет урисемпе.

Хӑрасса пӗрмай хӑратӑп,
Шӑнтасран шикленнипе
Салтака витсе пыратӑп
Хамӑн кӗрӗк аркипе.

Тем пек пысӑк ӑрӑскаллӑ
Вӑрӑм ӗмӗр тупрӑм-ши?
Сисӗнет темрен те паллӑ
Тӗтӗмпе апат шӑрши.

Ҫилчӗ ман телей хыпарӗ
Ырӑ тӗтӗм шӑршинче!
Ӑшӑ пӳртлӗ ял хӑпарӗ
Манӑн куҫӑм умӗнче.

Сӗл пӗрчи пекех сап-сарӑ
Ҫутӑсем, чӗтре-чӗтре,
Мӑчлатса тӑма пуҫларӗҫ
Чиксӗр-хӗрсӗр тӗттӗмре.

Ҫантӑксем таран кӗрт хӳнӗ.
Пӳрт умне юра ашса
Чарӑнсан, тӳсмерӗ чунӗ
Пысӑк тӳсӗмлӗ лашан.

Силленсе сывларӗ тарӑн,
Кӗҫенетчӗ пуль — ҫинчех

Эпӗ хытӑ ыталарӑм
Тарлӑ ӑшӑ мӑйӗнчен.

Хапхана уҫма тӑраттӑм,
Алӑраччӗ ун унки.
Сикрӗ-тухрӗ манӑн арӑм,
Арӑм хыҫҫӑн виҫӗ кин.

— Пӗтрӗ ку,— тесе шутланӑ
Карчӑкпа кинсем килте,
Тӗрлӗ-тӗрлӗ канашланӑ,
Тарӑхнӑ та, йӗрнӗ те.

Лашана чипер ҫитертӗр
Кӗҫӗн сарӑ кин — пурте
Ыттисем йӑтса кӗретпӗр
Ҫамрӑк салтака пӳрте.

Юнӗ тулнӑ, шӑкӑрт шӑннӑ
Мӑшӑр хӑмӑр кӑҫатти.
Сарӑ ҫӳҫлӗ, сарӑ сӑнлӑ
Ҫын иккен. Куратӑп тин.

Мӑйӑх вырӑнне кӑшт мамӑк
Курӑнать тути ҫинче.
Ытларах та йӗкӗт ҫамрӑк,
Ҫитнӗ-ши пӗр вунҫичче....

Шавлӑ вӑййӑн та улахӑн
Хӗрсемпе ҫӳрес чухне
Илнӗ вӑл хастар салтакӑн
Хӗсметне ӗнси ҫине.

Аслă Ленина ăнланнă,
Юрлă халăхшăн тăрса
Хĕрхенмен вăйне, вăл кайнă
Хаяртан хаяр вăрҫа.

Кинĕмсем касса хываҫҫĕ
Шăннă кăҫаттисене,
Нăтăр-нăтăр лутăркаҫҫĕ
Ерипен ал-урине.

Хыпаланчăк чунлă карчăк
Анчĕ тĕттĕм нӳхрепе,
Пĕр эмел туртса кăларчĕ,
Сĕрчĕ сиплĕ хур ҫупе.

Шуррисем касса туранă
Ҫийĕнчи тумне хирте.
Хывсанах, ҫӳҫенчĕк манăн
Йĕп пек тирчĕ ӳт-тирте.

Ун пӳне темле те каснă,
Урлă-пирлĕ, тăрăхла.
Пулмалла-ҫке пирĕн ăслă,
Вилĕмрен хăтармалла.

Ҫирĕм ҫухрăм ял-ял урлă
Тухтăра илсе кайма
Тăрăшас, анчах та хурлăх
Касĕ манăн мăйăма.

Халăха хĕссе ҫитернĕ
Шуррисем мĕнпур ялта.

Ҫӳреме хӳре хĕстернĕ
Халĕ мĕскĕн йытă та.

Ҫул ҫинчи этем пăртакҫă
Килĕшмест пулсан, чунне
Пĕр сăлтавсăр ăсатаҫҫĕ
Ҫăтмаха, леш тĕнчене.

Тухсанах, тăхланĕ лекĕ,
Парĕ вилĕмпе инкек.
Шур калташăн ҫыннăн хакĕ
Ҫерҫирен те йӳн иккен.

— Шуpă йĕтĕн пир кăларăр!—
Терĕ карчăк кинсене.
Иксĕмĕр эпир ҫыхатпăр
Ҫамрăк йĕкĕт пӳ-сине.

Ҫĕр хĕлле вăрăм пулин те,
Шурăмпуҫ хăпариччен
Хăпăнса пулмасть пурин те
Ăнсăр паттăр умĕнчен.

Карчăк ман ытла типтерлĕ
Тӳрлетме пĕлмест, анчах
Чиперех пăхса ӳстернĕ
Чылаях ача-пăча.

Чирлени те пулнă ĕлĕк,
Аманни те хушăран.
Тухтăра каясчĕ — енчĕк
Укҫапа тулса тăман.

Çитерет нуша кулачă,—
Тенĕ пек,
пыра-киле
Ял çинче вĕреннĕ карчăк
Тĕрлĕ-тĕрлĕ эмеле.

Çĕр çăвин кăмпи* те курăк
Пуçтарать вăрмансенче.
Халь пырсан та, эсĕ курăн
Пăлтăрта, кашта çинче.

Кăмăлçах чĕреллĕ карчăк
Салтака самайлатма
Пĕр курка сар пыл кăларчĕ,
Лартрĕ пĕр курка хăйма.

Уçăлмасть салтак çăварĕ.
Хайăрса уçать ăна.
Хĕрхенме капла пултарĕ
Ашшĕ-амăшĕ кăна!

Мешехет пулсан та, карчăк
Пĕчĕк йывăç кашăкпа
Çăварне хуллен юхтарчĕ
Тумламшар сĕткен апат.

Йывăр суранне сĕрмелĕх
Юриех кăмакара
Сиплĕ курăксен эмелĕ
Çемçелет вĕри шывра.

* Вăрманта ӳсекен кăмпа. Ăна ĕлĕк чăвашсем эмел вырăнне шутланă.

Киленчи пек питĕ ырă
Туймалла, тӳрленмелле!
Çавăнпа тӳшеклĕ вырăн
Сарчĕ карчăк тĕпеле.

— Вăрттăн пултăр!— терĕ карчăк,
Пĕр-пĕр йĕксĕк курасран
Кĕтессе чаршав та карчĕ
Урайпа мачча таран.

Ял çине салтак хыпарĕ
Ан кайинччĕ халлĕхе!
Ун çинчен илтме пултарĕ
Вĕчĕлти усал чĕлхе.

Хăраса пĕртте ăш-чикĕм
Вырăнта выртман пирки,
Ирхине эп касрăм-илтĕм
Пĕр хура сăхман татки.

Пĕр шерте вĕçне çыхатăп
Татăка,
яла пĕлме
Пӳрт çине лартма хушатăп
Эпĕ кĕçĕн кинĕме.

Касă чир — вĕри тиф чирĕ
Лекнисен килне-çуртне
Кăтартма çак паллă пирĕн
Пурччĕ çакă çулхине.

Апăрша Кĕлпук мăнтарăн
Ахлатса выртать,— тесе,
Çак сăхман хыпар кăларĕ
Çил çинче вĕлтĕртетсе.

— Вилес пек сывлать пăртакçă...
Эх, ати халех вилмин,—
Çакăн пек хыпар сараççĕ
Манăн виçĕ ăслă кин.

Чăннипех те, тиф хыпарĕ
Хăратать иккен ялта,
Çавăнпа пырса тухмарĕ
Пĕр этем те ман çурта.

Тĕрлĕрен эмел хăвачĕ
Тулнă пĕчĕк пӳртĕме.
Хушăран пырса ларатчĕ
Çывăх тусăм Уртемей.

Чĕптĕм те тапак тавраш
Упранса юлман енне,
Вăл туртатчĕ йăпанасшăн
Йӳçĕ курăк çулçине.

Амăшне чĕнсе виç талăк
Аташать салтак—
ăна
Тăрантать çаплах ман карчăк
Пĕчĕк кашăкпа кăна.

Тĕрлĕ курăксен эмелĕ
Çĕнтерет сурансене,

Кулленех нар пек илемлĕ
Сăн кĕртет салтак питне.

Виçĕ талăкран сасартăк
Çил-тăман шăпланчĕ те,
Карăнать уяр çанталăк
Пĕлĕтре, ялта, хирте.

Выçăхса аптранă кайăк
Ăшă улăм хушшинчен
Вĕçсе тухнă, халĕ лайăх
Сиккелет килкартинче.

Ирхине хĕвел кăварĕ
Сарăлать тавралăхра,
Куççульпе йĕртме пуçларĕ
Кантăксем çинчи пăра.

Ун çути сиксе çӳрерĕ
Манăн пӳртĕмре, шалта.
— Где же я?— пуçне çĕклерĕ
Сак çинче выртан салтак.

Вырăсла сăмах хисепĕ
Çитеймест, анчах ăна
Каласа паратăп эпĕ
Уй-хирти тамашана.

Ман пуклак чĕлхе пăртакçă
Тĕшмĕрте пĕлмен чухне,
Куçăмсем ăна калаççĕ
Тĕрĕсне, чăнтан чăнне.

Хăш çынсен чĕлхи улталĕ
Калаçса, анчах куçра
Курăнать ырри-усалĕ,
Пытарса пулмасть вара.

Сивĕ тарĕ шăрçаланчĕ
Çамкинче, анчах салтак
Каласа пама пултарчĕ
Хăй çинчен мана пăртак.

Вырăс хăй, Хусан таврашĕ,
Çарăмсан таврашĕнчен.
Пур иккен салтакăн ашшĕ,
Шăллĕсем те килĕнче.

— Коммунист-и эсĕ?— тетĕп.
— Коммунист!— тет вăл мана.
Коммунист пулма, сисетĕп,
Çамрăк-ха, ача кăна.

— Çамрăк-и?.. Чăнах та, кайнă
Вунçичче кăна, анчах
Эп паян коммуна майлă
Ӳсекен кервен калча.

Калчана туртса кăлар та,
Лутăрка, кăтарт инкек.
Асатте, ӳсмест нихçан та
Тырăран аçа-кикен.

Тăшмансем мана хĕнеччĕр,
Тытчăр вут çинче мана.

Пулмăп эпĕ лĕнчĕр-ленчĕр,
Пулăп коммунист кăна!

Коммунист тени салтакшăн
Тĕнчере илемлĕ ят,—
Кăварта çунма ку ятшăн,
Кĕлленме, вилме юрать.

Асатте, телей çĕкленĕ,
Тупăн ырлăх, курăн чыс.
Аслăран асли вăл — Ленин—
Чи пĕрремĕш коммунист.

Ленин хушнă пек, хĕрӳллĕ
Коммунист пулса çитме,
Асатте, нумай ăс кирлĕ,
Чăтăм кирлĕ этеме.

Манăн тусăмçăм, салтакăм,
Тата тепĕр эрнерен
Çӳреме пуçлать пăртакăн
Утăм-утăм, ерипен.

Ачипе юратнă ашшĕ
Иккĕш икĕ вырăнтан
Килнĕ пек,
пире ачашшăн
Калаçса ларма аван.

Ӳтĕнче хăватлă сывлăх
Выляса çĕкленнĕ май,
Шăкăл-шăкăл калаçмалăх
Пирĕн чăн сăмах нумай.

Коммунист та коммунизм
Тенисем мĕнли çинчен
Эпĕ пĕлтĕм вырăс тусăм
Каласа кăтартнинчен.

Шухăшсем тăвар пек ларчĕç
Чĕрене, чуна, юна.
Кун пек канăç пурнăç карчĕ
Тăсăлмасть нумай куна.

Çеçкери сада сасартăк
Вирт пушарĕ ĕнтнĕ пек,
Килчĕ пĕр усал хыпар та,
Сикрĕ-тухрĕ пĕр инкек.

Ăш пӳртре пире телейлĕ
Калаçма аванччĕ-çке,
Кантаратчĕ курăк чейĕ—
Питĕ сиплĕ метрӳшке...

Тар тухать татти-сыпписĕр
Çамкаран, тăнлавсенчен.
Иксĕмĕр те пиçиххисĕр,—
Пиçиххи пăта çинче.

Çухана та ирĕк янă,
Кăкăрсем те ярханах.
Карчăк пыл хурса тултарнă
Турилкке çине, анчах

Йĕксĕк юрă урăм-сурăм
Илтĕнсе каять пире,

Чикнĕ пек сип-сивĕ туйăм
Сăрлатса иртет ӳтре.

Пăрлă кантăка вĕретĕп,
Шăтăк турăм эп пăхма,
Шăтăк витĕр тинкеретĕп
Кĕрлĕ-шавлă урама.

Шуррисем иккенĕ паллă,
Килнĕ-тулнă пĕлĕт пек:
Малтисем пурте лашаллă,
Кайрисем йĕлтĕрсемпе.

Салтаксем çинче пурин те
Хуп-хура пустав шинель.
Акăлчан королĕ ĕнтĕ
Çапăçма шыранă мел.

Калтана пăшал тыттарнă,
Панă ăшă тум çине,
Кĕрешме хуса кăларнă
Пире хирĕç вĕсене.

Каппельсем, — тесе калатчĕç
Вĕсене ун чух пирте.
Шăммисем нумай саланчĕç,
Сапаланчĕç уй-хирте.

Халь суха туса иртернĕ
Вăхăтра çĕр айĕнчен
Арăслан сăнне ӳкернĕ
Тӳмесем хутран-ситрен

Хуртсемпе пĕрле тухаççĕ
Хулăм касă хушшине—
Чул çине çынсем çапаççĕ
Акăлчан тӳмисене.

Пăрлă кантăк витĕр эпĕ
Хăраса пăхатăп та,
Салтаксен шутпа хисепĕ
Куранса каймасть ялта.

Салтаксем нумай тиеннĕ
Пысăк тупăсем çине,
Кăпăклă тара ӳкернĕ
Кӳлеври лашасене.

Ывăнсан, вĕсем пăрахĕç
Утсене çулсем çинче,
Çĕнĕрен утсем кăларĕç
Хресченсен витисенчен.

Салтаксем теме те намăс
Вĕсене, харамсене.
Утмалла чухне пĕр харăс
Ларнă тупăсем çине.

Ашшĕсем улпут тавраш,
Ачисем те ирсĕр çав,
Питĕ капăр курăнасшăн
Тăхăннă хура пустав.

Акăлчан королĕ панă
Апата чыха-чыха,

Пĕтерсе лартма шутланă
Пирĕн паттăр халăха.

Çĕтĕк, кивĕ сăр шинеллĕ,
Анчах паттăр Хĕрлĕ Çар
Çитĕ те сире тирпейлĕ—
Сирĕн ĕмĕр вăрăм мар!

— Çитĕ кун!— тесе калатăп,
Шухăшлатăп,
                ун чухне
Васкаса анма хушатăп
Тусăма тĕпсакайне.

Халиччен пăхса усрарăм
Салтака ачаш çуртра.
Пăшăрханчĕ манăн арăм,
Виçĕ кинĕм — шухăшра.

Малалла мĕскер тăвар-ши?—
Канашлатпăр ун çинчен.
Шурă çарăн ирсĕр маршĕ
Янăрать урамсенче.

Пўрт çинче вĕçетчĕ пирĕн
Кив хура сăхман татки.
Шуррисем сана тиф чирĕ
Парĕ халĕ ун пирки...

Ерекен хăрушă чирлĕ
Çынсене кăнтма пĕрре

Пульăсем пăртакçă кирлĕ,
Чикмелле кайран çĕре.

Шуррисем приказ кăларнă:
Пемелле, вĕлермелле!
Çакăн пек хăруш хыпарлă
Пĕр сăмах çитет киле.

Ахалех апла вилеп-и
Шурă йĕксĕк аллинчен...
Татăка антартăм эпĕ
Хамăн пӳрт тăррийĕнчен.

Еплерех майпа-ши манăн
Салтака сыхлас, тесе,
Шухăшра тертленнĕ майăн
Чун сӳлет, кĕçтет ĕнсе.

Кăварти пекех çунать ăш,
Тулашать, хĕртет ӳте.
Çĕрĕк çип пек кайрĕ шухăш,
Сыпăнма пĕлмест пĕртте.

Çитменне тата сасартăк
Çимĕкре юр çунă пек,
Кĕмсĕр-кĕмсĕр турĕ алăк
Такамсем шакканипе.

— Хваттере!— тесе кĕреççĕ
Çĕр çăтманĕ ик салтак.
Яшт та яшт темсем çӳреççĕ
Ăшăм-чиккĕмре, шалта.

Ӑнсӑртран туйра хут купӑс
Шӑтнӑ пек, ним те тума
Хушаймасть имшер пуҫри ӑс
Манӑн аллӑм-урама.

Салтаксем туйми хӑр та хӑр
Ҫывӑрнӑ чухне, ҫӗрле,
Тӑрӑшса канаш тӑватпӑр
Иккӗн арӑмпа пӗрле.

Тӗпсакай сивви ан лектӗр,—
Шӑнтасран, хӑранипе,
Антаратпӑр тӗк тӳшек те
Пӗр минтер, ҫемҫе кӗпе.

Эп апат пирки шутларӑм.
Выҫӑ лармӗ тусӑм ман!
Салтака парать ман арӑм
Сӗт те, ҫӑкӑр та шӑрттан.

Шуррисем татти-сыпписӗр
Килӗмре ларманнипе,
Кулленех ман тус пӗр шиксӗр
Тутанать вӗри шӳрпе.

Шурӑ ҫар килсе капланнӑ
Кунтанпа иртет эрне.
Хӑвасем парка кӑларнӑ
Ҫеп-ҫемҫе кӑчӑкине.

Палӑрать хирте мулкачӑн
Тӑкӑс юр ҫинче йӗрри.

Хуралса пырать пăч-пачăн
Тусемпе сăртсен тăрри.

Йăмрасем çинче хуçалăх
Пуçтарасшăн, çавăнпа
Ҫураксем пухаççĕ халĕ
Урамра çӳппе-çаппа.

Сухана тухма хресченĕн
Шухăшлас, анчах унне
Шурă бандă йĕнерленĕ
Тахçанах лашисене.

Ҫĕр çинчен тĕнче усалĕ
Хăвăртрах тасалĕ-ши?..
Хресчене кĕтет хир халĕ,
Йыхăрать тăпра шăрши.

Ыйхăран шартах, сасартăк
Сикрĕм-тăтăм ирхине.
Ҫисренсе тăрать те алăк
Чĕтретет пĕренене.

Тупăсен кĕрлет хăвачĕ
Сывлăшра, çĕр çумĕпе.
Шурăмпуçĕ карăнатчĕ
Шурă кайăк вĕçнĕ пек.

Хăпăл-хапăл тăхăнатăп
Алайне мĕн лекнине,
Йăпшăнса тухса выртатăп
Ҫилкартне, хапха умне.

Хаплатса ӳкет тем те пӗр,
Ялкӑшать хӑватлӑ вут.
Урамра татти-сыпписӗр
Ёрӗхет салтак та ут.

Пулемет-и, е хутаҫ-и,
Суранланнӑ-и лаша—
Пӑрахаҫҫӗ те тараҫҫӗ
Пур салтакӗ юр ашса.

Ирхине ҫап-ҫутӑ, ӑшӑ.
Ялкӑшса пӑхать хӗвел.
Урамра выртать хӑрушӑ
Курӑнса нумай шинель.

Акӑлчан королӗ панӑ
Хуп-хура тумтирӗпе
Вилнисем юра хупланӑ,
Хӑрӑм ҫумӑр ҫунӑ пек.

Чапсӑр ҫӗрччӗр! Йывӑҫ тупӑк
Пулмӗ пирӗн ҫӗр ҫинче!
Пулемет, пӑшал та тупӑ
Юлнӑ лӑк урамсенче.

Кухньӑна тӗртсе хӑварнӑ
Айккине — йытта ҫиме
Тӑкнӑ питӗ пархатарлӑ
Апата шур юр ҫине.

Кун хӗвеллӗ. Юр пӑртакҫӑ
Ирӗлнӗ урамсемпе.

Салтаксем утса юрлаççĕ
«Духом окрепнем в борьбе.»

— Çĕнтерӳ те сывлăх пулĕ
Сирĕн йывăр çул çинче!—
Тетĕп хам ăшра,— куççулĕм
Шăрçаланчĕ куççенче.

Çĕр çине хăватлă пурнăç
Килессе кĕте-кĕте
Çӳç йăлтах шуралчĕ,— курĕç
Салтаксем пуçри терте.

Эп кун пек саккун курасшăн
Тӳснĕ пысăк инкеке.

Курăр! тенĕ пек ачашшăн
Хыврăм эпĕ çĕлĕке.

Сывалса çитмен суранлă
Çамрăк вырăс тусăмпа
Утрăм эп таçтан та паллă
Курăнса ларан штаба.

Хĕрлĕ çарăн командирĕ
Хулăм хуллă та кĕрнек:
— Ăмăрткайăк сывă!— терĕ,
Иксĕмĕр кĕрсессĕнех.

Эпĕ вилĕмрен хăтарнă
Çыннăм вăрçă хирĕнче
Яланах иккен хастарлă
Пулнă хăйĕн полкĕнче.

Хĕрлĕ Çарăн командирĕ,
Мăйăхне шăла-шăла,
Ĕç çинчен ыйтса тĕпчерĕ
Малалла та малалла.

Вăл вара, çарти культура
Хушнă пек, хытах кăна
Ыталарĕ те чуптурĕ
Вырăс ачипе мана.

Ку куна хăçан эп манăп...
Тухсанах, иккен парад,
Ман умра, Кĕрлен вăрманĕ
Куçнă евĕр, полк тăрать.

Эпĕ чăн-чăн паттăр мар-и...
Эпĕ паттăрри çинчен
Командир нумай каларĕ
Харсăр полкĕ умĕнче.

Ман калас. Чĕлхе мăнтарăн
Çаврăнмасть, пĕлмест йĕрке.
Пуçăм тăрринче сулларăм
Эпĕ кивĕ çĕлĕке.

Салтаксем юратнă халăх
Ячĕпе мана «урра»
Кăшкăрни каять ял тăрăх,
Çĕр çинче те сывлăшра.

Салтаксем пурте пĕр харăс
«Духом окрепнем в борьбе»

Теççĕ те юрра яраççĕ
Пĕтĕм пысăк полкĕпе.

Ку куна пĕрре манан-и...
Куç хупсан, килсе тăрать
Умăма Кĕрлен вăрманĕ
Куçнă пек, хитре парад.

Салтаксем юратнă халăх
Ячĕпе мана «урра»
Кăшкăрни паян та халĕ
Лăпланман пек хăлхара

---



*Саккăрмĕш сыпăк*

## ХĂРУШĂ КАÇ

Вата çыннăн ыйхи çук,
Тени тĕрĕс, ахăр.
Тарăхать кĕçĕр Кĕлпук,
Канăçне тупмасăр.

Аптăрарĕ ĕнтĕ шалт,
Ним тума пĕлмерĕ,
Хапхана вăл шăлт та шалт
Хыттăнах силлерĕ.

— Çывăраççĕ вилнĕ пек
Виçĕ ывăл,— терĕ,
Ак каллех çиленнипе
Хапхана силлерĕ.

Ыйхисен, тет, шуйттансен
Пысăк мĕн хутаçĕ,
Ашшĕ тарăхни çинчен
Пĕтĕмпех манаççĕ.

Урама тухса вара
Сак çине вăл ларчĕ,
Нӳрлĕ уçă сывлăшра
Ăшĕ-чикĕ канчĕ.

Тĕксĕм пĕлĕт хушшинчен
Уйăх та анманччĕ,
Хушка çăлтăр ял çинче
Выляса тăратчĕ.

Ķачака хăйми пекех
Шур тĕтре çăраччĕ,
Ту çине вăл тек-текех
Йывăррăн шăватчĕ.

Çĕр таса. Вĕçмест тусан,
Сывлăш янкăр уçă.
Ķурăнатчĕ аякран
Выртмари вуткуçĕ.

Хуратул пусси енчен
Пыллă çил вĕретчĕ,

Нӑрӑсем ҫерем ҫинче
Пуля пек шилетчӗҫ.

Хӑшпӗр чух, хутран-ситрен,
Пӗр-пӗччен хуралҫӑ
Тимӗрне шакканинчен
Пурччӗ шав пӑртакҫӑ.

Ватӑ тополь айӗнче
Кая юлнӑ каччӑ
Хӑйӗн савнӑ хӗрӗнчен
Уйӑрлса каятчӗ.

Астӑвать Кӗлпук аван,
Паянхи пек паллӑ,
Ватӑ йывӑҫ сыв-сывах,
Хӑйӗнчен те аслӑ.

Ҫакӑ тополь ӗлӗкех
Шавлӑ ӳхӗретчӗ,
Тухрӗ тӗлӗкри пекех
Авалхи ӳкерчӗк.

Ҫакӑнта яш ӗмӗрӗ
Иртсе кайнӑ унӑн,
Арӑмне, ун чух хӗре,
Ҫакӑнта чуптунӑ.

Малтан тепӗр сар хӗрпе,
Чӗкеҫпе ҫӳренӗ:
— Сансӑр пурнӑҫ тӗксӗм пек,
Эсӗ манӑн,— тенӗ.

Иккĕш сарă мăйăрăн
Тĕшшине пайланă.
Урăх каччă вăйăран
Çак хĕре вăрланă.

Хыçĕнчен Кĕлпук пĕччен
Хăваланă мар-и,—
Çапăннă тăнлавĕнчен
Вăр-хурах чукмарĕ.

Тăна кĕнĕ ирхине,
Юнлă пулнă куçĕ.
Чаршав карнă ун чухне
Кĕмĕл шурăмпуçĕ.

Кĕнĕ вată чĕрене
Иртнĕ пурнăç хурчĕ.
— Ăссăр,— терĕ вăл хăйне,
Çавăнтах лач сурчĕ.

Кĕчĕ хăйĕн кĕлетне,
Тупаймарĕ ыйăх.
Кăтартать пĕлĕтсене
Çурăк витĕр уйăх.

Тăхăрвун икке çитсе
Темĕн те пĕр курнă,
Каçнă вăл нумай çулсен
Аслă уйĕ урлă.

Вилĕме кĕте-кĕте
Пысăк тупăк тунă,

Пӳлме ҫине кӗлете
Ҫӑнӑх ярса хунӑ.

Хӑй валли масар ҫинче
Вырӑн паллӑ тунӑ.
Амӑшӗ ҫывӑхӗнче
Ҫывӑрма шут тунӑ.

Чӑннипех те пӗтӗм ял
Пӗлмелле ку вырӑн:
Ун ҫинче ӳстернӗ вӑл
Юриех пӗр хурӑн.

Ярӑм-ярӑм ҫӳҫ пӗрчи
Ӑвакарнӑҫемӗн,
Шухӑшлать Кӗлпук мучи
Пурӑнма кӑна-мӗн.

— Ҫӗр айне кӗрессинчен
Начарри те пур·ши?
Тӑхӑнасчӗ виличчен
Ҫитмӗл аршӑн пурҫӑн.

Сухала шӑла-шӑла
Мускавра утасчӗ,
Хӑрса ӳкнӗ ик шӑла
Ылтӑнран лартасчӗ.

Ватӑ шухӑш йӗркерен
Харӑс сапаланчӗ.
Улӑм витнӗ витере
Вӗркелерӗ анчӑк.

Пăхкалать çурăксенчен,
Унăн çивĕч куçĕ.
Таврара мĕнпур енче
Уйăхлă та уçă.

Курăнать пĕр пысăк лаç—
Уртемейĕн лаçĕ.
Тем инкек унта пулмасть,
Шăрчăксем юрлаççĕ.

Сулахай килкартинче
Чаплă çын, бухгалтер,—
Сăлăплă кĕлетĕнче
Тем те сыхланать-тĕр.

Тем инкекĕ пуррине
Çурăк витĕр курчĕ;
Чăннипех те чĕрене
Çыртрĕ шиклĕх хурчĕ.

Шăвăнчĕç хуллен-хуллен
Мĕлкесем тăваттăн.
Çӳç тăрать-çке вирелле,—
Ну, мĕскер тăватăн?

Караул теме те çук,—
Тытăнкă сас ваттăн.
Хăраса ӳкет Кĕлпук,—
Вăрăсем тăваттăн.

Хурахсен чукмарĕнчен
Тем инкек те килĕ.

Мамăклă тӳшек çинче
Çиттĕрччĕ, тет, вилĕм.

Вилĕм, кил эс каçхине,
Çыврасса кĕтсе тăр.
Нӳр çĕре кĕрес чухне
Пултăрччĕ оркестр.

Вăл çаклатрĕ алăкне,
Хыттăн сăлăпларĕ,
Лекмĕ,— терĕ хăй пуçне
Вăр-хурах чукмарĕ.

Вата çын — тăвата çын,—
Тенĕ пирĕн халăх.
Вăл темле те ăс уççи
Тупĕ сыхланмалăх.

Вăл пĕлет ĕмĕрĕнче
Пур меле те шăпăрт.
Вăл кĕлет пӳлми çинчен
Илчĕ кивĕ шăпăр.

Урипе тапа-тапа
Кисрентернĕ майăн,
Чупкалаççĕ урампа
Кӳршисем нумайăн.

Те ырра, те инкеке
Урнă шăпăр каçĕ—
Ыйхăран сике-сике
Хашкаса чупаççĕ.

Ăссăр туй та çакă туй!—
Теççĕ хĕрипраçĕ,
Урама вĕсем матур
Тăхăнса тухаççĕ.

Ват Кĕлпук вĕре-вĕре
Чарăнма та манчĕ.
Улăм витнĕ витере
Вĕркелерĕ анчăк.

Пухăнать пӳрт умĕнче
Пĕтĕм ял, мĕн пурĕ.
Шурăмпуç вăхăтĕнче
Туй сăри те пур-и?

Виçĕ ывăлĕ пӳртрен—
Сирпĕнсе тухаççĕ,
Кĕлете алăкĕнчен
Шалт та шалт çапаççĕ.

— Часăрах лăплан, атте,
Кан, тĕнче ухмахĕ!—
Кăшкăраççĕ виççĕш те,—
Санăн ăс пурах-и?

Алăкне уçать Кĕлпук,
Силленет сухалĕ:
— Сирĕн, терĕ, ăсăр çук,—
Туй килет-и халĕ?

Эп кăтартăп ак сире,
Кам йӳтенĕ?— терĕ,—

Пăхăр-ха тӳшекěре,
Лапчăннă минтерěр.

Çыврăратăр вилнě пек,
Ыйăх — сирěн тупăк.
Вăратмашкăн пěтěмпе
Қирлě пулě тупă.

Сулахай килкартинче
Қолхозри бухгалтер,
Сăлăплă кěлетěнче
Тем те сыхланать-тěр.

Туй тавраше çавăнта,
Қурăр, тетěп, кайăр.
Çăварсем карма кунта
Қилтěр-и нумайăн?

Ăссăр марччě ěмěрте,
Йӳтеместěп халě,
Ват Кěлпукăн ахальтен
Шуралман сухалě...

Çутăлать. Кěлет çинче
Вěçрě кăвакарчăн.
Инçетре, уй-хирсенче
Тырă кăвакарчě.

Виçě ывăлě килне
Таврăнчěç сасартăк,
Йăлăнаççě ашшěне,—
Вăрçнăшăн каçартăр.

Ҫӗр ҫӑтманӗ вӑрӑсем
Юраттарнӑ уҫӑ,
Алӑк урлӑ сӑлӑпсем
Иккӗшӗ те хуҫӑк.

Икӗ учӗ картара,
Лавӗ тулли тулӑ.
Вӑррисем аран-аран
Тарнӑ аслӑк урлӑ.

— Пӗлсе тӑтӑм витӗрех,—
Ват Кӗлпук мухтанчӗ,—
Ахальтен-и витере
Вӗркелерӗ анчӑк?

---



*Тăххăрмĕш сыпăк*

## КĔЛПУК МУЧИ КАРА-АХМЕТ АГАЙПА КАЛАÇНИ

Хуш бул, Ахмет агай, кунакăм,
Мăнда буласăн бик сирек.*
Пичке тулли сăра пылакăн
Йӳçсе тахçан кĕтет пире.

Çул хыççăн çул хуллен çеç шурĕ.
Йĕпхĕн хураччĕ иксĕмĕр.
Кĕр ӳкнĕ юр пекех чăлт шурă
Çӳçсем пуçа тиерĕмĕр.

---

* Сыв пул, Ахмет пичче, хăнаçăм, кунта пулатăн пит сайра.

Чылай кĕскелчĕ пирĕн утăм,
Ярса пусма çук çур хăлаç.
Анчах пире, юратнă тусăм,
Вилме çапах та юрамасть.

Курасчĕ, асамат кĕперĕ
Ту урлă карăнса ӳксен,
Епле чĕкеç вĕçсе çӳрерĕ,
Епле хумханчĕç тырăсем.

Курас пулать хăмла чечекĕ
Хурамана явăннине,
Ĕçес пулать, çапла чеченĕн
Ларса, хăватлă сăрине.

Кăмăл килсен, Ахмет иптешĕм,
Калаçмасан аван та мар,
Чĕлхе тени çемçе пуплесшĕн,
Пуласшăн уçă та юмарт.

Хăвах пĕлетĕн: пулкаланă,
Çӳренĕ эпĕ ялăрта.
Тутар юррисене юрланă,
Юраткаланă та пăртак.

Ун чух ту хĕрринче сан пӳртчĕ.
Тăм витнĕ. Астăватăн-и?
Вунçиччĕри хĕрӳ сан пурччĕ.
Вăл ман варличчĕ, ман савни.

Питçăмарти шупка, чиперччĕ,
Çурхи каç уйăхĕ пекех.

Ялта Зейнаб тесе чĕнетчĕç.
Эп хунă ячĕ: Айбике.*

Эпир унпа пĕрле йăлт уçă
Каçра çӳренĕ иксĕмĕр.
Мана пăхатчĕ икĕ куçĕ—
Мана пăхатчĕ ик çĕмĕрт.

— Качча мана пыратăн, чунăм!—
Тесе тӳлек çĕмĕртлĕхре
Ыталаса нумай чуптунă
Çеçке пек сирĕн хĕрĕре.

— Тутар тĕнне кĕрсен, тин эсĕ
Пулатăн, тетчĕ, мăшăрăм.
— Чăнах, кĕрес-и те илес-и?—
Тесе шутлаттăм хушăран.

Айван ăспа шутлаттăм эпĕ:
Христос тĕнĕ хисеплĕрех,
Генералсем ялан молебен
Тăваççĕ, теттĕм, чиркӳре.

Патша та хăй икон чуптунă.
Пуппа ирттернĕ-çке венчет.
Мĕскер çурлаллă, чансăр тунă
Кăткă йăви пекех меччет?

Ирех пур кайăксем тараççĕ
Минаретран.** Итлетĕр çын:

* Айбике—уйăх хĕрĕ.
** Минарет — меччет тăрри.

«Алла-экбер» калать азанçă,*
Шĕвĕр сухаллă мĕедзин.*

Шутлаттăм эпĕ килĕшӳсĕр:
Чиркӳ аван. Мункун çитсен,
Эрне хушши татти-сыпписĕр
Кĕрлеççĕ, теттĕмччĕ, чансем.

Хам ĕмĕрте нихçан пĕр пусăм
Пусман чиркӳ картинелле.
Курман-илтмен, юратнă тусăм,
Пĕлместĕп нимĕнле кĕлле.

Ыйха та канăça вĕçтерчĕ
Юратасси çав каччă чух.
Зейнаб хĕрӳ ытла чиперччĕ,
Çуна-çуна тӳсмерĕ чун.

Тутар тĕнне кĕрес те, терĕм,
Пулас çынсем пек măшăрлă.
«Леш тĕнчере» çăтмах кĕперĕ
Мана ан йăттăр! Ан шарла!

Çатма çулам, вута кĕрем-и,—
Кĕллентĕр ӳтĕм, типтĕр юн!
Анчах Зейнаб, Зейнаб илемĕ!
Вăл ман тĕнчем, вăл манăн чун.

Вăрлас та шухăш пурччĕ манăн,
Каларăм хамăн туссене,

* Азанçă — ирхи кĕлĕ такмакне калакан.
** Мĕедзин — мулларан кĕçĕнни.

Анчах вĕсем пурте хăранă,
Мана ятларĕç, илтсенех.

— Лаша вăрри, шуйттан ун ашшĕ,
Туртийĕ, терĕç, пит кĕске.
Яла пĕтерĕ таварасшăн,
Çаратĕ вăл, çиленнĕскер.

Хĕр илесси — начар хут купăс,
Епле туртсан та — каламасть.
Шăлтах аптрарăм эп. Ху туп ăс!
Никам та ним те шарламасть.

Хайхи-майхи кивçен çут атă
Илсе пĕрре тăхăнтăм та
Хăюллăн ялăра утатăп,
Тӳрех кĕретĕп сан пата...

Сан умăнта хайхи ларатăп
Чĕрĕп çинчи пекех аран.
Тĕне кĕрес пирки калатăп,
Хĕрӳ пирки те хушăран.

Пыра-киле: «Нумай-и хулăм?»—
Сăмах уçма çеç ĕлкĕрсен,
Шутларăм: «Тупрăм—терĕм—хурлăх».
Хаяр вылянчĕç куçусем.

— Килтен çухал, киревсĕр гефĕр!*—
Тесе эс тăтăн вырăнтан,—

* Гефĕр — урăх тĕнлĕ çынна тиркесе калани.

Çураç, чăваш, çураç кунта хĕр!—
Тесе тыттартăн хăлхаран.

Кçран вут сирпĕнчĕ. Васкарăм.
Пӳртрен тухас та сирпĕнес!
Шĕвĕр пӳрнӳпеле юнарăн:
— Асту, кăтартăп!— терĕн эс.

Хăвалăх витĕр хăшкăл-хашкăл
Вĕçтертĕм хамăн килĕме.
Қайран, ăçта хĕрне курмашкăн,
Хăратăп ялăра кĕме!

Çапла авал, Ахмет агайăм,
Хуçса пăрахрăн кăмăла.
Тăван хĕрне çунатсăр кайăк
Туса хăварчĕ кив йăла.

Ăстабике* тесе туянчĕ
Хĕрне йӳтенĕ ват мулла,
Зейнаб вара унта ăсанчĕ,
Нумай тертленчĕ пулмалла.

Туй хыççăн укçуна эс сурăн,
Хуса эс кĕтĕн ирхине
Тăват тĕве те çирĕм сурăх,
Çатан тыттарнă килкартне.

Анчах, Ахмет агай, манмарăн,
Этем пӳрленнĕ çăпанне

---

* Ăстабике — муллан кĕçĕн арăмĕ.

Усранă пек, ĕлĕк усрарăн
Мана юнанă вĕççӳне.

Çĕлен пек йăпшăнса сыхларăн,
Йĕрлерĕн утăмран мана.
Пĕрре, выртма кайсан, вăрларăн
Пĕртен-пĕр манăн лашана.

Эрне хушши эпир тăваттăн,
Эпир — тăватă юланут—
Йĕрлерĕмĕр. Анчах эс паттăр,
Вут витĕр тухнă çичĕ ют.

Эпир начаррисем те марччĕ,
Кĕреш пек анлă кăкăрсем.
Эх, сăвăрсем пек шăхăратчĕç
Хăлхасенче хирти çилсем.

Ахмет агайăм, тараймарăн!
Ĕпхӳ патне çитес çĕрте
Çапса ӳкерчĕ ман чукмарăм
Сана сăран йĕнерӳнтен.

Ал-уруна çыхса, чĕп майлă,
Илсе çитертĕмĕр яла.
Ку вăхăта нихçан манаймăн,—
Асна килет пулас ялан.

Çумна çакса янравлă питлĕх,
Урамсенче çӳретрĕмĕр.
Камсем çиллес, камсен вăй çитнĕ,—
Пурте сана хĕнерĕмĕр.

Çамку çинче халь те пĕр паллă,
Пӳрне выртмалăх вырăн пур.
Ăна тивертнĕ манăн ала,
Чулпах çапма та тивнĕ, мур.

Ахмет агай! Ăнна çухатрăн
Ытла тискер хĕненипе.
— Вилех!— тесе сана пăрахрăм
Пăр янă сивĕ нӳхрепе.

Ирех тăрса тухса пăхатăп:
Хайхи нӳхрепĕм пуш-пушах.
Ҫайри пахчаналла пăт-патăн
Юн юхнă йĕр выртать ярах.

Упаленсе чун-халлĕн тарнă,
Йĕррӳ хире тухса каять.
Ӳтӳ сан пулнă, юнлă, тарлă,
Анчах вилмен, эс, хăямат.

Пĕрне-пĕри çĕре чикесшĕн
Епле кăна-ши тăрăшман?
Тĕлĕнмелле, шуйттан илесшĕ,
Пĕр пек çынсем, анчах тăшман.

Пире пĕр пек хавасла турĕ
Саккун хальхи саманара.
Çӳлте, çĕр çийĕнче пĕр тура,
Турри те хамăр алăра.

Халь эп пулсассăн çамрăк каччă,
Мана савсассăн Айбике,—

Авланасси çăмăл пулатчĕ
Çурхи шыв юхăмĕ пекех.

Ун чух, агай, хăвах пыраттăн
Машин çине лартса хĕрне.
Урусене хуçса лараттăн
Ман умăма, кĕççе çине...

Курка йăтар калаçнă майăн,
Ĕçер те тӳнтерер унтан.
Эйде, Ахмет агай, йăрлайăк
Акидĕл буйă турăнда!*

---

* Айта, Ахмет пичче, юрлатпăр
Шуратăл уйăхĕ çинчен.



*Вуннăмĕш сыпăк*

# ПУРНĂÇ

*Кĕлпук мучи каласа пани*

Ирхине. Хĕвел тухманччĕ.
Питĕ шăпччĕ таврара.
Кăвакал вĕçсе хăпарчĕ
Шур тĕтреллĕ çырмаран.

Каччăсем ак таврăнаççĕ
Выртмаран шак-сиккипе.
Кĕрисем шалпарланаççĕ,
Курăнаççĕ хăмпă пек.

Қантарса пыма тытатӑп
Ик алла та хыҫала.
Сарлака хирпе утатӑп
Эп хам тӗллӗн калаҫса.

Ман тавра епле пуян ҫӗр—
Чунтанах юрат ӑна!
Вӑл тумлам та хӗрхенмесӗр
Тӑрантать ҫуллен ҫынна.

Тӑпраран илет чӗр курӑк
Пысӑк пурлӑх хӑй валли.
Тутлӑ пултӑр ҫӗт те турӑх!—
Тӑртӑнать ӗне ҫилли.

Ҫӗр пуян, анчах тата та
Ҫемҫетме юратмалла!
Шухӑша кайса утатӑп
Малалла та малалла.

Эх, телей хальхи этемӗн:
Тӗтӗм тухнӑ чух, ирпе,
Илӗртет урам илемӗ
Тӗрлӗ тутлӑ шӑршипе.

Қӗркунне кашни кил-ҫуртӑн
Шӗл-кӑвар кӑмакинче
Хуплури автан та, хур та
Пӑсланать ҫатми ҫинче.

Иртсе пынӑ чух чӗнеҫҫӗ:
Хапӑл ту-ха, кӗр, кӗрех!

Чаплă хăнасем кĕрлеççĕ
Тĕпелте, кĕрекере.

Акă вăл — уй-хир пуянĕ,
Акă вăл — ăçта тĕнче!
Пĕлĕт пек колхоз капанĕ
Қапланать анкартинче.

Çамрăк чух юман тăпачăм
Сулăнса кӳплетнĕçем,
Қисренсе кăна тăратчĕ
Сарăм айĕнчи итем.

Паттăрла тăрса тăваттăн
Пăт та пат çапнисене
Юрăри пек юрататтăм
Эпĕ ĕлĕк кĕркунне.

Йывăр авăн ыраттарнă
Пилĕке,
анчах ĕçре
Чунсене эпир кантарнă,
Қанлĕ туйăннă пире.

Тарласса нумай тарланă,
Ӳркенмен, анчах пӳлме
Қĕркунне те тулкаланă,
Çуркунне юлман çиме.

Анкарти панчен иртеп-и,
Е тухап-и хирсене,—
Савăнса итлетĕп эпĕ
Машинсем кĕрленине.

Тракторсем, татах та темĕн
Машинсем нумай пирки
Ку чухне ванмасть этемĕн
Ĕçлесе шăмми-шакки.

Çавăнпа та халĕ ĕнтĕ
Пăхăр пирĕн çамрăка:
Яланах ĕçре пулин те,
Çирĕп ӳтлĕ, яштака.

Ялтăрать унта, кунта та
Сивĕ сывлăм ахахла.
Хăмăллă хирпе утатăп
Малалла та малалла.

Ушкăн-ушкăн хур-и ларнă
Çывăхри лапам çине?
Пусăри бригада карнă
Шурă пир чаршавсене.

Çĕр касса ĕçлет бригада—
Кулленех ялтан уя
Çӳресе нумай вăя та
Вăхăта ямасть сая.

Шарласа таса çăлкуçĕ
Юхакан хăвалăхра
Хăпарать халь тĕтĕм уçă
Пĕр кăвак, тепре хура.

Кĕр енне така какайĕ
Юратса пĕçернĕ-ши?

Сывлăшра темрен те лайăх
Сисĕнет шӳрпе шăрши.

Тутлă пиçнĕ хир апачĕ
Ҫарланка анать яка.
Хăмăлсем çинчен хăпарчĕ
Ушкăн мăнтăр кăвакал.

Халăх сарнă шур шăналăк,
Апат-çимĕç ун çине.
Вылянать пурин те кашăк
Тăн-тăн çирĕп аллинче.

— Ачасем, уй-хир кулачĕ
Тутлă пултăр!— тетĕп те:
— Ҫил, килях!— тесе калаççĕ
Ҫамрăк тусăмсем пурте.

— Ларăрах!— тесе пĕр вырăн
Пушатаççĕ тăванла,
Хăнари пек кашăк ыррăн
Тыттараççĕ ман алла.

Пуплеме, утма та çăмăл
Хĕрача парать мана
Вут сыппи пек пысăк шăмă—
Тав-тавах хĕрачана!

Ыр сунса пуçа таятăп.
Ватă эп, анчах шăмма
Ҫалама çук юрататăп
Ҫăшлама, ĕмме, ватма.

Кĕркунне кашта ҫинче чăх
Ларнă пек, ҫăварăмра
Шăлăмсем ман савăнмалăх
Тĕрĕс те тĕкел, ҫăра.

Алăпа тытни культурсăр
Пулмалла, калам чăнне:
Пакăлча какайĕ уссăр,
Тутлă мар тытман чухне.

Алăпа тытса кăшлатăп
Ҫамрăк халăх умĕнче,
Мимине ĕмме вататăп
Шăммине эп чул ҫинче.

Ушкăнпа тата пĕрерĕн
Ҫамрăксем тăрса кайсан,
Ĕҫ ҫинчен ыйтса тĕпчерĕм
Юнашар бригадиртан.

— Юлташсем кĕлте ҫыхаҫҫĕ
Яланах тăкаксăр,— тет.
Ваттăма пула пăртакҫă
Ман чĕрре кĕрес килет.

— Ĕҫлессе эсир ĕҫлетĕр
Тăрăшса, анчах ахаль
Хăмăлсем ҫине лармасть-тĕр
Халĕ ушкăн кăвакал,—

Тетĕп эп, анчах та ҫамрăк
Бригадир ăна-кăна

Тавçăрса илсе сасартăк
Пат татса калать мана:

— Шапасем нумай ĕрченĕ
Пирĕн нӳрлĕ хăмăлта.
Çавсене çиме иленнĕ
Кăвакал ирпе кунта.

Калаçма ăста юлташăм
Сăлтавне тупма пĕлет,
Çавăнпа ăна ачашшăн
Хулĕнчен лăпкас килет.

Шапапа пĕрле пучах та
Пусăра чылай юлнин
Сăлтавне калас, анчах та
Кĕрлеме пуçлать машин.

Пĕрхĕт-кайăкăн çуначĕ
Хăлаçланнă пек, хирте
Кĕреплисене вăй пачĕ,
Çавăрса пырать çӳлте.

Путене йышне хăратнă
Аслати пекех шавра
Ӳхĕрсе машин хăватлă
Тĕпĕнчен вырать тырра.

Ачине хăй амăш ăшшăн
Сăпкари кипке çине
Хунă пек, хурать ачашшăн
Вырнă сарă тыррине.

Қахала персе ҫӳреп-и?
Тӑрӑшса кӗлте ҫыхма
Васкаса тытатӑп эпӗ
Хатӗр ҫыхӑ аллӑма.

Ҫыхсене туса хураҫҫӗ
Ҫирӗп улӑмран пирте,
Муртайми тытса усраҫҫӗ
Яланах шывра, нӳрте.

Ҫыхӑ чӗн пекех тӗреклӗ
Пиҫӗхет, вара унпа
Қӗлтене ҫыхма илемлӗ
Пӗтӗм шӑнӑрти вӑйпа.

Қӗркунне така е сурӑх
Пуснӑ чух эхлетнӗ пек,
Қӗлтене пусатӑп лайӑх
Эпӗ пӗр чӗркуҫҫипе.

Ӗҫлекенӗн юхтӑр тарӗ!
Хытӑ ҫыхнӑ ман кӗлте
Мускава ҫитме пултарӗ,
Ванмӗ те, саланмӗ те.

Чир те тӗрлӗ урӑм-сурӑм
Шӑмӑран, ӳтрен-тиртен
Тарнӑ пек, канать ҫан-ҫурӑм
Сулхӑн сывлӑшлӑ хирте.

Ӗҫӗн пысӑк-ҫке телейӗ!
Қӗлтесем йӑта-йӑта

Ҫамака пекех тирпейлĕ
Ҫупалатăп сурата.

Вăйлă ҫил е касă ҫумăр
Тивесрен ҫара уйра
Манăн вату алă ҫăмăл—
Упрама пĕлет тырра.

Халăхпа ӳстернĕ тыррăн
Перекечĕ пулмалла,
Тăкака каймасăр ыррăн
Ҫĕмелле ĕҫчен алла!

Ҫинĕ ҫăкăртан тĕпренчĕк
Ҫĕсъере тăрса юлсан,
Ваттисем пĕрре те ĕлĕк
Пăрахма, тăкма хушман.

Пĕчĕкрен ҫынна ĕретлĕ
Пурăнма, перекете
Ваттисем ҫапла вĕрентнĕ
Ҫул ҫинче, хирте, килте.

Ҫумăнта вакки-тĕвекĕ
Янрасан, укҫасенчен
Пухăнать хуллен пĕр тенкĕ
Питĕ енчĕк тĕпĕнче.

Ваккине шыва вăр та вăр
Ывăтса ҫӳрен ача
Ĕмĕр юлĕ пархатарсăр,
Ашшĕне инкек анчах.

Çăкăртан хăвна ху пысăк*
Курăнни сиенлине
Астума кашни мухтанчăк
Çырмалла çамки çине.

Халăх тарĕпе ĕçченĕ,
Уйăхпа хĕвел çути
Тырпула кĕрсе пĕрлешнĕ,
Пур унта тăпра тути.

Хамăршăн ÿссе хунанă
Ырлăха юратмалла.
Çакă шухăшпа, тăванăм,
Чĕлĕ кас та тыт алла!

Вутпуççи пулать, пукра-и,
Е мăян-и, е пиçен—
Тасататăп пынă майăн
Эпĕ тырă хушшинчен.

Вată çын канма та тивĕç,
Тейĕç çамрăксем, анчах
Чĕрене чĕнет вĕри ĕç
Пĕчĕкрен, ачаранах.

Тăккаланчăк тырă-пулă
Юлнине пăхса тăма,
Мĕн тесен те, намăс пулĕ
Манăн вата чунăма.

* Çăкăртан пысăк ан пул (халăх сăмахĕ).

Ĕç тени типтерлĕ пултăр!
Сĕтĕрсе çӳремелле
Хамăн хыççăн кăтăр-кăтăр
Йывăç шăллă кĕрепле.

Хăнари пекех-çке вăхăт
Сисĕнми иртет кунта.
Палăрма пуçларĕç хăвăрт
Çăлтăрсем те, уйăх та.

Кунĕпе ĕçленĕ хыççăн
Лайăх ыйхă уй-хирте,
Ĕçнĕ шыв пек, питĕ уççăн
Капланса кĕрет ӳте.

Аяла хăях хуратăп,
Ăшă кĕрĕк — çиеле.
Йĕп шырас пекех пăхатăп
Тинкерсе тӳпенелле.

Хам анне сăпка сиктернĕ,
Хам çӳренĕ çĕр çинчен
Эх, епле кăвак, типтерлĕ
Курăнать мана тĕнче!

Пуç çинчи хуркайăк çулĕ
Сĕт çырми пек тăсăлса
Ĕмĕр-ĕмĕр тăрса юлĕ
Эпĕ курнă пек таса.

Ман тата нумай пăхасчĕ
Çутă çăлтăрсем çине,

Çакă çĕр çинче утасчĕ,
Çĕр çултан та малашне.

Çакăн пек шутлана майăн,
Çӳлелле пăха-пăха,
Хам сисмен те, эпĕ лайăх
Путнă тутлă ыйăха.

Хĕрлĕ çутă ярăм-ярăм
Мал енче хĕреличчен
Вăранса тăма шутларăм
Курăк вырăнăм çинчен.

Чĕрере хавaслă кăмăл
Хытă тапнине пула,
Туй каччи пек çăмăл-çăмăл
Уттаратăп эп яла.

Телефон пралукĕ карнă
Юпасем нумай — ирпе
Калаçас килет хастарлăн
Ялсемпе, хуласемпе.

Мĕн тесен те, эпĕ курнă
Вăрăм ĕмĕр тĕнчере.
Мускавпа ман хир-хир урлă
Калаçас килет пĕрре.

Çĕр çинче нумай та харсăр
Пурăнас килни çинчен
Каласа парасчĕ хамăр
Ял Советĕн çуртĕнчен.

Шăкăл-шăкăл çеç хам тĕллĕн
Ҫалаçса ута-ута,
Ҫитрĕм эп витре сассиллĕ,
Сĕт шăршиллĕ хам çурта.

Ҫилкартне кĕрсе çитмерĕм—
Чăннипе те курăр-ха—
Тыттарать чи кĕçĕн кинĕм
Ăшă сĕт тулли курка.

Ёçнĕ хыççăн туйрăм эпĕ
Ырă сĕтĕн сĕткенне,
Юратса карланкă тĕпĕ
Ҫав тери киленнине.

Пурăнас!— тесе каларăм
Ăшăмра, вара юри
Ҫĕлете пăхма уçатăп
Йывăр алăка яри.

Йăпанмалăх пĕр ĕç тупăп,—
Тетĕп хам.
Ăна-кăна
Чухличчен кивелнĕ тупăк
Ҫурăнса каять мана.

Хуçине хăçан пулин те
Сивĕ, тĕттĕм леш тĕнче
Илессе вăл кĕтнĕ ĕнтĕ
Хĕрĕх çул пӳлме çинче.

Эпĕ хам чутланă киммĕм
Ишеймен масаралла,
Хуçайман хăрушă вилĕм
Манăн ăмăрлă алла.

Пушă вырăн пархатарлă
Пулмĕ, тенĕ,
çавăнпа
Кинĕмсем ăна тултарнă
Кĕрпепе е çăнăхпа.

Манăн киммĕм шултăркана,
Çитменне, ката-ката
Шăшисем çуллен кăшланă,
Пулнă шĕкĕ те унта.

Çăнăхне хырса пушатрăм,
Алăпа шакка-шакка,
Килкартне йăтса кăлартăм
Хамăн ватă тупăка.

Тупăкăн вилес хисепĕ
Çитрĕ çакă ирхине.
Сăвăртса кăлартăм эпĕ
Тутăхнă пăтисене.

Каскаларăм, саваларăм,
Ӳркенмерĕм чутлама,
Тупăкран касса кăлартăм
Эпĕ çĕн тăват хăма.

Селĕм-селĕм, майлă-майлă
Маташса ларсан анчах

Пулчĕ манăн икĕ пайлă
Пĕчĕкçĕ хитре арча.

Старике кура хуçалăх
Пуçтарма, типтерлеме
Арчана пăхса савмалăх
Илсе кĕтĕм пӳлĕме.

Пĕр пайне хуратăп эптĕр,
Йĕппе çип тата тем-тем.
Хăмăтпа сӳсмен, тем те пĕр
Юсама кирлех вĕсем.

Тапакпа йĕс пуçлă чĕлĕм
Пулĕ тепĕр пайĕнче.
Чĕлĕме илеймĕ вилĕм,
Сӳнтереймĕ леш тĕнче.

Арчара çапла йĕркелĕх
Тунă хыççăн уçălма,
Чĕлĕме пĕрре ĕммелĕх
Тухрăм эпĕ урама.

Хĕвелтен куçа хупласшăн
Тытрăм алă лаппине,
Кĕвĕçсе тата ачашшăн
Пăхрăм çӳлĕ сăрт çине.

Курăнать манран та ватă
Кутамас патвар юман.
Ун тавра тăрать бригада—
Çамрăк йывăçлă вăрман.

Ватă чун, анчах тăрать вăл
Ӑантăрла та, ир те каç,
Ӑнсăртран хаяр çил-тăвăл
Ахăрсан та, авăнмасть.

Çакă юманпа пĕр харăс
Урăм-сурăм тавлашса
Ӑашласа тĕнче вăйпа ăс
Патăр çакă чăваша!

Хам тавра хура вăрманăн
Ӑĕрлесе хитре тăма
Ывăлсем чылайăн манăн
Ачисем вĕсен нумай.



*Вунпӗрмӗш сыпӑк*

## ТУЙРА

Сарӑ вырӑсла хапхаллӑ,
Ҫӳлӗ никӗслӗ пӳрте
Килнӗ капӑр тумлӑ халӑх—
Ҫамрӑкки, ватти — пурте.

Ушкӑн-ушкӑн, алла-аллӑн
Каччӑсем, хӗрсем пӳртре
Ташлани таҫтан та паллӑ,
Тӑпӑр-тӑпӑртӑк, хитре.

Бригадир туйне типтерлĕ
Хатĕрленнĕ, çавăнпа
Ялсене ирех пĕлтернĕ
Шăнкăрти телефонпа.

Этемсем тулта тăраççĕ
Кантăк умĕнче пăхса,
Тӳсеймен енне яраççĕ
Тăпăр-тăпăр ташласа.

Шăпăрçă Кĕлпук юлташăн
Ӳтĕнче иртет чикен.
Кăмăлне вăл пусарасшăн
Кăн-кăвак пуçне чикет.

Хăйĕн савнă, хăйĕн ырă
Бригадирĕн туйĕнче
Панă Кĕлпука пĕр вырăн
Çаврака пукан çинче.

Хытă мар, çемçе минтерлĕ
Айĕнчи çавра пукан.
Лармалла,
анчах та канлĕ
Туйăнмарĕ Кĕлпука.

Пĕр хĕрелчĕ, пĕр шуралчĕ,
Ларчĕ пĕр самант хушши.
Чакнă-ши старик хăвачĕ,
Шăпăрĕ кивелнĕ-ши?

Ĕлĕк те туйра пулатчĕ,
Унăн умĕнче хĕрсе

Ӳшкӑнпа ташлатчӗ каччӑ,
Авӑнатчӗҫ сар хӗрсем.

Шӑпӑрне васкав та лайӑх
Ҫаласа янтратнӑ май,
Ҫӗмсӗр-кӗмсӗр ташӑ майӑн
Силленетчӗ хыр урай.

Вӑл ура тапса калатчӗ,
Вӑйӗ пысӑк пулнӑран
Сӑрлатса кӑна ларатчӗ
Умӗнчи сӗтел-пукан.

Унӑн ячӗ чаплӑ мар-и?
Питӗ чаплӑ пулнӑран
Итлеме пӗрре Ашмарин
Ӗлӗк килнӗ Хусантан.

Николай Иванч профессор
Мухтани килет асне,
Шурӑ тупӑка вырӑнмасӑр
Ҫухатас килмест чапне.

Ун ҫине никам тухманччӗ.
Ак паян, анчах та халь
Вӗчӗхтерчӗ, тарӑхтарчӗ
Тӗпелте ларан рояль.

Ватӑ ҫын ҫилли килмен-и,
Халӗ намӑс куртӑр-и?
Шӑпӑрне вӑл хатӗрленӗ
Бригадир туйне юри.

Чĕлĕхсем туса вăл хунă
Шурлăхри хăмăшсенчен,
Питĕ селĕм какăр тунă
Вăкăрăн мăйракинчен.

Хур çупе сĕрсе çемçетнĕ
Хытнă шăпăр хăмпине.
Ĕмĕт пулнă.
Кайăп,— тенĕ,—
Бригадир тăван туйне.

Çĕнĕ туй пулать культурлă
Тенине малтан илтсен,
Кун пек намăс, кун пек хурлăх
Курасса Кĕлпук сисмен.

— Ăс кĕмен пек, лĕкĕрти пек
Ларас мар-ха харкашса.
Рояле пӳлем-ха эпĕ
Питĕ хытă тавлашса!

Тавлашам!— тесе каларĕ
Ăшĕнче Кĕлпук, вара
Çухăртса тăма пуçларĕ
Уçă саслă шăпăра.

Акă ташă хыççăн ташă—
Тăпăр-тăпăр-тăпăртăк!
Шăпăрне Кĕлпук каласшăн
Хытăрах тата пăртак.

Ҫурӑлса каяс пек питӗ
Акӑш-макӑш вӗрнипе
Хӗрелет старикӗн пичӗ
Пӗрлӗхен сапакӗ пек.

Ҫамрӑк та питех хитре хӗр
Ҫинҫешке пӳрнисене
Васкатса калать кӗр те кӗр
Аслати пек рояльне.

Пӑхӑр ӗнтӗ, курӑр ӗнтӗ—
Харӑс ячӗҫ те ташша,
Каччӑсен пырать пурин те
Ҫӳҫӗ-пуҫӗ варкӑшса.

Авалтан пырать чӑвашӑн
Пӗр хӑйне кура йӑла:
Туя чӗннӗ ҫамрӑк каччӑн
Саламачӗ пулмалла.

Лӑпчӑнса пӗрре лараҫҫӗ,
Ялт сикеҫҫӗ тепринче,—
Атӑ кунчине ҫапаҫҫӗ
Саламатӑн вӗҫӗпе.

Саламачӗсем ҫӗкленнӗ,
Маччана леке-леке
Кӑткӑ йӑвинчи ҫӗленӗн
Авӑнса ирteҫҫӗ-ҫке.

— Эх, аван!— тесе каласшӑн
Ват Кӗлпук,
                анчах та халь

Шăпăрне чарса тăмашкăн
Май памасть ăна рояль.

Ҫолхозра тăват бригада,
Ҫолхозра нумай инке—
Хăшĕ çамрăк, хăшĕ ватă—
Такмаклаççĕ пĕр пекех:

«Пултăр ырă, пултăр сывă,
Паттăр пултăр кинĕмĕр!
Ҫичĕ ĕмĕт, пилĕк ывăл
Унтан эпир кĕтĕпĕр.

Иккĕш—икĕ ăмăрткайăк—
Икĕ летчик пулĕç те
Лайăхран тата та лайăх
Вĕçĕç пĕлĕтре, çӳлте.

Тата иккĕш питĕ кирлĕ
Ҫӳретме карапсене,
Тинĕс çийĕн урлă-пирлĕ
Пăхса тухчăр тĕнчене.

Тăванла тăрса тĕлме-тĕл
Ҫалаçма тесе вара
Кĕçĕнни çеç председатель
Пулĕ хамăр хушăра.

Ҫакăн пек пулсан, аванччĕ,
Ватăлмасăр каç та ир
Ҫӳрĕччĕ Мĕтри Иванччă,
Пирĕн аслă бригадир.»

Ҫӗн хӑна Кирил Иванччӑ
Хӑйӗн шӑллӗ туйӗнче
Ташласа пӗрре парсанччӗ...—
Тет Кӗлпук хӑй ӑшӗнче.

Шӑпӑрне сасартӑк чарчӗ,
Хучӗ сылтӑм хул айне,
Каласа пама пултарчӗ
Чунӗнчи сӑмахсене:

— Ват ҫынна, Кирил Иванччӑ,
Хапӑл ту, пӗрре итле.
Чавсасем лекес пек тачӑ
Аҫупа эпир пӗрле

Сухаланӑ та сӳренӗ,
Чавнӑ пӗр пекех ҫӗре.
Туйсенче эпир кӗрленӗ,
Ларнӑ пӗр кӗрекере.

Сан ӗҫчен аҫу мӑнтӑрӑн
Пурӑнчӗ манпа пӗрле,
Хӑпарса пӗртте курмарӗ
Аслӑк тӑрринчен ҫӳле.

Халь аҫу кунта пулсассӑн,
Кӗрлӗччӗ хитре юрри.
Эх, анчах ялан хаваслӑ
Ҫӑмӑл пултӑр ун тӑпри!..

Эс, ачам, ҫунат туянтӑн,
Тупрӑн хӑвӑн ӗмӗтне,

Хурҫӑ кайӑкна антартӑн
Ху ялна, ҫерем ҫине.

Ват ҫынна хисеп тумалӑх
Сан ярасчӗ туй ташши.
Манӑн шӑпӑр, манӑн алӑ
Ӑмӑлна хускатмӗ-ши?

— Пултаратӑп,— тет вӗҫевҫӗ,
Ҫавӑнтах сиксе тӑрать.
Куҫӗсем йӑл-йӑл выляҫҫӗ,
Пиншакне йӳле ярать.

Орденсем Кирил Иванччӑн
Кӑкӑрӗ ҫинче нумай,
Ялтӑраҫҫӗ таччӑн-таччӑн
Перӗнсе, ташланӑ май.

Аллине ҫупать те халӑх,
Вӗҫевҫе сунать вӑй-хал.
Тавлашса калаҫҫӗ халӗ
Кивӗ шӑпӑрпа рояль.

Ай-ну, ай-ну, паттӑр та
Ташлама хӑта!
Йӑкӑш-йӑкӑш, тӑпӑртӑк
Авӑнать кӑна.

Мамӑк пек те кайӑк пек
Вӗҫнӗ тӗлсенче.
Ҫапса илет аттипе
Атӑ кӗлинчен.

Тӳсеймест Кĕлпук, лармасть те,
Пĕрмаях ура çинче.
Вăл мухтавлă, ĕнтĕ маçтăр,
Летчик тусĕ умĕнче.

Кĕлпука тата мĕн кирлĕ?
Пĕр канмасăр вĕрнипе
Вут-кăвар пекех хĕп-хĕрлĕ
Тĕс вылять, çамки йĕпе.

Вылясан, чипер выляс-тăк,
Кăтартас ăсталăхне.
Шăпăрне тытса сасартăк
Ывăтать мачча патне.

Хăйĕн тĕллĕн харсăр шăпăр,
Кĕввине кала-кала,
Явăнчĕ те шăпланмасăр
Ӳкрĕ акă каялла.

Хăямат старик пĕр тапхăр
Çĕнĕрен вĕре-вĕре
Ывăтать те, халĕ сассăр
Шăпăрĕ ӳкет çĕре.

Эх, вылясчĕ! Кăкăр ансăр.
Сывламалăх вырăн çук.
— Парăр-ха сăра пĕр алтăр!
Пырăм типрĕ,— тет Кĕлпук.



*Вуниккĕмĕш сыпăк*

## ҪĔЛПУКПА УРТЕМЕЙ

Ирхине, хĕвел тухсассăн,
Хамăн пĕвĕн мĕлкине
Ҫамрăк улăп пек хаваслăн
Хутăм эпĕ ту ҫине.

Карăнса утса пыратăп
Хур тĕкки пек ҫăмăллăн.
Эх, каятăп та каятăп
Малалла та малалла!

Манӑн сывлӑм лекнӗ атӑ
Ҫӗрӗк тункатасене
Перӗнет те вӑтӑр-ватӑр
Вӑркӑтать кӑмписене.

Шурӑ чӑх кашти пек лайӑх
Шӑлсем витӗр шӑхӑрсан,
Хӑраса вӑраннӑ кайӑк
Ҫӗкленет хӑвалӑхран.

Улӑх халӗ пит те аслӑн
Хумханса выртни ҫинчен
Ман килет пӗрре юрлассӑм
Пӗтӗм пыр ыратиччен.

Ҫӑвӑлти кӑвлатнӑ майӑн
Вӑратать вӑрмансене.
Ман юрласшӑн вӑй нумайӑн
Кӗчӗ ҫамрӑк чӗрене.

Ҫырӑ куҫлӑ та хаваслӑ
Савнӑ ывӑлне, мана,
Сиктерме сӑпкалӑх каснӑ
Ман атте хурамана.

Пакӑлча таран ҫеҫ юлнӑ
Тункати тымарӗнчен
Ашкӑрса хунавӗ тухнӑ
Ҫепӗҫ ҫӗр кӑкӑрӗнчен.

Пирӗн кӑмӑллӑ аннемӗр
Пулнӑ сан сӑпку, пичче!—

Тенĕ пек, вĕçĕ-хĕррисĕр
Сасă пур çулçисенче.

Кашлăр, çамрăксем, илемлĕ,
Ӳсĕр тӳрĕ, яштака!
Малалли ăру сикмелĕх
Пулăр, тен, эсир сăпка.—

Тетĕп те утатăп эпĕ
Шурă хурăн айĕпе.
Эпĕ хурăн шыв шерпечĕ
Ĕçнĕ улăм пĕрчипе.

Акара кăвас тутарнă
Ĕлĕк хурăн шывĕнчен.
Выртмара вучах çунтарнă
Ырă кĕллĕ çĕр çинче.

Халĕ ӳснĕ хурлăханăн
Çырлине çие-çие,
Эп утса сисетĕп хамăн
Çĕр пек пысăк телее.

Хĕвелччен е вăл ансассăн
Сивĕ тарăн авăра
Вăлтасем ярса хаваслăн
Эпĕ ларнă шăплăхра.

Тунката çинчен пуçхĕрлĕ
Халĕ хытă чăмрăм та
Хирĕçле ишетĕп вирлĕ
Авăр тĕпĕнче, шалта.

Ӑтăр пек хăвăрт каятăп,
Ҫуç уçса пăхса илсен,
Тăр шывра курса пыратăп
Тап-таса шакмар чулсем.

Эп куратăп ушкăн пулă
Йăпăрт-йăпăрт кайнине,
Ҫӳлерех мăкланнă хулă
Юхăмпа чĕтренине.

Сывлăш пĕтрĕ те, тухатăп
Шыв çине, хĕвел умне,
Алăпа çапса вататăп
Ӑмăрткайăк мĕлкине.

Эпĕ улăх шывĕ урлă
Ҫаçмапа каçатăп та
Малалла утатăп чуллă
Питĕ чăнкă вырăнтан.

Эп кăлкан çинчен иртетĕп,
Хăпаратăп ту çине,
Чул çине ларса итлетĕп
Сăвăрсем шăхăрнине.

Юрататăп эп куккукăн
Янăравлă сассине,
Юрататăп хумлăн-хумлăн
Ҫарансем хускалнине.

Инçетри çăка шăхличĕн
Ҫивчĕ сассине илтсен,

Умăма сасартăк килчĕç
Хам ачалăх кунĕсем.

Аса килчĕç манăн ухă
Йĕпписем шăхăрнисем,
Харăс-харăс, уххăм-уххăм
Хам чуччу яраннисем.

Кĕреймен хĕвел çутисĕр,
Мачча ланнă çулçăллă
Сулхăнрах юманлăх витĕр
Эп утатăп малалла.

Виç хăлаç çӳлтен хăрушă
Ӳкекен çăл айĕнчен,
Хĕл каçмашкăн тунă пушă
Пурăш шăтăкĕ панчен

Эп ута-ута тухатăп
Аслă уçă уçланка,
Утарта вара куратăп
Шур сухаллă Кĕлпука.

Ватă çыннăн сывлăх шеп-и?
Куçĕ халь те витĕр-ши?
Мучие курманччĕ эпĕ
Виç-тăватă çул хушши.

Аякра нумай çӳрерĕм
Çĕр çинче те шыв çинче,
Кĕлпука манма пĕлмерĕм
Вăрăм вăхăт тăршшĕнче,

Пĕтĕмпе тăван çĕршывăм
Пĕлтĕр, терĕм, старике,
Çавăнпа та эпĕ çыртăм
Ун çинчен пĕр кĕнеке.

— Пит нумай!— тесе каларĕç
Критиксем мана, анчах
Сăвăсем хĕрсе шăранчĕç
Ун çинчен татах, татах.

Ушкăнпа тата пĕчченçĕ,
Каллĕ-маллĕ вĕркĕшсе,
Куркаксем çинче вĕçеççĕ
Шурă-сарă лĕпĕшсем.

Таврара вĕçĕ-хĕррисĕр,
Таçтанах илтĕнмелле,
Сăрлатать пасар пек икçĕр
Аллăран ытла вĕлле.

Хăмăш пек çăра туратлă
Кутамас юман айне
Тăнă та Кĕлпук хăватлă
Вылятать аллисене.

Шăрăх кунăн сар хĕвелĕ
Кĕреймест çутисемпе.
Хÿтĕре старик йĕркеллĕ,
Васкамасăр шĕшлипе

Шăйăрса хурать чĕр пушăт,
Уйăрать икшер пая.

Çĕрмелле ан пултăр пушă!
Шăл çыртса явать пăяв.

— Ачасем тата,— тет,— хамăн
Явнă пур пек пăява
Хам килтен тăсас пулсассăн,
Çитĕ чаплă Мускава.

Асатте, атте, мĕн пурĕ
Пирĕн йăх кантра-вĕрен
Явнине кунтан тӳп-тӳрĕ
Аякка тăсса иртсен,

Манăн шухăшпа, вăл каçĕ
Китайран та лерелле.
Яппуна çитме пăртакçă
Ман тата пĕтĕрмелле.

Çăпата туни сахал-и?
Мăшăрне пĕр çын илсен,
Ман ума пиншерĕн халĕ
Сикĕç-тухĕç салтаксем.

Çар пулсан, вĕсем хаваслăн
Тинĕс пек кĕрлемелле,
Тăшмана, пĕрре çапсассăн,
Лапчăтса ӳкермелле!

Йăлтăркка сăрланă сарă
Вĕллесем таврашĕнче
Сĕрлеме пĕр сас пуçларĕ
Купăс пек çинçе-çинçе.

Шупӑрпа Ӗҫлпук пӗркенчӗ:
— Уйӑрать,— тет,— кур-ха, кур!
Чӑннипех ҫӳле ҫӗкленчӗ,
Явӑнма пуҫларӗ хурт.

Ҫип ҫӑмхи пекех пӗр чӑмӑр
Явӑнса пуҫтарӑнсан,
Пирӗн пуҫ ҫинчен хурт-хӑмӑр
Вӗҫрӗ-иртрӗ утартан.

Утӑ купине ҫил-тӑвӑл
Вашкӑртса ҫӗкленӗ пек,
Васкаса таҫта каять вӑл,
Чарӑна пӗлмест инкек.

Питлӗхне Ӗҫлпук шаккарӗ
Аллинчи патаккипе.
Сапнӑ шывӗ ялтӑрарӗ
Асамат кӗпӗрӗ пек.

— Ҫайрӗ,— тет мучи,— ҫухалчӗ.
Урнӑ пулӗ, тет, ами.
Йыхӑрса илеймӗн халӗ.
Пуп каларӗшле, амин.

Акӑ иккӗн, вӑтӑр-ватӑр
Питсене чӗре-чӗре,
Тавлашса пекех чупатпӑр
Тӗксӗм чӑтлӑх витӗрех.

Янрататпӑр хамӑр хурҫӑ
Питлӗхе ҫапа-ҫапа.

Çумăр пĕрчисем пек çулçă
Питсенчен çăт-çат çапать.

Пĕр сукмак пире кăларчĕ
Янкăр уçă улăха.
Аяла анса çухалчĕ
Сӳтĕлмен хура çăмха.

Пĕр хура та пĕр хĕвеллĕ
Хумханса выртать çаран.
Çухăрса ярать те меллĕн
Шыв çине ларать чарлан.

Ярăм-ярăм шерепеллĕ
Пĕрлĕхен çырлисенчен
Хĕрлĕрех шалпар кĕпеллĕ
Ҫам унта, шыв хĕрринче?

Уртемей пичче, мăнтарăн,
Лекнĕ-çке тамашана.
Таркăн хурт килсе хаяррăн
Сăрăннă иккен ăна.

Кăшкарла кастарнă çӳçĕ
Çийĕнче, куçхаршинче,
Курăнми хупланнă куçĕ
Айĕнче, сухалĕнче

Тăлланса хуртсем утаççĕ,
Çамрăк ăссăр амăшне
Шыраса пурте пыраççĕ
Сулахай хăлхи патне.

Амăшĕ пытаннă ахăр
Çавăнта ун хăлхине.
Хускалмасăр, шарламасăр
Уртемей тытать хăйне.

Уртемей вĕлле пек харсăр
Сĕрлесе ларать унта,
Çăварне те уçаймасăр
Аллине тытать вăлта.

Ăнсăртран килсе хуплангă
Хуртсенчен хăранипе
Сывлама та ĕнтĕ маннă,
Пичĕ тарлă, йĕп-йĕпе.

Чĕтренмест кăвак сухалĕ,
Юнĕ çук пек ӳтĕнче.
Чĕлĕмне çапах та халĕ
Ӳкермен çăварĕнчен.

Тĕтĕмне çапах кăвакăн
Унка-унка кăларать.
Ун патне тӳп-тӳрĕ акă
Васкаса Кĕлпук пырать.

Тытнă пысăк сарă кашăк,
Аллинчи пурак ăшне
Хӳтерсе пухса хупласшăн
Тĕтĕрет вăл хуртсене.

Уртемей пиччемĕр пирĕн
Сехрине хăпартнипе

Турткаланчĕ урлă-пирлĕ
Пĕтĕм ӳчĕ-тирĕпе.

Йӳçĕ тĕтĕм мăкăрланчĕ,
Юрамарĕ старике,
Тĕтĕрсе вăл чыхăнтарчĕ,
Ертрĕ хытă ӳслĕке.

Май килмест. Кĕлпук сасартăк
Çухăрса ярать:
—Сывах
Шыçăнми тăрса юлас-тăк,
Уртемейĕм, сик шыва!

Уртемей пичче ăнланчĕ,
Аллине сулса вара
Шампăрт сикрĕ те пытанчĕ
Сивĕ таран авăра.

Сĕлĕ сапнă пек тухаççĕ
Хурчĕсем хумсем çине.
Эх!— тесе Кĕлпук утарçă
Асăрхать çурасене.

Таран авăр çăтса ячĕ
Вăрăм пӳлĕ этеме.
Шыв малтан туртса кăларчĕ
Пăхăр пуçлă чĕлĕме.

Чĕлĕм шыв çинче пат тӳрĕ,
Чăпăкне тăратрĕ те
Пычĕ-пычĕ, шурĕ-шурĕ
Кăпăкпа пĕрле çӳлте.

Чĕлĕм хыççăн Уртемейĕ,
Йывăç пăкă пек, ансат
Сирпĕнсе тем пек телейлĕ
Сикрĕ тухрĕ  ярăнса.

Ӳчĕ сивĕпе тăртаннă.
Умĕнче хумсен унки.
Чылаях нумай çакланнă
Сухалне шапа лĕкки.

Ҫунталла ишет хаваслă
Чалăш тăршшĕ пĕвĕпе.
Хăмпă пек çĕкленчĕ хаклă
Пĕрлĕхен тĕслĕ кĕпе.

Чарăнса тăрса хăй урлă
Вăлтине сирпĕнтерет.
Чавса тăршшĕ кĕркке пулă
Çăтăл-çатăл сиккелет.

---



*Вунвиççĕмĕш сыпăк*

## МУНЧА

Ик эрне хушши те пур-тăр
Кĕрленай вăрманĕнче
Янтăрарĕ çивĕч пуртă
Платниксен аллисенче.

Илĕртет вăрман хавасĕ,
Кăмăла каять янрав.
Шăрчăк пек сикет турпасĕ,
Сĕвĕнсе ўкет çункав.

Ěмěрсем хушши кашланă
Яштака кěрешсенчен
Пěр пура тума калană
Колхозра, правленинче.

Пирěн чаплă ěç пыратчě
Пěр уçланкă варринче.
Ват Кěлпук килсе каятчě
Çывăхри утарěнчен.

— Пултăр ку мунчан шерпечě!—
Тетчě вăл, çăка пылне
Хăнари пек çитеретчě
Мировой платниксене.

Хитререн хитре çěкленчě
Кăпăк евěр шур пура.
Пăхрăмăр та, тěлěнтерчě,
Савăнтарчě хамăра.

Тěрлě кайăксен концерчě
Хăлхана кěрсе ирпе
Савăнтарчě, килентерчě
Пыл пек тутлă кěввипе.

Килěшсе пурте пыратчě,
Каласа пама та çук,
Харăс-харăс авăтатчě
Пуртăпа пěрле куккук.

Пултăран шăрши хăпарчě
Яшкаран пěр селěм ир.

Ыйăх сирĕлсе кайманччĕ,—
Килчĕ-çитрĕ бригадир.

Вăл йĕнер çинчен яшт анчĕ,
Пăхрĕ шур пура çине:
Эх, мерттес!— тесе ал пачĕ
Йĕркипе платниксене.

Пурана сӳтме карт-паллă
Пĕтĕмпе хурса çитсен,
Килсе çитрĕç пар лашаллă
Шăлтăрти урапасем.

Кӳкĕрт пек пулса типейнĕ
Пурана çак уçă ир
Хамăр колхоза тирпейлĕ
Турттарма хавас эпир.

Урапа сасси кĕрлерĕ,—
Вăл та такăр çул çинче
Хăлхана пырсах кĕмерĕ
Куккуксен сассисенче.

Сарлака çырма çыранĕ
Хĕрринче мăкларăмăр.
Ырнă çыннăн ӳчĕ канĕ.
Ырлăх патăр вăйăмăр!

Колхозри çынсем хастарлă.
Çĕкленсе ларать мунча.
Шăкăр-макăр чул пуçтарнă
Ĕнерех ача-пăча.

Хулăм хулпуççиллĕ халăх
Тавлашса ĕçленине
Ӳкерме юри фотограф
Килнĕ çакă ирхине.

Хăвăртрах мунчамăр пултăр,
Çунтăр тар пек типĕ вут!
Вунтăвата çивĕч пуртă
Янтăрарĕ тепĕр хут.

Районта пире мухтанă,
Çавăнпа та хуларан
Колхоза пама калană
Юриех чугун хуран.

Пирĕн Уртемей пиччемĕр
Сикрĕ-анчĕ хурана,
Куртăмăр эпир, атьсемĕр,
Унăн сухалне кăна.

Виçĕ аршăн çӳлĕш мар-и
Акăш-макăш хуранта
Ирĕккĕн пиçме пултарĕ
Вун така та, тупата!

Уртемей пичче кăларчĕ
Мунчанне кăмакине:
«У» тесе çырса хăварчĕ
Кăмака çамки çине.

Уртемей пичче кăларнă
Кăмака пирти ялта

Шутланать-ҫке пархатарлă,
Яланах вĕри тата.

Уртемей пичче кăларнă
Кăмакаллă ыр пӳртре
Ҫын ларать хĕлле те тарлă
Арăш-пирĕш сивĕре.

Инкесем ялан мухтаççĕ
Лайăх пиçнĕ çăкăра:
— Уртемей!— тесе çыртаççĕ
Чĕллине малтан вара.

Ушкăн-ушкăн кăвакарчăн
Вăранман-ха ыйхăран.
Тутлă тĕтĕм кăвакарчĕ
Улăх тăрăх çырмара.

Ҫăп-çăра та мăкăрланчăк
Шурă тĕтрепе пĕрле
Тĕтĕм палкаса хăпарчĕ
Ту арки çине, çӳле.

Шăкăр-макăр чул шăрши те
Пĕренен чипер шăрши
Пур киле те халĕ çитĕ,—
Йыхăрать мунча шăрши.

Мунчара ĕнер кĕнин те
Ӳчĕ кĕçĕтсе илет,
Хăнана пек халĕ ĕнтĕ
Сарлака лапка чĕнет.

Лав тулли чӗр милӗк кирлӗ,—
Касса килчӗҫ ир ҫинче
Чӑп-чӑпар куккук сассиллӗ
Кӗрленай вӑрманӗнчен.

Пур этем те милӗк илтӗр
Ҫакӑ ырлӑх лавӗнчен,
Кӑкӑра вӗри пӑс виттӗр
Сарлака лапка ҫинче!

Сухара тусан та кирӗк
Ларнине ачаш хырса
Ӳт ҫинчен антарӗ милӗк,
Ҫапӗ лайӑх кантарса.

Тин ҫуралнӑ пек тасалӗ
Ырнӑ ҫын лапка ҫинче,
Нар пек тӗс вылянӗ халӗ
Кӳпшекленнӗ питӗнче.

Ялӗнчи колхоз правлени
Хушнипе, вӗри мунчин
Ӑшшине пама ҫӗкленнӗ
Ыйхӑран Кӗлпук мучи.

Хул айне таса кӗпе-йӗм
Хӗстерсе Кӗлпук утать;
— Пултӑр ҫӗн мунча телейӗ!—
Тенӗ пек хӑйне тытать.

Ҫырмана каян пралукӑн
Хӗрринчи садсем ҫине

Хăварать вăл ункă-ункă
Пăхăр чĕлĕм тĕтĕмне.

Суйласа пĕр мăшăр милĕк
Мунчара мучи илет:
— Эх, чулсем, ӳте вĕрилĕх
Парăр та чашлатăр!— тет.

Çавăнтах, сăмахĕ майăн,
Виçĕ хут пĕр куркашар
Шыв сапать — чулсем нумаййăн
Шартлатаççĕ шăрт та шарт.

Шĕл-кăвар пек хĕрнĕ сывлăш
Саланать мĕнпур енне,
Чи малтан, Кĕлпук каларĕш,
Чĕпĕтет хăлхасене.

Маччана хăпарнă хыççăн
Аяла анать вĕçсе,
Ӳхĕрсе иртсе каюçăн
Ĕнтнĕ пек лекет çӳçе.

Тарласа çынсем лараççĕ,
Вĕрине тӳсмен енне
Тăсăлса кайса выртаççĕ
Хăвăрт йывăç урайне.

Хăнк тумасть Кĕлпук мучимĕр,
Яр тăсать урисене,
Милĕкпе татти-сыпписĕр
Ăшалать ӳтне-тирне.

Пурӑнать хӑватлӑ сывлӑх
Ватӑ ҫыннӑн ӳтӗнче,
Ҫӑварне те хӗрнӗ сывлӑш
Хуплаймасть лапка ҫинче.

Кӗлпука чӑнах та ирӗк
Тӑрӑхла лапка ҫинче,
Хытӑ сыхнӑ мӑшӑр милӗк
Вылянать аллисенче.

Ҫӑтӑл-ҫатӑл ҫапнӑ майӑн,
Ҫамрӑк каччӑ туйӗнчи
Мӑнкӗрӳ пек, питӗ лайӑх
Такмакне калать мучи:

— Йӳҫҫе тула хӑвалар,
Тутли пултӑр хамӑрӑн.
Тӗрӗс те мар, суя мар,
Лапка ылтӑн хӑмаран.

Милӗксем епле хитре
Ҫурӑм тӑрӑх шурӗҫ-ха,
Вӑрӑмлатрӗҫ ӗмӗре,
Ҫирӗплетрӗҫ сывлӑха.

Ҫамрӑк кин уявсенче
Кукӑль пӗҫеретчӗ.
Ун тути чӗлхи ҫинче
Пӗр эрне ҫӳретчӗ.

Кукӑльтен те тутлине —
Сиплӗ чулӑн ӑшшине

Парăр, парăр, парăр-ха
Чăп тулли курка!

Ах-ха-хак та ах-ха-хак,
Çапăнма тата пăртак
Пар-ха эсĕ, Уртемей,
Пĕр курка тулли телей!

Уртемей пичче ал-хапăл
Пысăк шыв курки илет.
Сапнă хыççăн пăслă тăвăл
Чулсене кĕрлеттерет.

Уртемей ларма хăтланчĕ,
Тӳсеймест, яри выртать.
Маччаран вĕри хăвачĕ
Урайне пырса анать.

Сивĕ шыв илет Кĕлпукĕ,
Пĕр сапать те пуç ухать.
Çапăнма вăй-халĕ çук-и?
Милĕке ярса тытать.

Вăл тем чухлĕ хурăн милĕк
Курнă ĕмĕр тăршшĕнче,
Кирĕкне тасатнă ĕлĕк
Яланах лапка çинче.

Вăл тепре ăсса шыв илчĕ,
Тепĕр хут ăшши паратъ.
Канăç тупнă ватă ӳчĕ
Хур яшки пек пăсланать.

Çавăнса выртать те харсăр
Çаплипех çатлаттарать,
Çăварне пĕртте хупмасăр
Çĕнĕрен такмак калать:

— Умăртан сирсе хăварăр
Çитмĕл-çичĕ чир-чĕре,
Мунчара çуса тасатăр,
Çирĕплетĕр ӳт-тире!

Пурăнас килет ман ырă
Сахалтан çĕр аллă çул.
Апапап, вĕри çан-çурăм,
Тимĕртен те хытă пул!

Анчĕ вăл, тата тӳсмерĕ
Акăш-макăш вĕрире,
Ухăнма çӳле çĕклерĕ
Сивĕ шыв — тулли витре.

— Сывлăх пар! — тесе сасартăк
Чашлаттарчĕ витринчен.
Хускалмарĕ пĕр тымар та
Ватă çыннăн ӳтĕнче.

Çӳçенни те сисĕнмерĕ.
Пултарать Кĕлпук мучи.
— Асатте, мана çап! — терĕ
Ывăл ывăлин ачи.

Хĕрнĕ сывлăшăн хăвачĕ
Сирĕлсе пĕтсен анчах

Çапăнма сиксе хăпарчĕ
Ырă кăмăллă ача.

Çук, пĕтмен мучин вăй-халĕ
Çапăнса тĕрмешнипе,
Мăшăр милĕк тытрĕ халĕ
Харăс икĕ аллипе.

Ачана вăл урлă-пирлĕ
Ачашлать те шăлкалать,
Çавăнтах мĕнле çеç кирлĕ,
Çавăн пек такмак калать:

— Кăпăкран эп çыхрăм милĕк
Кĕрленай вăрманĕнче.
Çулçисем ун пыл тутиллĕ,
Мунчари чулсем мерчен.

Çăвăнсан, пĕртте хăрамăн
Вăрманта та кашкăртан,
Тасалсан, ӳсме пултарăн
Ыранччен кашта таран.

Ывăнать Кĕлпук, антрарĕ,
Ахлатса сывлать кăна,
Кăлт-кăлт пусрĕ, тухса кайрĕ,
Шăмпăрт сикрĕ çырмана.

Ватă çын та, пăхăр халĕ,
Пулă пек ишсе каять,
Кăвапа таран сухалĕ
Икĕ енĕпе шăвать.



*Вунтӑваттӑмӗш сыпӑк*

## УТӐ ÇИНЧЕ

Пӗлтӗр утӑ çулнӑ чух
Хыр пекех çынсем яштакчӗ.
Уххӑм-уххӑм, ух та ух
Вашлатса çава пыратчӗ.

Çак вӑрман пек халӑха
Çапӑçма Çӗршыв ӑсатнӑ.
Арçынсем вӑрахлӑха
Çавана килте хӑварнӑ.

Тутăхмаççĕ çавасем—
Хĕвелтен кая юлмасăр
Хĕрсемпе хĕрарăмсем,
Ачасем те тухнă харсăр.

Арçынсем те пур унта,
Пысăк йышлă мар, пăртакçĕ.
Вăрçăра аманнă та
Ĕçлессе манса каймаççĕ.

Татăлса ӳкмен шăмма
Ырă кил пăхса тӳрлетĕ.
Сиплĕх пур çĕн ӳт хывма
Вăрманта та, уй-хирте те.

Вăрçă çĕмĕрнĕ çынна
Самая кĕртет тăван çĕр,
Хăвармасть нихçан кăна
Ӳкнĕ çулçă пек телейсĕр.

Çирĕп алă та ура
Тепĕр хут лартса парасчĕ!
Çук, кунта пулмасть вара
Вăрманпа тăпран хăвачĕ.

— Çук,— тесе Кĕлпук пĕччен
Шухăшлать хăй тĕллĕн халĕ.
Пĕрене каски çинче
Янраса тăрать сунталĕ.

Çамрăклах мучи юратнă
Ут çулма çаран çинче,

Сисĕннĕ ăна хăватлă
Вăй пурри хулпуççинче.

Пилĕк-ултă утăм хыççăн
Қарăшла кахал мăйне
Тăсакан çынна куруçăн
Вăл вĕренĕ çиллипе.

Çавасем пурте пĕр тикĕс
Вăш-вăшик текен сасси
Пулнă уншăн çирĕп никĕс,
Хĕпĕртӳ те чун уççи.

Хулпуççи ырса сусанă,
Вăл ăна ик аллипе
Энтрĕк хыççăн лутăрканă
Йӳçĕ каткă çăвĕпе.

Вăй чаксах пырать этемĕн
Ватăлса пыра-киле.
Пĕрнĕ йĕр пите ӳкет-мĕн
Вучахри çĕрулмилле.

Çын кăна-и? Ватă мар-и
Ĕмĕр выртнă хытă чул?
Шăтарать юман тымарĕ
Вут чулне те хăшпĕр чух.

Ватă çыннăн сурнă сурчăк
Çăпата пуçне ӳкет,
Тенĕ шухăш ĕлĕк пурччĕ,
Халь те халăхра çӳрет.

Утнă хыççăн ыраткалĕ
Лĕнчĕр-ленчĕр ӳт,— тесе
Выртмалла-и унăн халĕ
Тӳшекки çинче хĕрсе?

Кăвапа таран сухалăн
Кăн-кăвак пĕрчисене
Шутласа ларма кахалĕ
Çыпçăнман Кĕлпук чунне.

Ватăлсан та, ырă халăх
Юратса тăма кунта
Пур хăйне кура ăсталăх,
Пур каски çинчи сунтал.

Вăл хĕрсе туптанă хыççăн
Çава пулă пек çӳрет,
Курăка паккус-паккусăн
Хум пек тикĕс ӳкерет.

Çивчĕш тухнă-и, мука-и—
Ватă çын тĕпче-тĕпче
Типĕ курăка хăй майăн
Ирттерет çивчи çинче.

— Куншăн ху туйна чĕнтерĕн,—
Тет мучи хĕрачана,
Кучченеç пекех чиперрĕн
Тыттарать çава ăна.

— Районра ăçтан-ха илĕн
Кун пекех хитре çава?

Лартӑн куншӑн, савнӑ кинӗм,
Лартӑн тутлӑ хуплӑва,—

Тет мучи чунне ҫӗклесшӗн
Умӗнчи хӗрарӑма.
— Шӑлусем епле,— тет лешӗ,—
Тӳсӗҫ-ши шӑмма ватма?

— Манӑн шӑлӑмсем мӑнтарӑн
Пулайман, анчах шӑмма
Эпӗ мӑшӑрна тыттарӑп
Ҫӑтӑр-ҫӑтӑр кышлама.

Вӑрҫӑ иртӗ. Лӑпкӑ пулӗ.
Упӑшку те килӗ, кин,—
Ҫам пырсан та ӑшӑ кулӑ,
Ыр сӑмах та пур мучин.

Пур иккен мучин таканлӑ
Ҫавракa хӑйра кунта.
Хӑйрама та ватӑ алӑ
Пултарать иккен ӑста.

Ҫунӗпех хаваслӑ халӑх
Юрӑ-кӗввинче, шавра
Сарлака сип-симӗс улӑх
Тӗркӗшет йӗри-тавра.

Ӗҫ нумай, анчах та ҫук-тӑр
Ут ҫулни пек хавасси!
Илтӗнсе тӑрать чарусӑр
Ачапчан шӑхлич сасси.

Ниçталла кайса пăхмасăр
Ларнинче илемĕ çук.
Васкамасăр, хыпăнмасăр
Ерипен утать Кĕлпук.

Тип утта хĕрсем пухаççĕ
Кăтăрти кĕреплепе,
Валемсем те турттараççĕ
Пĕр çĕре лашасемпе.

Чылаях хурса тултарнă
Пĕр çавра капан çине
Уртемей пичче хăпарнă,
Сенĕк тытнă аллине.

— Уртемей, капан хăпартăр
Çутă çăлтăрсем енне!—
Тет Кĕлпук вара вăр та вăр
Çавăрать шĕлепкине.

Уртемейĕ ӳркенмерĕ,
Ырă тусшăн хальхинче.
Лаптăк картусне çĕклерĕ
Йывăç сенĕк тăррине.

— Пултăр сан капан типтерлĕ!
Шăшие ан кĕрт тĕпне! —
Терĕ те Кĕлпук силлерĕ
Тепĕр хут шĕлепкине.

Харăс-харăс ешĕл утă
Çулакан çынсем патне

Ăл хуллен те, вăл кару та
Тытрĕ хăйĕн утăмне.

Вăл юри çупка хĕстернĕ
Пиçиххийĕ хушшине—
Якатас пулать типтерлĕн
Мукарах çавасене!

— Çавана, мучи, хăйрар-и?
Пур ăна çупкуласси!—
Илтĕнсе тăма пуçларĕ
Кинсемпе хĕрсен сасси.

Аллине мучи хуткупăс
Тытнă евĕр, çавана
Янтратса тăма тупать ăс—
Итлесе çеç тăр ăна!

Туй юрри те чăрсăр ташă
Илтĕнет кĕввисенче—
Пур иккен Кĕлпук чăвашăн
Хӳхĕм чун ĕçленинче.

Çавана хăйрана майăн
Çамрăксен чĕри сикет,
Ушкăна тăрса нумаййăн
Ташласа ярас килет.

Кун чылай вăрăм пулин те
Вăхăт иртнĕ. Туйăнмасть.
Вылямашкăн çитнĕ ĕнтĕ
Улăха лĕп ăшă каç.

Авалхи меле кăтартнă
Халь мучи çамрăксене:
Параппан тирне тыттарнă
Пĕр юман катка çине.

Ватă çын вĕрентнĕ майăн
Шыв тултарнă каткана:
Çапнă сасă вăйлă кайĕ,
Ян-ян ярĕ таврана.

---



*Вунпиллӗкмӗш сыпӑк*

## КАНӐҪСӐР ЭТЕМ

Вӗҫсӗр-хӗрсӗр сивӗ ҫумӑр
Пӗрхӗтсе лӳшкетнипе
Ҫӗркунне ҫанталӑк хӑмӑр,
Ҫантӑк куҫӗсем йӗпе.

Пӗр эрне ытла та пур-тӑр
Килӗнче Ҫӗлпук тытман
Аллине пӗрре те пуртӑ,
Вут-кӑвайтӑ та касман.

Темĕнле ăш-чикĕ хăвăл
Туйăнать çак кунсенче.
Тарăхса кайса выртать вăл
Тӳшекпе минтер çинче.

Ыратни питех те халĕ
Сисĕнмест, анчах ăна
Яшт сиксе тăма вăй-халĕ
Пухăнмасть ал-урана.

Пысăк çип пек юн тымарĕ
Курăнса тăрать мучин.
Çыпçăнса тăма пуçларĕ
Чĕлхене çăвар маччи.

Тем пек тутлă апата та
Тутанма хаваслăх çук.
Чăннипе-ши эпĕ ватă?—
Шухăша каять Кĕлпук.

Лăпăр-лапăр шĕвĕ пылчăк.
Кун пек чух çĕре кĕме
Çапĕ-ши сехет сасартăк
Ĕмĕт тытнă этеме?

Ӳт çинче кĕсен-çăпанĕ,
Е ӳпке начар пулсан,
Сăлтава Кĕлпук ăнланĕ,
Вилĕ-кайĕ ăнсăртран.

Халĕ ун ӳпки те тĕрĕс,
Пĕверпе пӳре хитре.

Телеграф пекех тип-тикĕс
Ĕçлесе тăрать чĕре.

Пысăк вăрçă-харçă шавĕ
Тĕнчере кĕрленĕ чух
Ахалех вилме сăлтавĕ
Çĕр çинче Кĕлпукăн çук.

Халь тăрать Çĕршывăн Çарĕ
Вислă шывĕ леш енче.
Вăл епле выртма пултарĕ
Хупă тупăк ăшĕнче?

Уй-хирте тырра пуçтарнă
Хыççăн тутлă кулача
Астивмесĕр ăс пуçтарнă
Хĕр хĕлле каймасть качча.

Çĕнтерсе хăватлă халăх
Кĕпĕр-кĕпĕр килнине
Савăнса пĕрре курмалăх
Ĕмĕт хунă чĕрине.

Çурчĕ çийĕнче ялавĕ
Çĕнтерӳллĕн явăнма
Пуçличчен Кĕлпук панккав-и,
Ăссăр-и вилсе выртма?

Сивĕ çиллĕ çумăр çунă
Вăхăтра пӳртри ăшша
Сисеймен пекех ун чунĕ
Тăчĕ хытă тулашса.

Юрлă тумламсем шаккаççĕ
Тĕттĕм кантăка çапса.
Кунĕпех килте лараççĕ
Кунĕпе ача-пăча.

Йывăр кăмăлне уçасшăн
Каласа хурать мучи:
— Тулчĕ пулĕ ман чăвашăн
Пурăнас кун-çул шалчи.

Лӳшкетсе çанталăк, кинĕм,
Тăнă кансĕр вăхăтра
Пытарма пит йывăр килĕ—
Касăлмасть йĕпе тăпра.

— Асатте, тархасшăн эсĕ
Урлă-пирлĕ ан калаç!
Кирлĕ-и масар кĕтесĕ,
Ĕмĕр-ĕмĕр тĕксĕм каç?

Е сана хисеп тумасăр
Кӳрентернĕ-и килте?
Йывăр шухăша путмасăр
Пурăн эсĕ, асатте!

Кулленех инкек-синкексĕр
Кил-çурта тытса пыма
Тăрăш ĕнтĕ, асаттемĕр,
Ан васка вилсе кайма!—

Ăслă кинĕ, сарă кинĕ,
Чунĕнчен тархасласа

Каласан, Кĕлпукăн чунĕ
Çĕкленет хавасланса.

Ачасем чипер аслашшĕ
Вилесрен хăранипе
Пăхкалаççĕ халь ачашшăн
Çунакан куçĕсемпе.

Ачасем пурте хурланчăк.
— Пĕттĕр санăн вилесси!
Юрамасть!— тесе сасартăк
Илтĕнет ача сасси.

Пĕчĕкки вилме чарасшăн
Çухăрать пуç вĕçĕнче,
Хăй чылай кĕске аслашшĕн
Кăн-кăвак сухалĕнчен.

— Пурăнас тата çур ĕмĕр
Çамрăк халăх хушшинче!
Шухăшлать Кĕлпук мучимĕр,
Тарлă çын, тӳшек çинче.

— Çимелле ман чăх какайĕ,
Сыпмалла ун шӳрпине!
Чир амакĕ иртсе кайĕ,
Вăй та кĕрĕ чĕрене.

Тупса пар-ха кинĕм, халĕ,
Хăйрапа çава çĕççе,—
Тет мучи,—кĕтмен вăй-халĕ
Питĕнче вылять çиçсе.

— Вилĕме çĕнетĕп. Чимĕр!
Вăл хăй сиктĕр çĕр тĕпне!
Çĕçĕ пар! — тесе мучимĕр
Тепĕр хут калать кине.

Юрлă çумăр кассăн-кассăн
Лăшкетет çаплах çĕре.
Çĕçĕ хăйрани хавассăн
Илтĕнсе тăрать пӳртре.



*Вунулттăмĕш сыпăк*

## АСАМАТ ҪĔПЕРĔ

Йшă çумăр иртнĕ хыççăн
Пысăк чунлă Ҫĕлпука
Урампа иртсе пыруçăн
Аякка та аякка
Уй-хире те, вăрмана та
Илĕртсе чĕнет тĕнче.
Сарлака кунчаллă атă
Ватă çыннăн уринче.

Тусантан тасалнă курăк
Çиййĕнчен çул хĕррипе
Утнă чух ăна хир тăрăх
Каякан юррисемпе
Тăрисем савăнтараççĕ.
Авăтать таçта куккук.
Пурăнма пурте хушаççĕ.
Итлесе пырать Кĕлпук.

Уçă сывлăшра хастарлăн
Ун ӳпки сывламалла!—
Чĕлĕмне Кĕлпук пытарнă
Атă кунчине шала.
Курăксем çинче нумаййăн.
Юлнă тăрă шыв шăрçи.
Ырă тĕтĕм евĕр лайăх
Çамрăк курăксен шăрши.

Çумăрти пуян çанталăк
Ĕнчĕпе ахах-мерчен
Пуçтарса питех ăсталăн
Сар хĕвелĕ çуттинче
Тунă асамат кĕперĕ
Карăнса тăрать малта—
Хир, çаран, вăрман чиперĕ,
Сăнĕ, чапĕ пур унта.

Каласа та пĕтереймĕн
Ун çинчи мĕнпур тĕсе.
Пĕлĕтре кĕпер илемлĕн
Ялкăшса, вут-хĕмленсе
Хӳхĕм тĕрĕ тĕрĕленĕ—

Ун сăвап пурри çинчен
Авалтан юмах сӳренĕ
Пирĕн халăх хушшинче.

Ватă çын шап-шурă шупăр
Тăхăнса, хитреленсе,
Шухă чунлă тăпăр-тăпăр
Шурă ут йĕнерлесе
Асамат кĕперĕ витĕр
Сиккипе юртса тухсан—
Иртрĕ санăн ватă ĕмĕр,
Килчĕ çамрăк ĕмĕр сан!—

Пулнă асамат кĕперĕ
Çулленех, анчах капла
Пулнине аса илмерĕ.
Пулнă пулĕ урăхла.
Çĕнтерӳ тĕнче кăларчĕ
Кун пек чаплă кĕпере,—
Терĕ те Кĕлпук уттарчĕ
Малалли сенкер хире.
Мĕн тесен те, ĕмĕр ватă,
Малалла утас вăйне
Чакарать лӳшкеннĕ атă,
Йĕр юлать çерем çине.
Килнелле кайма кăна
Тăнă чух курать мучимĕр
Асамат кĕперĕ витĕр
Килекен машинăна.

Чăннипех, тата пĕр-икĕ
Минутран кĕрлеттерсе

Ӳ҆ршӗри ял грузовикӗ
Шӗвӗ пылчӑк сирпӗтсе
Чаранать — вара хавассӑн
Янтӑрать пӗр ушкӑн сас:
— Мучие хисеп тумашкӑн
Ҫабина кӗртсе лартас!

Грузовик ҫинче чӑнран-чӑн
Салтаксем пурте матур:
Ҫашнинех хисеплӗ орден,
Ҫашнинех медалӗ пур,
Вӗсем ҫапӑҫу кӑварӗн
Варринче хӑйсен пуҫне
Хӗрхенмен — мучин тухмарӗ
Каласси чӗлхи ҫине.

— Халӑх мухтавне шӑраттӑр
Хаяр вӑрҫӑ вутӗнче.
Тавтапуҫ! сире! Ҫаҫарӑр!
Ман чӗлхе пуклак, кичем.—
Тенӗ май хывса ҫӗклерӗ
Хӑйӗн кив шӗлепкине,—
Ман кӗтсе илес-ха, терӗ,
Хамӑн чун-кӗлпуксене.

Грузовик хускалнӑ майӑн
Илтӗнет салтак сасси:
— Эй, мучи, манса ан кайӑр!
Пирӗн пур хӑналасси!
Вӑштӑр-вӑштӑр ҫил вӗрӳҫӗн
Вӗлкӗшет юртан таса

Акăш пек Кĕлпукăн çӳçĕ
Çӳлелле çунатланса.

Аякри çăра тусанлă
Хирсенчен тăван киле
Килекен çынсем, хаваслă
Ал сулса, тĕлĕнмелле
Юрлани кунта кĕрлерĕ.
Çĕнтерӳ хапхи майлах
Йăл-йăл асамат кĕперĕ
Ялкăшса тăрать çаплах.

Асамат кĕперĕ витĕр
Тухакан лавсем çинче
Чаранми татти-сыпписĕр
Вĕрекен çил хумĕнче
Варкăшать ялав сахал-и
Кашни хăй хăмач тĕсне
Пĕлĕтри кĕпер çине
Ӳкерме тăрать пек халĕ.

Асамат кĕперĕ витĕр
Пĕр ачи пулин те халь
Халăхпа хисеплĕн килтĕр,—
Унăн орденпа медаль
Кăкăрне çутатмалла!
Мĕн тесен те, йăх хăватлă.
Хăй Кĕлпук вăрçа ăсатнă
Йăхĕнчен çĕр çын ытла.

Çĕнтерӳ хапхи пекех
Асамат кĕперĕ витĕр

Килсе çитчĕр, старике
Ыталаччăр, сывлăх сунччăр,
Чăмăртаччăр ват алла.
Чарăнмасть, утать мучимĕр
Малалла та малалла.
Асамат кĕперĕ витĕр
Кĕлпуксем таврăнмалла.

1935—1953

## ТУПМАЛЛИ


*Пĕрремĕш сыпăк.* Ача чухнĕ . . . . . . . . 3
*Иккĕмĕш сыпăк.* Асамлă çĕрĕ . . . . . . . . 17
*Виççĕмĕш сыпăк.* Сухал . . . . . . . . . 34
*Тăваттăмĕш сыпăк.* Хăла ĕне саккунĕ . . . . . . 49
*Пиллĕкмĕш сыпăк.* Сăсар çĕлĕк . . . . . . 60
*Улттăмĕш сыпăк.* Сехре хăппи . . . . . . 73
*Çиччĕмĕш сыпăк.* Шинеллĕ çын . . . . . . 84
*Саккăрмĕш сыпăк.* Хăрушă каç . . . . . . . 116
*Тăххăрмĕш сыпăк.* Кĕлпук мучи Кара-Ахмет агайпа калаçни 126
*Вуннăмĕш сыпăк.* Пурнăç . . . . . . . . . 135
*Вунпĕрмĕш сыпăк.* Туйра . . . . . . . . . 151
*Вуниккĕмĕш сыпăк.* Кĕлпукпа Уртемей . . . . . 160
*Вунвиççĕмĕш сыпăк.* Мунча . . . . . . . . 172
*Вунтăваттăмĕш сыпăк.* Утă çинче . . . . . . 183
*Вунпиллĕкмĕш сыпăк.* Канăçсăр этем . . . . . 191
*Вунулттăмĕш сыпăк.* Асамат кĕперĕ . . . . . 197

Я. Г. УХСАЙ

ДЕД КЕЛЬБУК

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ — 1958

Художник *М. А. Ильин.*

Редактор *Н. А. Александров.* Технич. редактор *А. И. Краснов.*
Худож. редактор *Л. И. Маевская.* Корректор *С. Л. Баранова.*

НТ 00955. Сдано в набор 17|VI-1958 г. Подписано к печати 13|VIII-1958.
Формат 70×108 1/32. Объем в печатных листах 8,73, в уч. изд. л. 7,23.
Заказ 1612. Изд. № 407. Тираж 3000 экз. Цена 5 руб. 10 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
Гор. Чебоксары, Володарского, 5.